К 84.09(=Чув)
С37
Ч-44593

Виктор
СИМАКОВ



# ПĂЛХАВ

ПОВЕСТЬ

Национальная библиотека ЧР
4-044593

К 84.09(=Чув)
С 37

## Виктор Симаков

# Пăлхав

*Повесть, сăвăсем,*
*шӳтлĕ калавсем*

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2011

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6
С 37

-444-52-745 я 444.3
К 84.09(=Чув)6-4-5-7

Симаков В.Е.
Пӑлхав. Повесть, сӑвӑсем, шӳтлӗ калавсем. — Шупашкар: «Ҫӗнӗ Вӑхӑт», 2011. 72 с.

И-44593
Национальная библ...
Чувашской Рес...

© Симаков В.Е., 2011

## Автор ҫинчен

*Симаков Виктор Егорович 1933 ҫулхи ҫурла уйӑхӗн 15-мӗшӗнче Тутар Республикин Аксу районӗнчи Меречен ялӗнче учитель ҫемйинче ҫуралнӑ.*

*1941—1945 ҫулсене тӑван ялӗнчи пуҫламӑш шкулта вӗреннӗ. Ун хыҫҫӑн Мӑкшелӗнчи ҫичӗҫуллӑх шкултан вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн Аксури педучилищӗне вӗренме кӗрет. 3-мӗш курс хыҫҫӑн ӑна салтака илеҫҫӗ. Вӑл Кубаньре, Азербайджанра хӗсметре пулать. Хӑй тӗллӗн азербайджан чӗлхине вӗренет. Салтакран таврӑнсан Хусанта экстерн йӗркипе педучилище пӗтерет те 1956 ҫулта Вӑтам Азие каять. Каракалпакстанри пӗр шкулта ачасене вырӑс чӗлхипе литератури вӗрентет. Каракалпак, казах, узбек, туркмен чӗлхисен пӗрпеклӗхӗсемпе уйрӑмлӑхӗсене тишкерет, вырӑнти халӑхсем пек калаҫма хӑнӑхать.*

*1958—1961 ҫулсенче тӑван ялӗнче вулавӑшра ӗҫлет. 1961—1965 ҫулсенче малтан Тури Паланлӑри, унтан Кив Ӳселӗнчи сакӑрҫуллӑх шкулсенче вырӑс чӗлхипе литератури, нимӗҫ чӗлхи вӗрентет.*

*1965 ҫулта Григорий Тяманов журналистпа иккӗшӗ Аксура чӑвашла «Ял пурнӑҫӗ» хаҫата никӗслеҫҫӗ.*

*Ҫав хушӑра Хусанти педагогика институчӗн историпе филологи факультетӗнче куҫӑмсӑр майпа вӗренет, ӑна ӑнӑҫлӑ пӗтерет. 1969—1981 ҫулсенче Тутарстанри тата Чӑваш Республикинчи шкулсенче вырӑс чӗлхипе литератури, чӑваш чӗлхипе литератури, историпе обществоведени вӗрентет. Ҫав вӑхӑтра марксизм-ленинизм университетне куҫӑмсӑр майпа хӗрлӗ дипломпа пӗтерет.*

*1982 ҫулта Сызрань хулине (Самар облаҫӗ) куҫса каять. 1993 ҫулччен шкулта ачасене вӗрентет. Пенсие тухсан ӑна Самарта тутарла тухса тӑракан «Бердэмлек» («Пӗрлӗх») хаҫата ӗҫлеме чӗнсе илеҫҫӗ. Тепӗр икӗ ҫултан (1995 ҫ.) Самар чӑвашӗсем валли «Самар ен» хаҫата никӗслет. Вунӑ ҫул хушши унӑн яваплӑ ҫыруҫинче вӑй хурать. Пулас кӗнеке валли материалсем, легендӑсем пухать, чӑваш ялӗсен историне ҫырса хатӗрлет. Хӑйӗн статйисене, калавӗсемпе сӑввисене «Самар ен», «Канаш», «Сувар», «Хыпар» хаҫатсенче, «Ялав», «Тӑван Атӑл» журналсенче пичетлет.*

*В.Симаковӑн ҫак кӗнекисем тухнӑ: «Чувашские населенные пункты Самарской области» (Шупашкар, 2003), «Хальхи пурнӑҫ ыйтнипе» — рецензисем, тишкерӳсем (Шупашкар, 2007), «Была ли решена национальная проблема в СССР?», «Эпӗ санӑн аҫу...» — калавсемпе сӑвӑсем (Шупашкар, 2008), «Манӑҫми ентешӗмсем» (Шупашкар, 2008), «Энциклопедия чувашских сел Самарской области» (Самар, 2008).*

*Ĕçре хастар пулнăшăн çавăн пек Хисеп хучĕсем илнĕ:*

*1. Хисеп хучĕ («Хĕрлĕ ялав» хаçат редакцийĕ, 5.05.1962).*

*2. Хисеп хучĕ (Шигун районĕн çутĕç пайĕ (роно), Самар облаçĕ, 1985).*

*3. Хисеп хучĕ (КПСС Шăмăршă райкомĕпе райĕçтăвкомĕ, Чăваш Республики, 2.10.1980).*

*4. Хисеп хучĕ («Коммунизм çулĕ» хаçат редакцийĕ, Шăмăршă, Чăваш Республики, 5.08.1982).*

*5. Хисеп хучĕ (Радищевск районĕн çутĕç пайĕ, Ульяновск облаçĕ, 15.08.1993).*

*6. Хисеп хучĕ («Бердэмлек» хаçат редакцийĕ, Самар, 26.02.2000).*

*7. Диплом (Чăваш халăх академийĕ, Шупашкар, 7.12.2001).*

*8. Тав çырăвĕ (ЧНК Президиумĕ, Шупашкар, 10.2002).*

*9. Диплом №625 (Самар Патшалăх Канашĕн йышăнăвĕпе, Самар, 17.06.2003).*

*10. Диплом (Самар облаçĕн культура департаменчĕн администрацийĕ, 2003).*

*11. Диплом, Элле премийĕ (Чăваш халăх академийĕ, Шупашкар, 2003).*

*12. Тав çырăвĕ (Чăвашсен «Пехил» пĕрлĕхĕ, Самар, 7.03.2004).*

*13. Диплом (Халăхсен туслăхĕн çурчĕ, Самар, 2004).*

*14. Диплом (Чăвашсен «Пехил» пĕрлĕхĕ, Самар, 9.04.2005).*

*15. Хисеп хучĕ (Чăваш Республикин культура министерстви, Шупашкар, 04.2005).*

*16. Тав çырăвĕ (Сызрань хули округĕн управленийĕ, Самар облаçĕ, 12.2007).*

*17. «Парти ветеранĕ» паллă (КПРФ, 5.05.2006).*

*18. Тав çырăвĕ (Сызрань хули Думин депутачĕ Свидницкий, 9.05.2007).*

*19. «Октябрьти революцие 90 çул» юбилей медалĕ (КПРФ, 2007).*

*20. Хисеп хучĕ (Сызрань хула округĕн пуçлăхĕ В.В.Хлыстов, 09.2008).*

*21. Тав хучĕ (Учительсен пĕлĕвне ӳстерекен институт (СИПКРО), Самар хули, 12.2008).*

# Пăлхав

*Повесть*

1897 çул. Микушкелĕнчи чиркӳпе прихут шкулĕнче 20 вĕренекен юлашки экзаменсене парать. Вĕсен хушшинче Тимахви Якурĕн Ахванеç ятлă ывăлĕ те пур. Çапла, вăл пур экзаменсене те ăнăçлă парса кунти шкула лайăх паллăсемпе пĕтерчĕ. Уншăн савăнать Ахванеç. Ашшĕ ăна малалла та вĕрентесшĕн. Пĕрре çапла каçхи апат вăхăтĕнче Якур Ахванеçе малалла вĕрентесси çинчен асăнчĕ.

— Ахванеç, эпĕ сана Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме ярасшăн. Эсĕ унта вĕренме кайма кăмăл пурри çинчен юлташусемпе калаçни çинчен илтрĕм-ха. Унта та экзаменсем парса кĕмелле тенине те илтнĕ эпĕ. Эсĕ ялти шкулта аванах вĕрентĕн. Чĕмпĕрте те вĕренме кĕмелли экзаменсене ăнăçлă парăн тесе шутлатăп.

Ахванеç ашшĕ каланине лăпкăн итлесе ларнă хыççăн Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме кайма кăмăлĕ пурри çинчен пĕлтерчĕ.

Ахванеç çакăн хыççăн хăйĕн шухăшне хăйпе пĕрле вĕреннĕ Тимуша пĕлтерчĕ. Тимушпа вĕсем юлташлă тата кӳршĕллĕ те. Вăл ăна хăйпе пĕрле Чĕмпĕре вĕренме пыма сĕнчĕ.

— Ахванеç, эсĕ кĕрĕн, лайăх вĕренеттĕн. Акă эпĕ сан пекех лайăххах вĕренеймерĕм. Чĕмпĕрти чăваш шкулне кĕме экзаменсем панă чухне эпĕ пĕлеймен ыйтусем пулма пултараççĕ. Тепĕр енчен вара вĕреннĕшĕн тӳлеме атте укçа çитереес çук, вĕренме кĕрейсен те. Начартарах пурнатпăр çав.

— Эпĕ сана пулăшăп экзаменсем панă вăхăтра. Кĕрейсен те пулăшса тăрăп. Ан пăшăрхан, Тимуш. Аçуна каласа пăх. Ярать-и вăл сана вĕренме. Аçу ирĕк парсан пĕрлех кайăпăр.

Çапла калаçса Ахванеç хăйĕн юлташне йăпатрĕ. Пĕр ялтан иккĕн пĕрле вĕренес пулсан лайăх пулĕччĕ, юлташсем-çке, — шутларĕ Ахванеç.

— Атте, Ахванеç Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме каясшăн. Эпĕ те унпа пĕрле каяс тетĕп. Ăна ашшĕ Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме ярать, — терĕ Тимуш хăйĕн ашшĕне.

— Тем пекех ярăттăм та, ачам, вĕреннĕшĕн тӳлеме укçа та çитерейменĕр. Шăллупа, йăмăкусемпе эсир çиччĕн. Ачасенчен çемьере эсĕ чи асли. Çемьере аслине яланах йывăртарах тӳр килет. Сашук та, ав, санăн шăллу, çĕр валеçнĕ хыççăн çуралнипе пая кĕрсе юлаймарĕ. Тăххăрăн икĕ пай çĕрпе пурнатпăр. Ахванеç ашшĕ вăтам хресчен, эпир — чухăн. Килте те ĕç алли кирлĕ. Йăмăкусем те çамрăкрах-ха. Майĕпен вĕсем те ĕç çумне çыпçăнса пыраççĕ. Эсĕ ĕç çумне аванах çыпçăнма тытăнтăн. Килтех ĕçлĕн. Платник ĕçне те аванах чухлакан пултăн, — йăпатрĕ Тимуша ашшĕ.

Тимуш ашшĕн сăмахĕсене пĕр шавламасăр итлесе ларчĕ те шăпланчĕ. Вĕренме каясси пирки урăх нимĕн те шарламарĕ.

— Ахванеç, пуçтарăн, мĕн илмеллисене халех сумкуна чиксе хур. Ыран ирех, лаша кӳлсе, сана Чĕмпĕрти чăваш шкулне леçетĕп. Яковлевпа та, тен, курса калаçма тӳр килĕ, эпĕ ăна курман. Чăвашсемшĕн вăл çав тери тăрăшать теççĕ.

Вĕренме каймалли савăнăçпа Ахванеç çĕрле те темиçе хутчен вăранчĕ. Ир енне вара хытă çывăрса кайнă.

Якур Чĕмпĕре каймалли пирки ирех тăрса лашине сĕлĕ парса çитерчĕ, шăварчĕ те кӳлсе тăратрĕ. Ахванеç патне çывăрнă çĕре пычĕ. Ывăлĕ лăпкă çывăрать те, ун çине, вăратас-и, вăратас мар-и тенĕ пек, пĕр вăхăт хушши пăхса тăчĕ те вăратасах терĕ.

— Тăр, ачам. Чĕмпĕре каятпăр. Тăрса çăвăн та апатлан, — терĕ ăна ашшĕ.

Амăшĕ хăйĕн ывăлĕ валли çул çине çимеллисем, кĕпе-йĕм хатĕрлесе хутаçа чикрĕ. Хăйне кирлĕ кĕнекисене Ахванеç унччэнех чиксе хунă.

Ахванеç шăллĕпе йăмăкĕсем çывăраççĕ-ха. Вăл вĕсем çине пăхса илчĕ те вĕсене вăратмасăрах сывпуллашса тулалла тухрĕ. Амăшĕпе ашшĕ те кӳлнĕ лаша патне тухреç. Ахванеç тӳрех лав çине сиксе ларчĕ. «Турăпа пĕрле çӳре, турă пулăштăр сана вĕренме кĕме», — тесе ывăлĕ çине хĕрес хучĕ амăшĕ ывăлĕпе сыв пуллашнă май. Çапла вĕсем майĕпен хускалса ялтан та тухреç. Хĕвел те тухса сарăлчĕ. Çанталăк ăшă тăрать. Лаша утнă май Ахванеç хĕвел мĕнле тухнине сăнаса пычĕ. Катара малтан вăл кăшт кăна курăнчĕ. Хуллен-хуллен катаран тухса пычĕ те пысăк çаврашка пек курăнса кайрĕ. Хăйĕн пайăркисене çĕр çине пĕр тикĕссĕн сапаларĕ. Хĕвел катаран уйрăлсан майĕпен пĕчĕкленсе

пынӑ пек пулса пычӗ. Ун ҫине пӑхма ҫук ҫуталса тӑрать вӑл. Лаша утнӑ май ялсем те пӗрин хыҫҫӑн тепри хыҫа юлса пыраҫҫӗ. Ахванеҫ, ку таранччен ниҫта та тухса курманскер, тавралӑха сӑнаса, ун илемӗпе киленсе пычӗ. Кушкӑ ялӗ тӗлне ҫитсен пӗр улӑхра лашана тӑварса кантарчӗҫ те кӑштах ҫитернӗ, шӑварнӑ хыҫҫӑн малалла кайрӗҫ. Вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе вӑрмансем витӗр те иртмелле пулчӗ. Мелекесрен тухсан хӗвел анчӗ. Вӗсем ҫакӑнта ҫӗр каҫма шутларӗҫ. Лашана тӑварса тилхепин пӗр вӗҫӗпе урапаран ҫыхрӗҫ, тепӗр вӗҫне чӗлпӗрпе ҫыхӑнтарчӗҫ. Улӑхра лашана ҫиме курӑк аван. Хӑйсем каҫхи апат турӗҫ те урапа ҫине выртса канчӗҫ. Малтан Якур хӑй выртса канчӗ. Кӑштах ҫывӑрса илнӗ пек пулчӗ те хӑй вырӑнне Ахванеҫе выртса канма хушрӗ. Каҫхи сывлӑш уҫӑ. Ахванеҫӗн малтан ҫыврасси те килмерӗ. Каҫхи уҫӑ сывлӑшпа киленсе каллӗ-маллӗ уткаласа ҫӳрерӗ. Ҫӑлтӑрсене сӑнарӗ. Акӑ алтӑр ҫӑлтӑр. Вӑл ӑна паллать. «Алтӑр ҫӑлтӑр ҫич ҫӑлтӑр ҫичче ҫитсен сӑвап тет» тенине те илтнӗ. Ҫак сӑмахсене пӗр сывламасӑр ҫичӗ хутчен каласан чӑн та сӑвап тет. Вӑл вара ҫак сӑмахсене сывламасӑр ҫичӗ хутчен калама тӑрӑшрӗ — пултараймарӗ.Ултӑ хутчен калама пултарать, ҫиччӗмӗш хут каланӑ чух вара сывлӑш ҫавӑрса илетех. Малалла ашшӗ лашана хӑй кӗтме пулчӗ. Ахванеҫе выртса канма хушрӗ. Ахванеҫ вара выртнӑ-выртман ҫывӑрса кайрӗ. Акӑ вӑл тӗлӗк курать: ашшӗпе иккӗшӗ Чӗмпӗрти чӑваш шкулне ҫитнӗ пек. Пурте чӑвашла калаҫаҫҫӗ пек. Ҫын нумай пуҫтарӑннӑ. Пурте вӗренме килнӗ пек. «Эсӗ те вӗренме килтӗн-и?» — терӗ пек пӗр ватӑ сухаллӑ ҫын. «Ку Яковлев хӑй пулчӗ, санпа калаҫасшӑнччӗ, эсӗ вара нимӗн те чӗнмерӗн», — теҫҫӗ пек вӗренме килнисем. Ҫав вӑхӑтра Ахванеҫ ашшӗ чӗннипе вӑранса кайрӗ. Ҫуллахи ҫӗр кӗске. Тул ҫутӑлнӑ.

Лашана шӑварнӑ хыҫҫӑн кӳлчӗҫ те майӗпен Чӗмпӗр еннелле ҫул тытрӗҫ. Кӑнтӑрла тӗлӗнче вӗсем Чӗмпӗре ҫитсе кӗчӗҫ. Ахванеҫ, халиччен хулара пулманскер, виҫӗ-тӑватӑ хутлӑ ҫуртсене курса тӗлӗнсе пычӗ. Часах вӗсем шкул картишне пырса кӗчӗҫ. Кунта халӑх туллиех. Пурте чӑвашла калаҫаҫҫӗ, хӑйсен ачисене вӗренме илсе килнӗ. Ятарласа уйӑрнӑ вырӑн та кӑкарнӑ лашасемпе тулса ларнӑ. Апла пулсан та лаша кӑкарма пӗр кӗтесре вырӑн тупрӗҫ. Шкул ҫурчӗ икӗ хутлӑ. Тепӗр икӗ хутлӑ пысӑк ҫуртра, аялти хутӗнче хӗрсем пурӑнмалли пӳлӗмсем. Ҫӳлти хутӗнче Иван Яковлевич хваттерӗ вырнаҫнӑ. Арҫынсем пурӑн-

малли çурт вара вăрăм барака аса илтерет. Унта та пӳлӗмсем нумай. Юнашарах чиркӳ хӑйӗн çутӑ куполӗсемпе илемлӗн курӑнса ларать, шкул картишне илем кӳрет. Кунта кӗлӗсем те чӑвашла иртеççӗ иккен. Шкул картишӗ питӗ илемлӗ. Йӗритавра карта тытса çавӑрнӑ. Ниçта та пӗр çӳпӗ выртнине курма çук. Питӗ тирпейлӗ тытаççӗ.

Иван Яковлевич вӗренме килнисене пӗр класа чӗнтерчӗ те вӗсемпе калаçу ирттерме тытӑнчӗ. Вӗренме килнисене кунта хӑйсене мӗнле тыткаламалли пирки те асӑрхаттарчӗ. Шкулти йӗркесемпе паллаштарчӗ. Ыран мар, тепӗр кун экзаменсем тытӑнасси çинчен пӗлтерчӗ. Хӑçан мӗнле предметпа экзамен памалли расписани приказсен хӑми çинче те пур. Экзаменсем вырӑс чӗлхипе литератури çырса тата сӑмах вӗççӗн, математикӑпа, чӑваш чӗлхипе калаçу евӗрлӗ кӑна памалла. Вӗренме килнисемпе калаçнӑ хыççӑн Иван Яковлевич завхоза чӗнсе илчӗ те килнисене вырнаçтарма хушрӗ. Якур та Ахванеçпе пӗрлех çӗр каçрӗ. Ирхине вара ирхи кӗлле кӗчӗ. Ахванеç йышӑну экзаменӗсене ӑнӑçлӑ патӑр тесе, турӑран пулӑшу ыйтса çурта та çутрӗ. Ун хыççӑн вара килне, Микушкелне, кайма тесе лашине шӑварчӗ те çула тухма хатӗрленчӗ. Ахванеç ӑна ӑсатма тухрӗ. Якур вара ывӑлне экзаменсене ӑнӑçлӑ пама сунчӗ те çула тухрӗ.

Акӑ экзаменсем памалли вӑхӑт та çитрӗ. Ахванеçе йышӑну экзаменӗсене ӑнӑçлӑ панӑ пек туйӑнчӗ. Вӑл вара вӗренме кӗнисен списокне приказсен хӑми çине çапасса кӗтме тытӑнчӗ.

— Хама вӗренме кӗмелли экзаменсене лайӑх панӑ пек туйӑнчӗ, темӗнле пулӗ ӗнтӗ, — текелесе калаçрӗ вӗренме кӗме килнисемпе. Пурте пӑшӑрханаççӗ.

Экзаменсем пӗтнӗ хыççӑн иккӗмӗш куннех вӗренме илнисен списокне приказсен хӑми çине çапрӗç. Вӗренӳ çулӗ тытӑниччен пӗр эрне кӑна юлчӗ. Списока çапнӑ хыççӑн килнисем пурте приказсен хӑми патне кӗпӗрленсе пычӗç. Список çинче çаксен хушамачӗсем пур:

1. Александрова Вера Александровна, 23.09.1886, д. Атлашкино Чистопольского уезда;

2. Батин Федор Иванович, 23.09.1883, с. Чебоксарка Буинского уезда;

3. Васильева Агафия Васильевна, 8.04.1884, с. Яншихово-Норваш Цивильского уезда;

4. Владимиров Иван Владимирович, 29.12.1879, д. Караньялы Чебоксарского уезда;

5. Воронцов Степан Васильевич, русский, 1879, д. Никишино Буинского уезда;

6. Григорьева Анна Григорьевна, 7.12.1883, д. Верхнее Байдулово Буинского уезда;

7. Дерюгин Александр Петрович, 1.02.1885, с. Шиловка Симбирского уезда;

8. Егоров Андрей Егорович, мордвин, 8.11.1883, с. Шемурша Симбирского уезда;

9. Егорова Анастасия Егоровна, 21.10.1882, д. Игорвары Цивильского уезда;

10. Емельянов Яков Емельянович, 18.10.1881, д. Игорвары Цивильского уезда;

11. Ефремова Ульяна Ефремовна, 21.01.1882, д. Игенсер-Атаево Цильнинского уезда;

12. Идебаев Роман Никифорович, 24.09.1882, д. Белая Гора Петровского уезда Самарской губернии;

13. Иванов Софрон Иванович, 6.03.1884, д. Тюрлема Чебоксарского уезда;

14. Иустинова Ульяна Иустиновна, 20.12.1883, с. Новое Якушкино Бугурусланского уезда Самарской губернии;

15. Карандаева Ольга Иустиновна, 8.05.1886, с. Новое Якушкино Бугурусланского уезда Самарской губернии;

16. Кирпичников Иван Семенович, 10.01.1883, д. Средние Тимерсяны Симбирского уезда;

17. Клавдиев Михаил Клавдиевич, 1.10.1882, Бугурусланский уезд Самарской губернии;

18. Клячкин Владимир Петрович, 1.07.1883, с. Шиловка Симбирского уезда;

19. Кореньков Гаврил Алексеевич, 24.03.1884, с. Тюрлема Чебоксарского уезда;

20. Кузьмин Федор Кузьмич, 29.01.1884, с. Алшихово Буинского уезда;

21. Люмбин Федор Захарович, мордвин, 12.02.1883, с. Живайкино Карсунского уезда;

22. Максимов Андрей Максимович, 10.10.1887, с. Чурачики Цивильского уезда;

23. Мартынова Вера Прокопьевна, русская, 12.09.1887, с. Ишеевка Симбирского уезда;

24. Матвеев Тимофей Матвеевич, 12.01.1884, с. Трехбалтаево Буинского уезда;

25. Молгачев Леонтий Иванович, 7.07.1884, с. Большая Акса Буинского уезда;

26. Разумов Андрей Федорович, русский, 26.06.1883, с. Богдашкино Симбирского уезда;

27. Сергеев Захар Сергеевич, 4.02.1882, д. Новое Байгулово Чебоксарского уезда;

28. Сергеев Иван Сергеевич, 7.01.1884, д. Багдашкино Симбирского уезда;

29. Степанов Алексей Степанович, 27.02.1882, с. Кошки-Кулакеево Симбирского уезда;

30. Тимофеев Афанасий Егорович, 23.11.1884, с. Микушкино Бугурусланского уезда Самарской губернии;

31. Тихонов Николай Тихонович, 6.05.1885, с. Торонкаси Чебоксарского уезда.

Вĕренме йышăннисен списокĕнче вăтăрмĕшĕ Ахванеç ячĕ. Списокра хăйĕн ятне вуласан Ахванеç савăнса кайрĕ.

Шкулта вĕренӳ çулĕ те тытăнчĕ. Хăй вĕренме кĕни çинчен килне те çырса пĕлтерчĕ. Кашни уроках тĕплĕн хатĕрленсе çӳрет вăл. Вĕренекенсен хушшинче сăвă çыракансем те палăрма пуçларĕç. Ун пеккисене Иван Яковлевич хавхалантарсах пычĕ. Вĕсем хăйсен сăввисене вĕренекенсем умĕнче вуласа параççĕ. Пĕррехинче Ахванеçпе пĕрле вĕренекен Кореньков Кавĕрле залра хăйĕн сăввисене вуласа пачĕ. Вăл вуланине пурте тимлĕн итлесе ларчĕç. Вăл вуланă вăхăтра Иван Яковлевич та пурччĕ. Ун хыççăн хăйсен сăввисене вулакансем татах та пулчĕç. Юлашкинчен Иван Яковлевич чăвашсен малашне сăвăçисем, çыравçисем, вĕсен кĕнекисем пулмалли çинчен каларĕ. Çак шкултан вĕренсе тухакансем пурте ялсенче чăваш çырулăхне, культурине аталантаракансем пулмалли çинчен те асăнчĕ.

— Эсир чăвашсене çутта кăларакансем пулатăр. Сирĕн хушăрта сăвă, калав, повеçсем çыракансем малашне пулмаллах. Чăвашла кĕнекесем питĕ сахал. Малашне чăвашла кĕнекесем çулсеренех тухса пымалла. Сирĕн çинче шанчăк. Тăрăшăр, ачасем! — терĕ Иван Яковлевич вĕренекенсене.

— Ку сăвăсене хăвах çыртăн-и? — ыйтрĕ пĕррехинче Ахванеç Кавĕрлерен. — Питĕ лайăх çырнă.

— Вĕсене эпĕ хам çырнă. Çапла эпĕ хутран-ситрен те пулин сăвăсем çыркалатăп, — терĕ ăна Кавĕрле Кореньков.

— Ман кăмăла кайрĕç сан сăввусем, — мухтаса илчĕ Ахванеç хăйпе пĕрле пĕр класра вĕренекенскере.

— Эсĕ ăçтан ху? — ыйтрĕ Кавĕрле Ахванеçрен.

— Эпĕ Пăкăрăслан уесĕнчи Микушкел ялĕнчен пулатăп. Вăл Самар кĕпĕрнине кĕрет. Манăн атте Якур ятлă. Вăл çĕр ĕçĕпе пурнать. Эпĕ хам çав ятпа 1884 çулхи чӳк уйăхĕн 14-мĕшĕнче çуралнă. Манăн килте аттепе аннесĕр пуçне пилĕк йăмăк, пĕр шăллăм пур.

Малалла Кавĕрле хăйсем çинчен каларĕ:

— Эпĕ хам Шупашкар уесĕнчи Тĕрлемес ялĕнчен. Манăн атте Элексей ятлă. Санăн аçу пекех çĕр ĕçĕпе пурнать. Сăвăсем çырма эпĕ ялти шкулта вĕреннĕ вăхăтра пуçларăм.

Çакăн хыççăн Ахванеçпе Кавĕрле çывăх юлташсем пулса тăчĕç.

Пĕрремĕш вĕренӳ çулĕ ăнăçлах иртрĕ. Ахванеç те, Кавĕрле те питĕ лайăх вĕренсе пычĕç.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн хăйĕн акмалли çĕрĕ 200 теçеттин ытла шутланать. Çаран та сахал мар вырăн йышăнать. Акмалли çĕр лаптăкне Иван Яковлевич çулсерен ӳстерсе пыма тăрăшать. Шкулăн хăйĕн ĕне фермийĕ пур. Ял хуçалăхĕнчен илекен апатçимĕçе шкул хăй акса çитĕнтерет, пухса, вырса-çапса кĕртет. Тĕш тырăсăр пуçне çĕр улми пысăк лаптăк йышăнать. Шкул акмалли çĕртен те, фермăран та сахал мар тупăш илет. Ăратлă ĕнесем тытать. Шкул хăй туса илекен тупăш-тырпул, пахчаçимĕç, аш-какай шкула тытса тăмалăх та çитет. Çаксене туса илме вĕрентекенсемпе вĕренекенсене явăçтарать. Выльăхсен шучĕ ӳссе пынă май кунта вĕренекенсем çĕнĕрен çĕнĕ витесем тăваççĕ выльăхсем валли. Çуллахи каникул вăхăтĕнче уйăха яхăн çеç килĕсенче пулаççĕ. Акă приказсен хăми çине вĕренекенсенчен кам ăçта ĕçлемелли çинчен çырса çапнă. Ахванеçпе Кавĕрлен выльăхчĕрлĕх ферминче ĕçлемелле. Вĕренекенсем тĕрлĕ ĕçсенче пулнă хыççăн Иван Яковлевич вĕсене пĕр уйăх хăйсен килĕсенче канма ирĕк парать. Хăшĕсем вара вĕренме чарăннă хыççăн хăйсен килĕсенче пулаççĕ. Пĕр уйăх каннă хыççăн шкула ĕçлеме килеççĕ.

Вĕреннĕ вăхăтра та шкулта тĕрлĕрен кружоксем ĕçлеççĕ, юрă, ал ĕç, столяр, драма, тĕрлĕрен музыка инструменчĕсем. Кружоксем аван ĕçлеççĕ. Тĕрлĕрен ӳкерчĕксем тăвакансен кружокĕ те пур. Столярсен кружокĕнче тĕрлĕрен сĕтел-пукансем, шкафсем тăваççĕ. Çуна-урапа тума та шкултах вĕренеççĕ. Кашни вĕренекен пĕр е икĕ кружокра пулмалла. Юрă кружокĕнче ытларах чăваш халăх юррисемпе кĕлĕ юррисем вĕренеççĕ. Шкул çумĕнчи чиркӳре те праçниксенче вĕренекенсем тĕнпе çыхăннă юрăсене юрлаççĕ. Ахванеçпе Кавĕрле платниксен кружокне çӳреççĕ. Витесем валли пурасем, çуна, урапа тăвасси хĕллехи вăхăтра та чарăнса тăмасть.

Çапла Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ ултă çул майĕпен иртсе те кайрĕ. Шкултан вĕренсе тухакансем пуçламăш класенче вĕрентме право паракан аттестат илеççĕ. Кам ăçта вĕренме каймаллине ялти шкулсенчен ыйтса янă тăрăх малтанах палăртса хураççĕ. Кавĕрлен хăйĕн тăван ялне, Тĕрлемесе, Ахванеçĕн Самар кĕпĕрнине кĕрекен Сызрань уесĕнчи Мулекел ялĕнчи чиркӳпе прихут шкулне ачасене вĕрентме каймалла.

Вĕренсе тухнисем зала пуçтарăнчĕç. Иван Яковлевич аттестатсемпе пĕрле хăш шкула вĕрентме каймалли уйрăм хутсем пачĕ. Ялсенче тăван чĕлхене, тăван культурăна, ырă йăласене аталантарас, ачасене вĕрентес ĕçре ăнăçлăхсем сунчĕ.

Юлашки экзаменсем хăçан парассине пĕлтерсе Ахванеç килне çыру та янăччĕ. Экзаменсем пĕтнĕ кун Ахванеç ашшĕ Якур хăйĕн лашипе килсе çитрĕ. Савăнăçлă ăсату вăхăтĕнче те аттестатсем панă çĕрте пулчĕ. Иван Яковлевич хĕрӳ вăхăт пулсан та хăйсен ывăлĕсемпе хĕрĕсене илме килнĕ ашшĕсемпе калаçма вăхăт тупрĕ. Ялсенче хресченсем мĕнле пурăннипе, шкулсем ĕçлени çинчен интересленсех ыйтса пĕлчĕ. Микушкелĕнче те чăвашсем мĕнле пурăнни çинчен ыйтрĕ. Якур ăна хăйĕн ывăлне вĕрентсе çын тунăшăн тав турĕ.

Тепĕр кунне ирхине Якур хăйĕн ывăлĕпе апатланчĕç те, лашине кӳлсе, çула тухрĕç. Çулталăк хушши ялта пулманни Ахванеçе тунсăхлаттарать. Тата килте те ĕç нумай. Часах ыраш та пулса çитет. Вырма тухмалла пулать. Ыраш вырса пĕтернĕ хыççăн тулă, сĕлĕ, пăри вырмалла. Ахванеç яла çитсенех хĕрӳ ĕçе тытăнмалла. Вĕренӳ çулĕ тытăниччен Мулекелне те çитсе килмелле.

Килне çитсенех Ахванеç амăшĕпе, шăллĕсемпе, йăмăкĕсемпе савăнса калаçрĕ. Вĕсем те унсăр тунсăхласа çитнĕ. Килĕнче сĕтел

хушшинче апатланса калаçнă хыççăн Ахванеç Тимуш патне çитес терĕ. Тимуша вăл хăй тем пек савăннине пĕлтерчĕ, аттестатне кăтартрĕ. «Пынă пулсан эсĕ те вĕренсе тухаттăн», — терĕ.

— Атте вĕренме янă пулан эпĕ те учитель пулаттăм, — терĕ. — Манăн килте çĕр ĕçĕпех пурăнмалла ĕнтĕ. Турри те çапла хушнă пулĕ.

Ыраш вырма та вăхăт çитрĕ. Якур хăйĕн çемйине ыраш вырма илсе тухрĕ. Вĕсен ани Тимушсен анипе юнашар. Вĕсем те çемйипех ыраш вырма тухнă.

Ахванеçĕн йăмăкĕсемпе шăллĕсем те ыраш ани çине тухнă. Чăвашсен йăлипе ачасене пĕчĕкренех ĕçе хăнăхтараççĕ. Каннă вăхăтра Ахванеç Тимуш патне пырса килет. Кăçал Мулекелĕнче ачасене вĕрентме тытăнмалли çинчен те асăнчĕ Тимуш патĕнче.

Тимуш хăй те малалла вĕренесшĕнччĕ те килте ĕç алли çитменни тата начартарах пурăнни пĕтерет. Çемье пысăк. Çемьере тăхăр çын. Вĕсене икĕ пай çĕр сахалтарах çав. Çынсене шута илесси хăçан пулать тата. Ун чухне Сашук та, Тимуш шăллĕ, пая кĕрсе юлать.

Акă вĕренӳ çулĕ пуçланма та инçе мар юлчĕ. Ахванеçĕн Микушкелне каймалла, шкулпа, ачасемпе, ашшĕ-амăшĕсемпе паллашмалла. Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленсе çитмелле. Амăшĕ Ахванеç валли апат-çимĕçсем хатĕрлерĕ.

— Килтен ярас та килмест ĕнтĕ сана, Ахванеç, — терĕ амăшĕ хăйĕн ывăлне çул çине ăсатнă май.

— Ăçта яраççĕ, унта каймаллах, çавăншăн вĕреннĕ эпĕ, анне.

Ашшĕ лаша кӳлсе тăратрĕ те, Ахванеç, амăшĕпе сывпуллашса, урапа çине сиксе ларчĕ.

Якурпа Ахванеç каç пулнă çĕре Мулекелне çитрĕç. Шкул çĕнĕ çуртра вырнаçнă. Ăна виçĕ çул каялла туса пĕтерсе ĕçе янă. Вĕрентекенсем валли те уйрăм пӳлĕм пур.

— Аван çитрĕр-и? — сывлăх сунса ыйтрĕ кунта учитель вырăнне вĕрентнĕ Герасим Максимович. Макçăм Карачăмĕ теççĕ ăна. Вăл Питрекелĕнчи училищĕре вĕреннĕ пулнă. Вĕрентӳçĕ пулм ннипе ăна учитель вырăнĕнче ĕçлеме хушнă. Герасим М мович Ахванеçпе ашшĕне учительсем валли тунă пурăн- пӳлĕме вырнаçтарчĕ. Якур лав çинчен тӳшек, утиял, йăтса кĕчĕ, Ахванеç — çимеллисене. Çапла вĕсем вучах

чĕртсе чей вĕретрĕç те кукăльпе çыртса çирĕç. Ун хыççăн вара Герасим Максимовичпа тахçанччен калаçса ларчĕç. Пĕр-пĕрин çинчен ыйтса пĕлчĕç. Якур çывăрма выртсан та Аханеçĕн ыйăх килмерĕ. Вăл çывăрма выртсан та Герасим Максимовичпа калаçма чарăнмарĕ. Ял пурнăçĕ çинчен ыйтса пĕлчĕ.

Кунти шкула 1897 çулта уçнă иккен. Шкул валли уйрăм çурт пулманнипе Ефим Гаврилов, ялти пуян хресчен, ачасене хăйĕн çуртĕнче вĕрентме ирĕк панă. 1899 çулта вара, вăрман туянса, кастарса, шкул валли уйрăм çурт тума тытăннă. Герасим Максимович хăй те çак шкул çуртне тунă çĕрте ĕçленĕ. Тепĕр çулхине темиçе пӳлĕмлĕ шкула туса çитерНĕ. Ачасем çĕнĕ шкулта вĕренме тытăннă. Герасим Максимович кунта шкул уçăлсанах ачасене хăй вĕрентме тытăннă. Унтанпа 6 çул иртрĕ. Ку вăл пĕр сыпăклă шкул шутланнă. Кунтан çичĕ çухрăмра, Питрекел ялĕнче, тепĕр шкул пур. Ăна 1885 çулта уçнă. Унта ачасене вырăсла кăна вĕрентеççĕ. Ачисем вырăсла пĕлмеççĕ. Шкул чиркӳпе прихут виçĕ çуллăх пĕр класлă училище шутланнă. 1902 çулта пĕр класлă тăвата çул вĕренмелли училище туса хунă. 1898 çултан вара унта Каштанов Федор Степанович чăваш вĕрентет. Ачасем вырăсла ăнланман пирки ашшĕ-амăшĕсем чăваш çыннине вĕрентме яма ыйтнă. Федор Степанович хăй Чĕмпĕртен инçех мар Ялавăр ятлă чăваш ялĕнче çуралса ӳснĕ. Вăл вĕрентме тытăнсан ачасене вырăсла та, чăвашла та ăнлантарма тытăнать.

Ирхине Якур Ахванеçпе сывпуллашса килне кайма тухрĕ. Ахванеçе ĕçре, пурнăçра ăнăçусем сунчĕ, хăйĕн çинчен пĕлтерсе тăтăшах çыру çырса тăма хушрĕ. «Сана, Ахванеç, çак ĕçре турă пулăшса пытăр», — терĕ юлашкинчен.

Мулекел шкулĕнче Ильминский системипе чăвашла вĕрентеççĕ.

Шкулта вĕрентекенсем валли хутса ăшăтмалли кăмакапа пĕрле хуран лартнă вучах пур. Унта яшка пĕçерме пулать. Амăшĕ Ахванеçе çăнăх, çĕр улми, кĕрпе парса янă. Пурăнма пулать.

Акă вĕренӳ çулĕ те пуçланчĕ. Пурĕ вăтăр ача вĕренме килнĕ. Пирвайхи çул вĕренме тытăнакансем хăйсен ашшĕ-амăшĕсемпе килнĕ. Шкул çулне çитнĕ ачасемпе пĕрле аслăраххисем те пур. Вĕсем те вĕренме кăмăл тăваççĕ. Ялта вĕренмен, шкула çӳремен ачасен шучĕ вĕренекеннисенчен 3—4 хут ытларах. Анчах та вĕсене ашшĕ-амăшĕсем вĕренме ямаççĕ.

— Эпĕ Афанасий Егорович пулатăп. Мана çавăн пек чĕнеççĕ, — терĕ Ахванеç ачасемпе тата ашшĕ-амăшĕсемпе хăйне паллаштарнă май. Хăйĕн çинчен кĕскен каласа пачĕ. Çапла пуçланчĕ Афанасий Егоровичăн пĕрремĕш вĕренӳ çулĕ.

Мулекел шкулĕнче вĕрентнĕ вăхăтра Афанасий Егорович Питрекелĕнчи училищĕре вĕрентекен Федор Степанович Каштановпа çывăх паллашрĕ. Каштанов та Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă. 1898 çул ăна тӳрех Питрекелне вĕрентме янă. Вăл киличчен унта Клавдия Егоровна ятлă вырăс хĕрĕ вĕрентнĕ. Чи пирвайхи учитель Александр Лебединский пачăшкă вырăс вĕрентнĕ. Клавдия Егоровна 1896 çулта качча кайнă хыççăн Лебединский хĕрĕ Валентина Александровна икĕ çул вĕрентнĕ.

Афанасий Егорович кунти çынсенчен пайтахăшĕнпе паллашма ĕлкĕрчĕ. Ятай Çумккин Хватĕрĕ (Федор Ятаев), Энтри Микулайĕн Мишши (Михаил Андреев), Сухаркка Макçăмĕ, Левентей Матвийĕ Афанасий Егоровичăн çывăх юлташĕсем пулса тăнă. Хăш-пĕр вырсарникун вара Афанасий Егорович Питрекелне Федор Степанович Каштанов патне кайса килет. Хăш чухне Федор Степанович хăй Афанасий Егорович патне килсе çӳренĕ. Вырсарникунсенче вăхăта пĕрле ирттернĕ.

1904 çул хăрушă хыпар сарăлнă. Кăрлачăн 27-мĕшĕнче пирĕн çĕр-шыв çине Япони тапăннă. Çапла Афанасий Егорович пĕр вĕренӳ çулĕ кăна ачасене вĕрентме ĕлкĕрчĕ. Вĕренӳ çулĕ вĕçленсенех Сызраньти çар пунктне кайма повестка илчĕ. Федор Степанович та Сызраньти çар пунктне пынă. Çавăнта вĕсем пĕр-пĕринпе тĕл пулчĕç.

— Пире те вăрçа кайма черет çитрĕ иккен, — терĕ Федор Степанович.

— Мĕн тăвăн, тăван çĕр-шыва хӳтĕлеме каймаллах ĕнтĕ, — аллине чăмăртаса каларĕ Афанасий Егорович.

Уйăха яхăн кайнă хыççăн вĕсене Маньчжурин кăнтăр енчи Мукден хулине илсе çитерчĕç. Çитсессĕнех мунча кĕртсе çар тумĕсем тăхăнтартрĕç. Вăрçа хатĕрлеме тытăнчĕç. Ирхине ирех тăратса вăрçă вăййисем выляттарчĕç, тĕл пеме хăнăхтарчĕç, çапăçу меслечĕсемпе паллаштарчĕç. Эрнерен вара Порт-Артур патне çити илсе кайрĕç. Вăл вăхăтра японецсем Порт-Артур патне десант антарма ĕлкĕрнĕ. Дальнăйне японецсем тытса илнĕ пулнă. Çакăнта ĕнтĕ Афанасий Егорович пуçласа вăрçа хутшă-

нать. Çурла уйăхĕнче японецсем Порт-Артура илес тесе темиçе хутчен те атакăларĕç. Вырăссен çарĕ кашнинчех японецсен атакине сирсе ячĕ. Çапăçусем хĕрсех пычĕç. Японецсем çурма ункăпа вырăссене хирĕç атакăларĕç. Анчах та хирĕç тăру вăйлă пулнипе вĕсем нимех те тăваймарĕç. Çухату икĕ енчен те пысăк пулчĕ. А.Н.Куропаткин командир хĕвелтухăç енчи фронтран наступлени тума шутланă. Анчах та темшĕн вăл, атакăлас вырăнне, вырăссен çарне Мукден патне чакма приказ парать. Çапăçу каллех хĕрсех пычĕ. Вырăссен флочĕ çак вăрçăра пĕтĕмпех тенĕ пек пĕтнĕ. Мукден патĕнче Афанасий Егорович ураран аманса госпитале лекрĕ. Фронтран хăрушă хыпар килсех тăчĕ. Госпитальтен тухсан Афанасий Егорович пĕр вăхăт хушши штабра çыруçăра ĕçлерĕ.

Патша влаçĕпе кăмăлсăрри пур çĕрте те палăрать. Афанасий Егоровича часах киле яраççĕ. Пуйăссем вăхăтлă çÿремеççĕ. Çапах та вокзалта икĕ кун ларнă хыççăн Афанасий Егорович пуйăс çине ларчĕ. Вакунсенче тăвăр. Тăма та вырăн çук темелле. Пуйăс та станцисенче вăрах тăрать. Ку вăл Китай Хĕвелтухăçĕнчи чукун çул çинче юлашки рейс та терĕç.

Японипе вăрçă чарăнчĕ. Япони аллине Курил утравĕсемпе Сахалин утравĕн кăнтăр пайĕ куçнă.

— Эх, Раççей, нивушлĕ эсĕ çавăн пекех вăйсăрланса çитрĕнши? Эсĕ пĕр вăрçăра та çакăн пек мăшкăл курман. Мĕн пулчĕ сана? — тарăхса пычĕ çул çинче Афанасий Егорович. Çапла пуйăс уйăха яхăн кайнă хыççăн Шунтал станцине çитсе чарăнчĕ.

Халь мĕнле киле çитмелле тесе Афанасий Егорович Шунталта тÿрех пасар пулакан вырăна пычĕ. Çакăнта вăл хăйсен ялĕнчен Прахур мучие тĕл пулчĕ.

— Прахур мучи, эсĕ мар-и ку? Мĕнле майпа эсĕ кунта?

— Тырă сутма килтĕм, — пĕлтерчĕ Прахур мучи Афанасий Егоровича.

— Сутайрăн-и ара?

— Сутрăм. Ăнăçлă пулчĕ. Эсĕ Тимахви Якурĕн ывăлĕ Ахванеç мар-и? Мĕнле, ăçтан килсе лекрĕн кунта?

— Эпĕ Инçет Хĕвелтухăçĕнчен госпитальтен тухнă хыççăн кунта килтĕм. Мана яла çити лартса каймăн-ши, Прахур мучи?

— Пыратăн пулсан лартса каятăп. Пĕрле кайма юлташ та пулать.

Прахур мучипе Афанасий Егорович часах çула тухрĕç.

— Санӑн ҫиессӳ те килет пулӗ, Ахванеҫ. Ман ҫумра ҫӑкӑр пур. Хампа пӗрле аш та илнӗччӗ.

Прахур мучи Афанасий Егоровича пӗр чӗлӗ ҫӑкӑр, унпа пӗрле пӗр татӑк аш пачӗ.

Афанасий Егоровичӑн, чӑнахах та, хырӑмӗ выҫнӑччӗ. Прахур мучие тав туса ҫӑкӑрпа аш татӑкне майӗпен чӑмлама тытӑнчӗ.

Ҫул ҫинче Прахур мучи Афанасий Егоровичран фронтри хыпарсем ҫинчен ыйтса пычӗ. Вӑрҫӑ чарӑннӑ хыпаршӑн савӑннӑ пек пулчӗ.

Каҫ пулас умӗн вӗсем Микушкелне ҫитрӗҫ. Тырӑсене вырса пӗтернӗ. Пур ҫӗрте те хӑйсен тыррисене ҫапаҫҫӗ. Ҫанталӑк кӗркуннене пӑхмасӑр ӑшӑ тӑрать. Ҫарансем ҫинче утӑ урисем.

— Мӗнле ҫитрӗн, Ахванеҫ? Сывлӑху мӗнле? Ураран амантрӗҫ тесе ҫырнӑччӗ. Уру мӗнле-ха халь? Тӳрленсе ҫитрӗ-и? — тӗпчеме тытӑнчӗ Якур, ывӑлне ыталаса илсе. Амӑшӗ те Афанасий Егоровича пырса ыталарӗ.

Афанасий Егорович тепӗр кунах ашшӗпе амӑшне авӑн ҫапма пулӑшма тухрӗ. Кӗҫӗнреххисем кӗлте йӑтса ҫапма валли сарса хучӗҫ. Ахванеҫ ашшӗпе, амӑшӗпе пӗрле тӑпачӑпа виҫҫӗлле ҫапма тытӑнчӗҫ. Яра куна вӗсем ыраш ҫапрӗҫ. Афанасий Егорович тепӗр куннех сывлӑм типиччен Кавӗрле Кореньков патне Тӗрлемесе ҫыру ҫырчӗ. Хӑйӗн ҫинчен пӗлтерчӗ. Ачасене вӗрентме Мулекелне каймалли ҫинчен те асӑнчӗ. Нумаях кӗттермерӗ, Кавӗрлерен хурав килчӗ. Кавӗрле те хӑйӗн тӑван ялӗнчи шкулта вӗрентме тытӑнать.

1906 ҫулхи кӑрлач уйӑхӗнче Хусанта чӑвашла хаҫат тухма тытӑнни ҫинчен те ҫырса пӗлтерчӗ Кавӗрле. Гаврил Алексеевич вӑл хаҫатпа ҫыхӑну тытать, хӑй те ҫырӑнса илет. Унӑн сӑввисем те «Хыпарта» пичетленеҫҫӗ иккен. Хаҫат чӑвашла тухса тӑнишӗн савӑннине те пӗлтерчӗ Кавӗрле. Афанасий Егорович патне хӑйӗн сӑвви пичетленӗ хаҫат номерне те ярса пачӗ. Пӗр номерте Гаврил Алексеевичӑн «Хальхи пурнӑҫ» поэми пичетленнӗ:

*Ачисем те пӗчӗк ун,*
*Упӑшки те тӗрмере...*
*Ҫӑнӑх, кӗрпе кашни кун*
*Пӗтсе пырать пӳлмере...—*

пуҫланать поэма. Автор унта хресченсен начар пурнӑҫӗ ҫинчен ҫырса кӑтартнӑ. Вӑл номерпе те Гаврил Алексеевич Афанасий Егоровича паллаштарчӗ.

4-44593
Национальная библиотека
Чувашской Республики

Çакăн хыççăн Афанасий Егорович та «Хыпар» хаçата авăн уйăхĕнчен илсе тăма çырăнчĕ. Анчах та ăна Мулекелне ачасене вĕрентме чĕнеççĕ. Çыру илнĕ хыççăнах вăл Мулекелне кайма хатĕрленчĕ. Ашшĕ ăна лашапа леçрĕ. Афанасий Егорович Мулекелне çитсенех Питрекелĕнчи училищĕпе çыхăну тытрĕ. Федор Степанович Каштанов таврăнман иккен. Ăна кунта вĕрентме килме Ялавăр ялне те чĕнсе янă иккен. Анчах вăл хăйĕн тăван ялне те таврăнман иккен. Те хыпарсăр çухалнă, нимĕн те паллă мар, тен, вăрçăра вилнĕ.

Вĕренӳ çулĕ пуçлансан Афанасий Егорович ачасене вĕрентме тытăнчĕ. Шкултa вăл пĕчченех ĕçлет. Ун патне кунта юлташĕсем те килме тытăнчĕç. Вĕсенчен нумайăшĕ вăрçăра пулнă. Хăшпĕрисем аманса таврăннă. Вăрçă хирĕнче выртса юлнисем те пур. Максăмпа Матви те халĕрех кăна таврăннă. Вĕсем те яппун вăрçинче пулнă. Вĕсем Афанасий Егорович патне час-часах килеççĕ. Хăйсем çырăва вĕренмен пирки тĕрлĕ хыпарсене унран ыйтса пĕлеççĕ. Афанасий Егорович хаçатсем вуласах тăрать. Ехрем Гаврилов пуян хресчен те Афанасий Егоровичпа туслă. Вăл, ачасене юратнине пулах, вĕсене вĕрентме хăй çурчĕн пĕр пайне шкул валли панипе ăна Афанасий Егорович пысăка хурса хаклать.

Афанасий Егорович 1907 çулта «Хыпар» хаçата илсе тăма çырăнчĕ. Гаврил Кореньковăн «Хыпарта» «Вĕренме чĕнни», «Ашшĕ килĕ» сăввисем пичетленчĕç. Вĕсене Афанасий Егорович темиçе хутчен те вуласа тухрĕ, ачасене те ун сăввисемпе паллаштарчĕ. Гаврил Кореньковăн И.А.Крыловăн чăвашла куçарнă юптарăвĕсем «Автанпа ахах пĕрчи», «Акăш, çăрттан тата рак», «Юман айĕнчи сысна», «Тилĕпе иçĕм çырли», «Упăтепе куçлăхсем» юптарăвĕсем «Хыпарта» пичетленсе тухрĕç. Афанасий Егорович вĕсене пурне те тимлĕн вуласа тухрĕ, юлташĕн пултарулăхĕшĕн савăнчĕ.

1907 çулта илсе тăма çырăннă хаçат темшĕн килме пăрахрĕ. Ун пирки Гаврил Кореньков патне те çырса ячĕ. Часах хурав килчĕ. Хаçата малалла кăларма чарнă иккен. Гаврил Алексеевич хăйĕн çырăвĕнче хаçат хупăннишĕн питĕ пăшăрханать иккен. Чăвашсен пĕртен-пĕр тин кăна тухма тытăннă хаçата та кăларма чарнă. Хаçат пурĕ те çулталăк ытларах кăна тухса тăчĕ. «Кама килĕшмерĕ-ши чăвашсен тин кăна тухма тутăннă пĕртен пĕр хаçачĕ?» — пуçне тĕрлĕ май çавăрчĕ Кавĕрле.

Национальная библиотека Чувашской Республики

1908 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулне уçнăранпа 40 çул тата И.Я.Яковлев çуралнăранпа 60 çул тултарнине уявлама унччен малтанах хатĕрленме тытăнчĕç. И.Я.Яковлев 1848 çулхи ака уйăхĕн 13-мĕшĕнче çуралнă. Вăл уçнă шкул вара кĕркунне 40 çул тултарать. Çак кун тĕлне Чĕмпĕрте чăваш кĕнекисене тата букварь пичетлесе кăларнă. Вĕсене чăваш шкулĕсене ярса панă. Мулекелĕнчи шкула та çитрĕç çав кĕнекесем. Пĕринче «Нарспи» поэмăпа сăвăллă юмахсем, тепринче вырăсларан чăвашла куçарнă «Калашник хуçа çинчен хунă юрă», сăвăллă юмахсенчен «Хитре чĕкеç», «Ăслă суеçĕ», «Вĕре çĕлен» тухнă. Вĕсене Афанасий Егорович пысăк тимлĕхпе вуласа тухрĕ. Уйрăмах ăна «Нарспи» поэма килĕшрĕ. Ăна вăл темиçе хутчен те вуласа тухрĕ. Часах вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче пĕрле вĕреннĕ юлташĕнчен, Гаврил Кореньковран çыру илет. Вăл та çав кĕнекесем пирки çырнă. «Нарспи» поэмăна эпир вĕренсе тухнă çул Чĕмпĕрти чăваш шкулне Пушкăртран Константин Иванов вĕренме кĕнĕскер çырни, «Калашник хуçа çинчен хунă юрра» та вăл М.Ю.Лермонтов поэтран вырăсларан чăвашла куçарни çинчен асăннă. Сăвăллă юмахсене вара Ивановпа пĕрле вĕреннĕ Николай Васильев çырнă иккен. Афанасий Егорович «Нарспи» поэмăна улах ларакан хĕрсене те вулаттарчĕ. Унта Нарспин телейсĕр юратăвĕ, ăна хăй юратакан Сетнере мар, юратман ватă Тăхтамана ирĕксĕр качча параççĕ. Поэма тĕп сăнарсен вилĕмĕпе вĕçленет. Ăна вуланă вăхăтра улах ларакан хĕрсенчен хăш-пĕрисем, Нарспие хĕрхенсе, макăрса та илчĕç.

Гаврил Кореньков 1908 çул Чĕмпĕрте чăвашла кĕнекесем тухни, уйрăмах К.В.Ивановăн «Нарспи» поэми пичетленни чăваш литературине çĕнĕ пусăма хăпартни çинчен те асăнса хăварнă.

Афанасий Егорович çак кĕнекесемпе паллашнă тата Кореньков çырăвне вуласа тухнă хыççăн хăй Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннине аса илчĕ. И.Я.Яковлев малашне чăваш литературинче çĕнĕ талантсем çуралассине шанса тăмалли çинчен калатчĕ. «Нарспи» поэма чăваш чĕлхи мĕнле илемлĕ пулнине кăтартса парать. Малалла Афанасий Егорович чăвашсен хушшинче пысăк талантлă çынсем çуралассине сасăпа каларĕ, хăй те халăх хушшинче чăваш юррисене пухмалли çинчен шутлама тытăнчĕ.

Чĕмпĕрте тухнă кĕнекесене Микушкелĕнчи шкула та ярса панă иккен. Унта та çамрăксем «Нарспи» поэмăна, «Калашник

хуҫа ҫинчен хунӑ юрра» юратса вулаҫҫӗ иккен. Кун ҫинчен Афанасий Егорович хӑйӗн ашшӗ ҫырӑвӗнчен пӗлчӗ. Ялта та пурте «Нарспи» поэма ҫинчен калаҫма тытӑнчӗҫ. Акӑ мӗнле интереслентерчӗ чӑвашсене «Нарспи» поэма.

Часах ҫуллахи каникул ҫитет. Чӗмпӗрте тухнӑ кӗнекесем шӑп кӑна ҫитес вӗренӳ ҫулне лайӑх парне пулса тӑрать. Каникула тухсанах Афанасий Егорович Мулекелне кайма шутлать. Каллех хӑйӗн ашшӗ-амӑшӗпе, тӑванӗсемпе, юлташӗсемпе тӗл пулать. Авланма та вӑхӑт ӗнтӗ унӑн. Хӑйӗн тӑван ялӗнчех вӑл пӗр-пӗр хӗрпе паллашма шутларӗ.

Ҫапла вӑхӑт майӗпен иртсе пычӗ. Ҫуллахи каникул вӑхӑтӗнче Афанасий Егорович тӑван ялӗнче, Микушкелӗнче иртгерет. Ашшӗ-амӑшне пулӑшать. Каҫхине вара вӑййа тухать. Ҫамрӑксен ҫуллахи вӑййисем Микулара пуҫланаҫҫӗ те Питрав кунӗ е ун умӗнхи вырсарникун чарӑнаҫҫӗ. Афанасий Егорович та ҫамрӑксен вӑййине хутшӑнать. Кунта ӑна уяв теҫҫӗ.

Пӗрре Афанасий Егорович аллине Гарин-Михайловскин «Темиҫе ҫул ялта» вырӑсла кӗнеки лекнӗччӗ. Афанасий Егорович ҫав кӗнекере ҫамрӑксен уявӗ ҫинчен акӑ мӗн вулани асра юлчӗ: «Хӗрсем пӗр-пӗрне алӑран тытса пысӑк ҫавра карта туса юрласа ячӗҫ. Эпӗ кунашкал хӑйне евӗрлӗ тӗлӗнмелле юрӑ-ташӑ нихӑҫан та курман. Курнӑ сцена ҫинче — балет е опера. Анчах ку балет та, опера та мар — чӗрӗ пурнӑҫ. Никам та ятарласа хатӗрлемен ӑна. Хӗрсем пӗр-пӗрин хыҫҫӑн майӗпен утаҫҫӗ, вӗсемпе пӗрле пӗтӗм тӗнче юрласа ҫаврӑннӑ пек туйӑнать. Мӗн вӑл романс, мӗн вӑл опера? Вӗсем нихӑҫан та ҫак пиншер ҫул йывӑр асаплӑха чӑтса, ҫапах пурнӑҫ, ҫутҫанталӑк илемлӗхне чӗререн туйса, унпа киленсе, савӑнса пурӑнма пултарнӑ чӑваш халӑхӗн ырӑ чун-кӑмӑлне, сӑпайлӑхне, ӗҫченлӗхне, йӑвашлӑхне ҫак хӗрсен уяв картийӗ пек кӑтартса параяс ҫук.

Кунашкал юрӑсене пӗр ҫын нихӑҫан та шутласа кӑлараяс ҫук. Ку пӗтӗм чӑваш халӑхӗн пӗрлешнӗ пултарулӑхӗ, чӗлхе, юрӑ, ӑс-тӑн пуянлӑхӗ».

Чӑваш ҫамрӑкӗсен уявӗ чӑнахах та вӑл ҫырса кӑтартнӑ пек пулать. Ҫак уяв вӑхӑтӗнче Афанасий Егорович хӗрсене сӑнама тытӑнчӗ. Вӑл Трахвин Ҫумкки хӗрне пит сӑнать. Алюна ятлӑ вӑл. Алюна сарӑ ҫӳҫлӗскер, кӑвак куҫ, авӑнчӑкрах куҫ харшийӗ, тӳрӗ те илемлӗ сӑмси, ҫаврака пичӗ унӑн сӑнне калама ҫук

хитрелетеççĕ. Уявсенче хăйĕн илемлĕ сассипе савăнтарать пурне те. Уявра яланах вăл юрă пуçлать. Вăл пуçланă юрра вара пурте пĕр харăс ярса илеççĕ. Алюнана хирти сарă чечекпе танлаштарма пулать. Кулнă чух икĕ пит çăмартийĕ кăшт путарах тăрать. Унăн хитре сăнне ытараймасăр пăхас килет. Афанасий Егорович уяв картине ун çумне тăчĕ те, уяв карти майĕпен çаврăнса утса пынă май, ăна уяв айккине илсе тухрĕ. Анчах та Алюна унран вĕçерĕнсе каллех уява кĕрсе ытти хĕрсемпе пĕрле юрлама пуçларĕ. «Ку ытла кăнттамрах пулчĕ ман енчен», — шутларĕ Афанасий Егорович. Уяв саланнă вăхăтра та Алюна çумне пырса тăчĕ те: «Алюха, сире ăсатма юрать-и?» — терĕ.

— Мĕншĕн-ха эсир мана киле ăсатасшăн? Эпĕ пĕччен мар, юлташсемпе пĕрле каятăп.

Çапла Алюна хăйĕн Верук ятлă юлташĕпе хăйсен килĕ еннелле утрĕç. Вĕсем кÿршĕллĕ пурнаççĕ. Çав хушăра Афанасий Егорович вĕсен хушшине пырса тăчĕ. Вара вĕсем виççĕн пĕрле калаçкаласа утрĕç. Алюна килĕ тĕлне çитсен Верук вĕсенчен уйрăлчĕ те хăйсен килне кĕрсе кайрĕ. Афанасий Егорович Алюнана тытса юлчĕ.

— Манран ан хăра, Алюна. Эпĕ сана кÿрентерместĕп. Нихăçан та сана кÿрентерес çук. Эпĕ сана сăнатăп та, килĕшетĕн эс мана. Эс мана хăвăн хитерлĕхÿпе тыткăнларăн. Эпир халь пĕчĕк ачасем мар. Атя-ха юлташлă пулар.

— Темĕн-çке. Эсĕ пирĕн çине пăхас çук. Эсĕ вĕреннĕ çын. Эпĕ хресчен хĕрĕ, вĕренмен.

— Юрату вĕреннĕ çын-и, вĕренмен-и, ун çине пăхмасть. Унăн хăйĕн йĕрки. Тÿрех калатăп сана, кăмăллатăп эп сана. Ан ютшăн манран. Эпĕ сана нихăçан та начар тăвас çук. Юрататăп эпĕ сана, Алюна.

— Эсир арçынсем пурте çавăн пек калатăр. Юрататăп тенине, ан шан, юлташ нихçан та. Юрататăп текен юратмасть вăл нихçан та. Çавăн пек такмакра та пур. Ăна такмакласа юрлаççĕ.

— Юрă сăмахĕсемпе чĕре хушнине яланах танлаштарма çук.

— Юрĕ, Ахванеç, кĕçĕрлĕхе çитĕ. Кăмăлу пулсан ыран каç та ăсатăн. Çынсен умĕнче ман çума пит ан çыпçăн, вăтанатăп.

Çакăн хыççăн Афанасий Егорович Алюнана каççерен килне ăсатма тытăнчĕ. «Эпĕ ĕнтĕ çирĕм улттă тултартăм. Авланма вăхăт. Пулас арăма, пулас ачасене курас киле пуçларĕ. Ялан ĕçе пула авланас шухăш та пуçра пулман-ши?» — пуçне çаврăрма

тытăнчĕ Афанасий Егорович Алюнапа калаçма тытăннипе. Вăл вăхăтра Алюна вун сакăр çулта кăна-ха.

Уяв иртнĕ хыççăн чăваш çамрăкĕсем урама тухмаççĕ. Тепĕр кунах утă çулма тытăнаççĕ. Ăна çулса типĕтнĕ хыççăн капана хываççĕ. Ыраш вырма та вăхăт çитет. Ун хыççăн çуртрисене вырмалла, çапмалла. Çурла уйăхĕнче Афанасий Егорович Мулекелне таврăнса çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленме тытăнать.

Çĕнĕ çула Афанасий Егорович Микушкелне таврăнчĕ. Çĕнĕ çул каç çамрăксем çĕрĕ яма пуçтарăнаççĕ. Пĕр-пĕр савăта шыв яраççĕ те унта кашни хăйĕн çĕррине паллă туса шыва ярать. Юрлаççĕ. Кашни юрă хыççăн пĕр çĕрĕ туртса кăларать пăтранса тăракан. Мĕнле юрă пулать, çын шăпи çав юрă сăмахĕсене тӳр килет. Сурăх картине кĕрсе сурăх ури тытаççĕ. Шурă тĕслĕ сурăх лексен вăл вара сар ачана качча каять. Хура сурăх лексен упăшки хура çын пулать.

Çĕнĕ çул каç Афанасий Егорович Алюнапа пĕрле пулчĕ. Каччăсем те çĕрĕ янă çĕрте хĕрсемпе пĕрле пулчĕç.

— Алюна, эпĕ питĕ те тунсăхласа çитрĕм сансăр. Эсĕ ман пуçран пĕрре те тухмастăн, — тесе Афанасий Егорович Алюнана хăй çумне чăмăртарĕ. Алюна та хирĕçлемерĕ.

— Эпĕ те сана час-часах аса илетĕп, — терĕ Алюна вăтанчăклăн.

— Юрататăп эпĕ сана, Алюна, сансăр пуçне пурăнма пултараймастăп.

— Эпĕ те сана юрататăп, Ахванеç.

— Пирĕн пĕрлешмелле, Алюна.

— Тепрер çул тăхтар-ха.

Афанасий Егорович Алюнана ыталаса илчĕ те чуп тума хăтланчĕ.

— Юрамасть, — терĕ те Алюна килне тарса кĕчĕ.

Çапла вĕсем çуллахи каникул вăхăтĕнче яланах пĕрле пулчĕç. Афанасий Егоровичăн та шăллĕсемпе йăмăкĕсем питĕ ĕçченсем пулса çитĕнсе çитрĕç. Килти ĕçсене вĕсем тăваççĕ.

Çаплах 1914 çул та килсе çитрĕ. Утă уйăхĕнче хăрушă хыпар сарăлчĕ. Германипе вăрçă пуçланнă. Германипе пĕрле Австро-Венгри те Германи майлă пире хирĕç вăрçă пуçланă. Афанасий Егорович çурла уйăхĕнчех вăрçа кайма повестка илчĕ. Каллех хăйĕн юратнă ĕçĕнчен уйрăлма тӳр килчĕ. Вăл Алюнăпа туй пирки те калаçма тытăннăччĕ. Акă вăл юлашки каç Алюнăпа тĕл пулчĕ. Хире-хирĕç

пулсанах пӗр-пӗринпе ыталашса илчӗҫ. Анчах та Алюна ӑна чуп тутармарӗ. Пайтахчен калаҫса ларчӗҫ вӗсем Алюнӑсен пусми ҫинче. Ҫакӑнта вӑл ыран вӑрҫа тухса каяссине пӗлтерчӗ.

-Нивушлӗ урӑх пӗр-пӗрне кураймӑпӑр-ши? — терӗ Алюна Афанасий Егорович ҫумнерех чӑмӑртанса.

— Вӑрҫӑ вӑрахчен пыма пултарать. Мана кӗтсе тӑма сӑмах паратӑн-и, Алюна. Эпӗ сана юрататӑп. Пирӗн ӗмӗр пӗрле пулмаллаччӗ те, вӑрҫӑ пире уйӑрать. Ним тума та ҫук.

— Сӑмах паратӑп, Ахванеҫ. Эпӗ сана кӗтсе тӑратӑп.

Юлашкинчен вӗсем чуп тусах уйӑрлчӗҫ. Хальхинче вара Алюна чуп тума чармарӗ. Ҫапла уйӑрлчӗҫ вӗсем.

Вӑрҫа каякансене Самарта пӗр ҫӗре пуҫтарчӗҫ те вӑрҫа хатӗрлеме тытӑнчӗҫ. Ҫакӑн хыҫҫӑн икӗ эрнерен вӗсене вӑрҫа ӑсатрӗҫ. Афанасий Егорович Карпат тӑвӗсем патне лекрӗ. Кунта Австро-Венгри ҫарне хирӗҫ ҫапӑҫмалла. Ӑна, офицер ятне илнӗскере, интендант хӗсметӗнче пулма уйӑрчӗҫ. Фронтри салтаксем валли апат-ҫимӗҫ турттаракан обоз пуҫӗнче пулмалла. Ҫак ӗҫе пӗтӗмпех унӑн йӗркелесе пымалла. Кунта вӑл вырӑс салтакӗсен паттӑрлӑхӗ ҫинчен сахал мар пӗлчӗ. Вӑхӑт-вӑхӑт хӑйне те ҫапӑҫӑва хутшӑнма тӳр килчӗ. Пӗрре атака вӑхӑтӗнче тӑшмана хытӑ хӗстерчӗҫ. Афанасий Егорович вӑл вӑхӑтра интендант ӗҫне ертсе пыратчӗ. Вӑл тӳсеймерӗ. Мӗнле-ха тӑшманпа ҫапӑҫнӑ вӑхӑтра манӑн айккинче пулмалла, шутларӗ вӑл. Командирсене пӗлтерсе, индендант ӗҫне пӑрахса, тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫма тытӑнчӗ. Ҫапӑҫура пӗр командир вилнӗ хыҫҫӑн ротӑна хӑй ҫине илчӗ. Салтаксене атакӑна ертсе кайрӗ. Атакӑсем те яланах ӑнӑҫлӑ пулмаҫҫӗ ҫав. Тепӗр чухне каялла чакма та тӳр килет.

Салтаксем хушшинче патша влаҫне хирӗҫ кӑмӑлсӑрлӑх кунран-кун ӳссе пырать. Фронтран таракансем те пулчӗҫ. Революциллӗ шухӑшлӑ салтаксем нумайлансах пыраҫҫӗ. 1917 ҫулхи нарӑс уйӑхӗн вӗҫӗнче патша влаҫне сирпӗтсе антарни ҫинчен хыпар ҫитрӗ. Петроградра вӑхӑтлӑх правительство йӗркеленнӗ. Ирӗклӗх ҫинчен, вӑрҫа мӗн ҫӗнтеричченех малалла тӑсасси ҫинчен офицерсем, Вӑхӑтлӑх правительство агитаторӗсем салтаксем умӗнче хитре сӑмах калаҫҫӗ. Салтаксене йӑпатма тӑрӑшаҫҫӗ, хавхалантараҫҫӗ. Вӗсем ытларах вӑхӑтлӑх правительство ятӗнчен калаҫҫӗ. Офицерсем хушшинче те революциллӗ шухӑшлӑ ҫынсем пур.

1917 çулхи юпа уйăхĕн вĕçĕнче Петроградра социализмла революци çĕнтерни çинчен фронта хыпар çитет. Влаçра халь — советсем. Вăрçа чарса лартас пирки совет правительствипе Германи хушшинче калаçусем пыраççĕ. Афанасий Егорович хулран аманса госпитале лекет. Унтан сывалса тухсан ăна киле яраççĕ. Çапла вăл 1918 çулхи кăрлач уйăхĕнче киле таврăнать. Пуйăспа Чаллăпуçне çити ларса килет. Каллех кунта пасара Микушкелĕнчен килнĕ çынсемпе ларса килне çитет. Каллех ашшĕ-амăшĕпе, тăванĕсемпе тĕл пулать. Унăн ашшĕпе амăшĕ те ватăлнă. Шăллĕпе йăмăкĕ, Тимушпа Верук та çитĕнсе çитнĕ. Верук хăйсен ялĕнчи Элексее, хăйĕнчен виçĕ çул аслăскере, качча тухнă. Пĕтĕм хуçалăх Тимуш çинче тытăнса тăрать.

Афанасий Егорович килни çинчен пĕлсен кӳршĕ-аршăсем, тăванĕсем пуçтаранчĕç. Пурте фронт хыпарĕсем çинчен ыйтаççĕ. Микушкелĕнчен вăрçа тухса кайнисенчен пайтахăшĕн вилнĕ çырăвĕсем килнĕ. Афанасий Егорович пухăннисене совет влаçĕ вăрçа чарса лартас тесе тăрăшни çинчен, малалла рабочисемпе хресченсен пурнăçĕ лайăхланасси, хĕрарăмсене те çĕр уйăрса памалли çинчен каларĕ. Ыйтусем нумай пулчĕç. Калаçу вăрахчен пычĕ. Пухăннисем каç пулсан тин саланчĕç.

Афанасий Егорович малашне хăйĕн юратнă ĕçне тытăнасси çинчен каларĕ. Алюна çинчен те ыйтса пĕлчĕ. Вăл ял çыннинех, Илюка, качча тухнă иккен. «Акă иккен хĕрсем мĕнле, хăй мана кĕтсе тăма сăмах пачĕ пулсан та хăйĕн сăмахне тытаймарĕ иккен», — терĕ вăл тарăхнă пек пулса.

Афанасий Егорович малашне хăйĕн юратнă ĕçне тытăнасси пирки асăнчĕ. Çапла вăл тӳрех хăй вĕрентнĕ шкула кайма шут тытрĕ. Килте пĕр вăхăт пурăннă вăхăтра Тимуш та авланчĕ. Хăйсен ялĕнчи хăй юратса çӳренĕ хĕре качча илчĕ. Шăллĕ авланнишĕн Афанасий Егорович савăнчĕ. Халь ашшĕпе амăшне пулăшакансем иккĕн. Туй хыççăнах Афанасий Егорович Мулекелне кайрĕ. Ăна Тимуш лашапа леçрĕ. Шкулта ачасене вĕрентекен те çук иккен. Афанасий Егорович Мулекелне çитсенех тепĕр кунне ачасемпе ашшĕ-амăшĕсене чĕнтерчĕ. Хăш-пĕрисем патĕнче хăй пулса вĕрентме тытăнасси çинчен пĕлтерчĕ.

Çапла вăл вĕренӳ çулĕ варринче ачасене вĕрентме тытăнчĕ. Вăл кунтан кайнăранпа икĕ вĕрентекен улшăннă. Иккĕшне те фронта илнĕ. Вĕренӳ çулĕ пуçлансан пĕр арçын вĕрентме

тытăннă та, хăйĕн те пĕлӳ çитменнипе икĕ уйăх ытларах вĕрентнĕ хыççăнах пăрахса кайнă.

Хĕллехи вăхăтра ялта хĕрсем улах лараççĕ. Каçхине вара пĕр килĕре пухăнса арлаççĕ, алса-чăлха çыхаççĕ. Çăварниччен арласа тунă çипе хутăрласа пыраççĕ. Пурĕ вунă хутăртан кая мар тумалла. Арласа хатĕрленĕ çипе çăваççĕ, типĕтеççĕ, вара çуркунне сӳретке çине вырнаçтараççĕ, унтан кунчак туса пир тĕртмелли станок çине вырнаçтараççĕ. Çипе кĕрĕ, хĕç витĕр кăлараççĕ. Вара тĕртме тытăнаççĕ. Мăнкуна çĕнĕ кĕпе çĕлесе тăхăнмалла. Ӳт хушăнать теççĕ.

Афанасий Егорович чăвашсен йăли-йĕркисене те тĕпчеме юрататьь. Хĕрсем улах ларнă вăхăтра арланипе кăна мар, вăхăт-вăхăт тĕрлĕ вăййсем выляса илеççĕ. Каччăсем тăмрапа пырсан, ташласа та илеççĕ. Çĕнĕ çул каç çĕрĕ яраççĕ. Çĕнĕ çул иртнĕ хыççăн вара хĕрсем арланă вăхăтра канмалла урама тухса çăварни юррисем юрлама тытăнаççĕ. Чăваш çамрăкĕсем кашни праçнике юрăсемпе кĕтсе илеççĕ. Кашни праçникĕн уйрăм кĕвĕ. Çăварни эрнинче нимĕнле ĕç те тумаççĕ. Эрнипех тĕрлĕрен вăййсем выляççĕ. Лашасем кӳлсе çăварни чупаççĕ, тăвайккинчен çунашкасемпе ярăнаççĕ. Çул урлă каçмалла, йыт туппилле выляççĕ. Çăварни эрнинче кашни кунăн хăйĕн уйрăм йĕрки пур.

Пĕрре çапла Афанасий Егорович çамрăксемпе пĕрле улах курма тухрĕ. Пĕр улахра вăл пĕр çамрăк хĕре асăрхарĕ. Хĕрсем арланă вăхăтра Афанасий Егорович асăрханă хĕр сасси çинçерех те питĕ уçă, çаврака питлĕ, авăнчăкрах куç харши, кăвак куç, сарă çӳç ăна питĕ килĕшет. Кулнă чухне пит çăмартийĕсем кăшт кăна путарах тăраççĕ. Туллирех пит илемлĕн курăнать. Вăл хĕр ăна килĕшнĕ пек туйăнчĕ. Пĕрре çапла улах ларнă чухне, çăварни çитсе килнĕ май, хĕрсем урама çăварни юрри юрлама тухнă. Хĕрсен сасси инçене каять. Уçă сасă каччăсене илĕртет. Афанасий Егорович Сантăр ятлă каччăпа хĕрсем патне пычĕç. Сантăрăн юратнă хĕрĕ те çавăнтах. Вĕсемпе пĕрле каччăсем те юрлама тытăнчĕç:

*Эс леш енче, тăванăм, эп ку енче,*
*Хушшăмăра каçмасем хывар-и?*
*Каçмăрсене хывсан та çӳçерен хыв,*
*Каçмассерен каçмăр та авăнтăр.*
*Пĕлĕшне тусан та ту лайăхне,*
*Курмассерен чунăр та савăнтăр.*

Кăштах юрланă хыççăн хĕрсем каялла хăйсем улах ларнă çĕре кĕчĕç. Сантăр хăй кăмăлланă хĕрне, Елюка; Афанасий Егорович унччен хăй улахра асăрханă хĕре тытса чарчĕ.

— Эпĕ сана тахçантанпа сăнатăп. Килĕшетĕн эс мана, кăштах кăна чарăнса тăр ĕнтĕ. Нивушлĕ манпа кăштах та пулсан калаçса тăрасшăн мар? — терĕ Афанасий Егорович хĕр хăйĕн юлташĕсенчен юласшăн мар пулса турткалансан.

— Эпир пĕр-пĕрне лайăх та пĕлместпĕр вĕт-ха. Эсĕ кунта унччен вĕрентнĕ вăхăтра эпĕ ача кăна пулнă.

— Эсĕ халь ача мар, çитĕнсе çитнĕ маттур хĕр. Пиçсе çитнĕ çырла, — терĕ Афанасий Егорович кĕрес тесе турткалашса тăнă вăхăтра.

— Урамра нумай тăма юрамасть. Эпир ĕçлетпĕр вĕт-ха. Ĕçленĕ вăхăтра кăштах çапла тухса уçăлса кĕретпĕр.

— Ан хăра манран. Эпĕ сана нихçан та кӳрентерес çук. Мĕнле ятлă-ха эсĕ, чиперккем?

— Мана Хрести тесе чĕнеççĕ, — терĕ Хрести. Хăй, Афанасий Егоровичран вĕçерĕнсе, улах ларнă çĕре тарса кĕчĕ.

Çакăн хыççăн хăйĕн хваттерне кĕрсен те Афанасий Егорович тахçанччен шутласа выртрĕ. Кăçал вăл 34 çул тултармалла. Çамрăках мар, ватта юлнă каччă. Авланмаллаччĕ те, вăрçă пуçланни чарчĕ. Хăй килнĕ çĕре хăйĕн юратнă хĕрĕ Алюна та качча кайнă.

Улах ларнă вăхăтра хĕрсем тепĕр каçхине те урама тухса çăварни юрри юрланă вăхăтра Афанасий Егорович каллех çав хĕрсем патне пычĕ. Сантăр та вĕсем патне пырса юрлама хутшăннă. Ăна кура Афанасий Егорович та хĕрсемпе пĕрле юрлама тытăнчĕ. Хĕрсем улах çуртне кĕнĕ вăхăтра Сантăр хăйĕн юратнă хĕрне, Елюка, тытса юлчĕ. Афанасий Егорович Хрестие тытса чарчĕ. Хрести турткалашнă пек пулчĕ те чарăнчĕ.

— Ан ютшăн-ха манран, Хрести. Эпĕ сана начар тăвасшăн мар-çке. Мĕншĕн ютшăнатăн манран? Пĕр-пĕринпе юлташлă пулар-ха. Мĕн тăвам ĕнтĕ сана юрататăп пулсан. Чĕре мана сан патнах туртать. Эпĕ сана никама та памастăп. Малашне эпир санпа çывăх юлташсем пулăпăр. Килĕшетĕн-и?

— Юрĕ, килĕшетĕп. Анчах та çынсем умĕнче ман çума пит ан çулăх. Вăтанатăп эпĕ

Афанасий Егорович ăна хăй çумне чăмăртарĕ. Чуп тума вара Хрести ирĕк памарĕ, пуçне пăрчĕ.

Çапла калаçса тăнă хыççăн Хрести улах ларнă çĕре кĕчĕ. Унпа пĕрле Афанасий Егорович та хĕрсем патне кĕчĕ. Кăштах тăрсан Сантăрпа Елюк та кĕчĕç. Афанасий Егорович хĕрсем ыйтнипе пĕр халап та каласа пачĕ.

Улахран тухнă хыççăн хĕрсем хăйсен килĕсене саланчĕç. Сантăр хăйĕн Елюкне, Афанасий Егорович Хрестие хăйсен килĕсене ăсатрĕç.

— Хрести, эпир çитĕннĕ çынсем. Эпĕ сана юрататăп. Пирĕн иксĕмĕрĕн пĕрлешмелле. Килĕш, Хрести, манăн мăшăр пулма. Енчен те эсĕ мана кăмăллатăн пулсан.

— Эпĕ çамрăкрах-ха халех качча кайма.

Хăй вара каччă ăна икĕ хулĕнчен тытса хăй çумнерех чăмăртанă вăхăтра ун çумнерех сĕртĕнчĕ.

— Эпĕ сана юрататăп-çке, Хрести. Эпĕ сана нихăçан та пĕр сивĕ сăмах та калас çук. Пирĕн пĕрлешмеллех, енчен те эсĕ хирĕç пулмасан.

Хрести ăна хирĕç нимĕн те чĕнмерĕ.

Ун хыççăн Афанасий Егорович Хрести амăшĕ патĕнче те пулса калаçса пăхрĕ.

— Астăватăп-ха, вăрçăччен те эсир кунта ачасене вĕрентеттĕрччĕ.

— Акă мĕн, амăшĕ, Хрести питĕ маттур, ĕçчен хĕр. Эпĕ ăна тахçантанпа сăнатăп. Эпир пĕр-пĕрне юрататпăр. Унпа пĕрле çемье çаврасшăн. «Анне хирĕç пулмасан, эпĕ хирĕç мар пĕрлешме», — терĕ вăл.

— Вăл çамрăк-ха, вун саккăр кăна тултарчĕ. Пĕр-пĕрне юрататăр пулсан, эпĕ хирĕç мар... Эх, ку вăрçă! Чарăнма та пĕлмерĕ. Манăн мăшăрăм та, Синахвун, Хрести ашшĕ, вăрçа илсе кайнăранпа хыпарĕ те çук. Те чĕрĕ, те вилнĕ, нимĕн те пĕлместпĕр. Хыпарĕ те çук. Хрести 1914 çул ашшĕне вăрçа илнĕ чуне вун пиллĕкре кăначчĕ. Халь çитĕнсе çитсе хĕр пулчĕ. Хĕрарăм ĕçне пур енчен те пултарать. Кантăр, йĕтĕн акса илетпĕр. Вăл вĕсене хутса пултарать, тыллать, юлташĕсемпе пухăнса сӳс ними тăваççĕ, сӳсĕсене килĕ çине хурса тĕвеççĕ, çемçетеççĕ. Улахра вара арлать.

— Анне, ытлашши ан мухта, пурне те пĕрле тăватпăр-çке, — терĕ Хрести вăтанчăклăн. Хрести вăл вăхăтра чăлха çыхатчĕ.

— Питĕ те ĕçчен хĕр ӳстернĕ эсĕ, амăшĕ. Пăхса сăнаса тăратăп та вăл пур ĕçе те пултарать, ӳркенсе тăмасть.

— Мана ытлашши мухтани кирлĕ мар. Çынсем мĕнле ĕçлесçĕ, эпĕ те çавăн пекех ĕçлетĕп, — терĕ Хрести çыхакан чăлхине алăран ямасăр.

— Турри сывлăх патăр сана, чиперкке, — терĕ те Афанасий Егорович, «Куна вĕçертес марччĕ», — тесе шуларĕ хăй ăшĕнче.

— Тавах ыр сăмахусемшĕн, — тавăрчĕ Хрести, хĕрелсе.

Улах ларнă вăхăтра ялта краççын та пулмасть хăш чухне. Пуянсем кăна краççын тупкалаççĕ. Краççын çук вăхăтра хĕрсем вара черетпе чĕлнĕ хăйă çунтараççĕ. Вăл вăхăтра ыттисем алă ĕçĕ тăваççĕ.

Сӳсе арлама тытăниччен малтан кантăра тылласа сӳс тăваççĕ, килĕре кисĕппе лайăх тӳсе çемçетеççĕ, ăна вара кĕнчеле çине тирсе кĕрепенккепе туртса турашăл тăваççĕ. Вара тин арлама тытăнаççĕ. Пуш уйăхчен 10—15 хутăр тăваççĕ е ытларах та. Çуса типĕтнĕ хыççăн кирлĕ тĕспе пĕветеççĕ, е кайран, тĕртнĕ хыççăн, пĕветеççĕ. Сӳреткерен илсе пир тĕртмелли стан çине вырнаçтарнă çипе ураççи теççĕ. Аса ăшне çип чĕркенĕ çĕрĕ вырнаçтараççĕ. Малтан хутăра ярмуççи çине вырнаçтараççĕ, хултăрчăпа çавăрса çĕрĕ çине чĕркеççĕ. Ун хыççăн ăна ăса ăшне вырнаçтараççĕ. Вăл çипе кумми теççĕ. Ура пусси çине пусса икĕ кĕрĕрен пĕри аялалла анса, тепĕр кĕрри çӳлелле хăпарса ураççи çиппине икĕ еннелле, аялалла та, çӳлелле те уйăрса, ун витĕр кумми çиппиллĕ ăсана витĕр кăлараççĕ те, хĕçпе шаккаса пир çумне çыпăçтараççĕ. Çапла пир майĕпен ӳссе пырать. Пире тĕртнĕ хыççăн çăваççĕ, кирлĕ тĕспе пĕветеççĕ, çиппине пĕветмен пулсан.

Çăварни вăхăтĕнче çамрăксем ытларах урамра ирттереççĕ, тĕрлĕ вăйăсем выляççĕ, лаша кӳлсе катаччи чупаççĕ.

Аслă çăварни кунĕ Афанасий Егорович Хрестипе пĕрле катаччи чупрĕ.

Тунтикун çăварние кĕтсе илнĕ май улăмран çын кĕлетки туса, ăна хĕр пек тумлантараççĕ, вара туртса çӳреççĕ ăна каччăсем. Кĕлеткене тăвайккине хăпартса çунашкапа ярăнтараççĕ. Кунĕпех тĕрлĕ вăйăсемпе пĕрле тăвайккинче ярăнаççĕ. Теприсем лашапа катаччи чупаççĕ, çăварни чупаççĕ теççĕ. Вăл кун икерчĕсем пĕçернĕ. Пĕçермелли хатĕрсене малтанах хатĕрлесе хураççĕ. Кашни хуçа икерчĕсене хăйне майлă пĕçернĕ. Опарăна, чустине хĕрсем хатĕрленĕ вырсарникун каçхине. Тунтикун çăварни пуçланни шутланă. Тепĕр çĕрте ăна вырсарникунах пуçланă. Вăл куна Аслă çăварни тенĕ. Пĕçернĕ икерчĕпе малтан чухăнсене чысланă.

Ытларикун кунĕпех тĕрлĕ вăйăсем вылянă. Каччăсем хĕрсене тăвайккинчен ярăнма чĕннĕ. Вĕсемех хĕрсене икерчĕпе сăйлаççĕ.

Юнкун çамрăк мăшăрсем пĕр-пĕрин патне çÿреççĕ, ĕçеççĕ-çиеççĕ. Кĕрÿшĕсене хăйсен хунямăшĕсем икерчĕпе сăйлама хăнана чĕннĕ.

Кĕçнерникун тăвансем, ратнесем пĕр киле пуçтараннă. Ĕçнĕ-çинĕ. Килĕрен кайнă. Кĕрÿшĕсем хăйсен хунямăшĕсене икерчĕпе хăналанă, сăра ĕçтернĕ.

Çамрăксем вара, мăшăрланма ĕлкĕрменнисем, кунĕпех катаччи ярăннă, тĕрлĕ вăйăсем вылянă: çул урлă каçмалла, йыт туппилле. Лаша кÿлсе çăварни чупнă.

Эрнекун çамрăк мăшăрсем, кĕрĕвĕ хăйсен хунĕпе хунямăшне хăнана илнĕ. Ĕçнĕ, çинĕ. Каччăсем хăйсем кăмăллакан хĕрсене çăварни чупма чĕннĕ. Каччисен аллинче ĕçмелли те çимелли пулнă. Хĕрĕсене чысланă.

Шăматкун та çав вăйăсемех иртнĕ. Вылянă, ярăннă.

Вырсарникун пĕр-пĕрне каçарттармалли кун. Тĕрлĕ вăйăсем вылянă. Каçалапа çын кĕлетки туса çунтарнă. Ун урлă сиксе каçмалла вылянă, çунса пĕтес умĕн. Ку вăл хĕле ăсатни шутланнă. Çунса пĕтнĕ хыççăн çамрăксем пĕр-пĕринчен каçару ыйтнă. «Эпĕ каçаратăп мĕн те пулин пулнă пулсан пирĕн хушшăмăрта, эсĕ те каçар», — тенĕ. Вара пĕр-пĕрне чуп туса илнĕ. Каччăсем вара хĕрсене хаваспах чуп тунă.

Афанасий Егорович Хрестие ыталаса илсе пĕр-пĕрне каçарттармалла чуп туса илчĕ. Çапла вăл ăна пирвайхи хут чуп турĕ.

— Манăн санпа пĕрмаях пĕрле пулас килет, Хрести. Хам патăмран ярас та килмест.

— Ыран аслă типĕ тытăнать. Вăл мăнкунччен пырать. Унччен урама та тухмастпăр. Çăварни хыççăн улах ларма та пăрахатпăр тепĕр кĕркуннеччен. Мăнкунта тĕл пулăпăр.

— Унччен сана курмасăр чăтма пултараймастăп.

— Тĕл пулма майне тупăпăр.

Çапла вĕсем Хрестисен килĕ умĕнче пĕр-пĕрне тепĕр хут чуп туса уйрăлчĕç.

Афанасий Егорович çаплах ачасене вĕрентрĕ. Уроксене интереслĕ иртттерме тăрăшрĕ.

Акă чăн-чăн çуркунне те çитрĕ. Урамсенче шыв кĕрлесе юхать. Çамрăксем пăр кайнине курма тухнă Ăса шывĕ хĕррине.

Хрести те шыв хӗррине тухнӑ. Ҫакӑнта Афанасий Егорович уроксем хыҫҫӑн тӗл пулчӗ Хрестие.

— Тунсӑхларӑм эпӗ сансӑр, Хрести.

— Эпӗ те тунсӑхларӑм. Анчах та халь ҫынсен умӗнче мана ан ытала.

Ҫапла вӗсем хальхинче нумай та калаҫаймарӗҫ.

Урамра ӑшӑ, сывлӑш уҫӑ. Кӑнтӑртан вӗҫсе килнӗ кайӑксем те, ҫуркунне ҫитнине туйса, хаваслӑн ӑмӑртмалла хӑйсен юррисене «шӑрантараҫҫӗ».

Акӑ мӑнкун та ҫитрӗ.

Мӑнкун — ҫӗр ӗҫченӗсен аслӑ уявӗсенчен пӗри. Тӗне кӗмен чӑвашсем ӑна юнкун пуҫлаҫҫӗ те тепӗр юнкунччен палӑртаҫҫӗ. Вырӑс тӗнне йышӑннисем пӗр вырсарникун тытӑнса тепӗр вырсарникун уявланӑ. Мӑнкун пуҫланнӑ куна Аслӑ Калӑм теҫҫӗ. Юлашки кунне Кӗҫӗн Калӑм теҫҫӗ.

Чӑваш тӗнӗ-йӗрки аслӑ ҫутҫанталӑкпа несӗл ваттисене пуҫ тайнинчен тӑрать. Тӗне кӗнӗ чӑвашсем авалхи хӑйсен тӗн йӑлисене те тытса пыраҫҫӗ. Мӑнкун эрнинче ваттисене черетпе чыслаҫҫӗ.

Аслӑ Калӑм кунӗ — ҫутҫанталӑка хисеплемелли вӑхӑт. Турра пуҫ ҫапаҫҫӗ, яшка-ҫӑкӑрпа, пӑтӑпа чӳклеҫҫӗ. Пухӑнса кӗлӗ тӑваҫҫӗ, сӑра черетпе ӗҫтереҫҫӗ. Ҫын ывӑл-хӗрӗсемшӗн, выльӑх-чӗрлӗхӗшӗн, усмелли тыр-пулшӑн кӗлӗсем калаҫҫӗ. Турӑран асӑнса пулӑшу ыйтаҫҫӗ. Ху тӑрӑшсан тин турри пулӑшать. Несӗл ваттисене аса илеҫҫӗ.

Аслӑ Калӑм хыҫҫӑн тепӗр кунне ятарласах ваттисене асӑнмалли кун. Мӑнкун эрнинче Калӑм, ҫурта кунӗ иртет. Ачасем Мӑнкун ҫӑмартисем пуҫтараҫҫӗ. Тӗне кӗнисем: «Христос чӗрӗлнӗ», — тенӗ. Анчах та ытларах ӗлӗкхи йӑла юлнӑ тӑрӑх: «Инке, пире ҫӑмарта пар. Пире ҫӑмарта памасан чӑххусене тӑмана тытать», — тенӗ. Ҫӑмартасене хӑш-пӗрисем ҫӗнӗ йӑлапа сӑрланӑ.

Ҫӑмарта паракансем те каламасӑр хӑварман. «Эй Туррӑмӑр! Ҫак ачасене сывлӑхне малашне пиллесе пар! Пусарлӑх чӗпписем пек йышлӑ пулччӑр, салтак пек ҫирӗп пулччӑр!» — теҫҫӗ тӗне кӗричченхи йӑлапа.

Ҫӑмарта пӗсернӗ-сӑрланӑ чухне кил-ҫурта тӗтӗреҫҫӗ.

Аслӑ Калӑм (Мӑнкун) кунӗ ҫанталӑк ӑшӑ тӑчӗ. Каччӑсем ял варрине таканкки вырнаҫтарчӗҫ. Ҫӗр лайӑх типсе ҫитнӗ. Ҫамрӑксем мӑшӑрӑн-мӑшӑрӑн таканкки ҫинче ярӑнаҫҫӗ. Хрести хӑй тӗртсе ҫӗленӗ ҫӗнӗ кӑвак кӗпепе, шурӑ чӗрҫитти ҫыхнӑ. Вӑл ӑна пит ӗ килӗшет.

— Хрести, эсӗ паян яланхинчен те хитререх, ирӗксӗрех сана юратас килет, — терӗ Афанасий Егорович Хрести ҫине пӑхса.

— Куҫ умӗнчех ан кул-ха эсӗ, Ахванеҫ, — терӗ те Хрести вӑтанчӑклӑн пуҫне чикрӗ.

— Хрести, атя, халь пирӗн таканкки ҫинче ярӑнмалла.

— Эсӗ пит хытӑ ан ярӑнтар. Эпӗ хӑратӑп. Ҫӳле кайнӑ вӑхӑтра пуҫ ҫаврӑннипе ӳкме пултаратӑп.

— Эпӗ хытӑ ярӑнтармӑп.

Акӑ вӗсем иккӗшӗ таканкки пускӑччи ҫине тӑчӗҫ те майӗпен ярӑнма тытӑнчӗҫ. Ҫапла вӗсем хытах ярӑнма тытӑнчӗҫ те:

— Хытӑ ан ярӑнтар, Ахванеҫ, терӗм-ҫке сана. Хуллентерех ярӑнар. Ҫӳле кайсан хӑратӑп.

Ярӑнма чарӑннӑ хыҫҫӑн та вӗсем пӗрле пулчӗҫ.

Ҫамрӑксем каҫхине те пӗрле пулма калаҫса килӗшрӗҫ.

Каҫхине калаҫса килӗшнӗ ҫӗрте Афанасий Егоровичпа Хрести тӗл пулчӗҫ. Каччӑ хӗре тӳрех ыталаса ҫӗклесе илчӗ. Вӗсен тутисем пӗрлешеймерӗҫ. Хрести чуп тума памарӗ.

— Юрататӑп эпӗ сана, Хрести.

— Эпӗ те сана юрататӑп.

Часах ҫамрӑксем пӗр ҫӗре пухӑнчӗҫ. Ташӑ, юрӑ янраса тӑрать. Микуль шӑхличӗпе тӗрлӗрен кӗвӗ калать.

Вӑййсем хыҫҫӑн Афанасий Егорович Хрестие килне ӑсатрӗ. Вӗсен умне ҫитсен Афанасий Егорович Хрестие ыталаса илсе хӑй ҫумне чӑмӑртарӗ. Чуп тума хӑтланчӗ те, хальхинче Хрести чуп тума памарӗ.

— Чуп тума юрамасть вӑхӑт ҫитмесӗр.

— Хӑҫан вӑхӑт ҫитет?

— Пӗрлешсен...

Каччӑ Хрестие икӗ хулӗнчен тытрӗ те тахҫанччен ун ҫине шӑтарасла пӑхса тӑчӗ.

— Юрататӑп-ҫке эпӗ сана, Хрести.

— Ман ҫине кун пекех ан пӑх-ха, вӑтанатӑп.

— Эсӗ маншӑн чи хитри, чи лайӑххи. Эпӗ сана нихӑҫан та пӑрахас ҫук. Сансӑр пуҫне эпӗ пурӑнаймастӑп.

— Темӗн-ҫке, юрататӑн-ши?

— Атя, Хрести, пӗрлешетпӗр. Килӗшетӗн-и манӑн юратнӑ мӑшӑрӑм пулма?

— Мана качча илесех тесен, йӗрки пур. Малтан евчӗ яр чӑвашсен йӑлипе.

Ваттисен кунĕ хыççăн ытларикун Афанасий Егорович Максăма евчĕ пулма ыйтрĕ.

Юнкун вара Максăмпа арăмĕ, Афанасий Егорович хăй Хрести амăшĕ патне кайрĕç.

Хрести амăшĕ малтан килĕшмен пек пулчĕ. Хрестие чĕнсе илчĕ.

— Хрести, Афанасий Егорович сана çураçасшăн. Килĕшетĕн-и унăн мăшăрĕ пулма?

Хрести хĕрелсе кайрĕ. Пĕр вăхăт хушши чĕнмесĕр тăчĕ.

— Пиртен тухнă йăла мар. Турри çапла хушнă. Каччăпа хĕр çитĕнсе çитсен пĕрлешни аван. Хăçан та пулин пурĕпĕр çемье çавăрмалла. Çырлана пиçсе çитсен татаççĕ.

— Килĕшетĕн-и, Хрести, Афанасий Егоровичпа пĕрлешме? Эпĕ ирĕксĕрлеместĕп. Иксĕр пĕр-пĕрне килĕштеретĕр, юрататăр пулсан, эпĕ хирĕç мар. Эпĕ сан телейне хирĕç каймастăп.

— Анне, килĕшетĕп Ахванеç мăшăрĕ пулма.

— Манăн пĕртен-пĕр хĕрĕм. Пĕччен юлсан та... Ялан качча каймасăр пурнăç çук. Телейӳ пултăр.

— Амăшĕ, эпир сана пăрахмăпăр, пулăшса пырăпăр, — терĕ Афанасий Егорович.

Туйне çимĕкре тума калаçса килĕшрĕç. Туйĕ, йăла тăрăх, Микушкелĕнче пулмалла.

Мăнкун эрни хыççăн пĕтĕм ял сухана, акана тухрĕ. Сухаларĕç, сӳрерĕç, акрĕç. Сухалама лашасем кӳлсе акапуçпе сухалаççĕ. Кашни хăйĕн ани çинче ĕçлет. Акма вара кунтă çине вăрлăх тырра ярса алăпа сапса çӳреççĕ. Хăйĕн çĕрне Хрести хăех сухаларĕ, сӳрерĕ. Амăшĕ вара алă вĕççĕн акрĕ.

Афанасий Егорович яланхи пекех шкултa ачасене вĕрентрĕ. Вырсарникун вăл та Хрестие пулăшма вĕсен ани çине пычĕ. Кунĕпех сухаларĕ. Ытти кунсенче уроксем хыççăн вăрмана çӳрерĕ. Шкул валли пурасем тутарттарчĕ. Çав вăхăтрах Хрести патĕнче те пулма вăхăт тупкаларĕ. Мăнкун иртнĕ хыççăн Аслă типĕ тытăнать. Нумайăшĕ вырăссен тĕнне хăнăхса çитеймен пирки типĕ тытмаççĕ. Вăл вăхăтра çамрăксем каçхине урама тухмаççĕ. Пĕрмаях ĕç тӳр килет.

Хрестипе амăшĕ кĕркунне ыраш та акса хăварнă. Вăл аванах хĕл каçнă.

Çур акине çуллахи Микулаччен вĕçлеççĕ. Микулара çамрăксен уявĕ пуçланать. Вăл вара Питравччен пырать. Юлаш-

ки виçĕ вырсарникунне уява кăнтăрла та тăваççĕ. Çамрăксем кашни каç карталанса юрлаççĕ.

Часах шкул валли тунă пурасене турттарма тытăнчĕç. Кунти шкул 1914 çул, Афанасий Егоровича вăрçа илнĕ хыççăн, çунса кайнă пулнă. Тепĕр çул вара Андрианов купса хăйĕн виçĕ пÿлĕмлĕ çуртне шкул валли сутнă. 1918 çул пуçламăшĕнче, Афанасий Егорович кунта вĕрентме тытăннă вăхăтра, шкулăн пурĕ те пĕр шкап, вăтăр алтă парта, 2 класс доски, пĕр сĕтел, пĕр витре, икĕ кружка, шыв валли пĕр бак пулнă. Шкулăн глобус та пулман. Шкул вулавăшĕнче 269 кĕнеке шутланнă. Шкул çурчĕ те кивĕ пулнă. Шкулта пурĕ 55 арçын ача, 4 хĕрача вĕреннĕ.

Афанасий Егорович шкула çĕнĕ тăвас тесе çÿренĕ вăхăтра уесран çĕнĕ шкул тума çичĕ пин тенкĕ уйăрса параççĕ. Граждан вăрçи тытăнни те ĕçе чăрмантарнă. Çапах та ватă çынсем кăна пурасем тунă çĕрте ĕçленĕ. Пур вăйпитти çын фронтра. Германипе те вăрçă чарăнман-ха.

Çу уйăхĕнче шурă чехсемпе шурă гвардеецсем хĕвел анăçнелле хăвăрт тапăнса килеççĕ. Сызрань хулине те шурă чехсем тытса илеççĕ. Мулекелĕнче те власть улшăнать. Советсене сирпĕтсе антараççĕ. Влаçрисем тарса ĕлкĕреççĕ. Мулекелĕнче шурă чехсем хуçаланни сисĕнсех каймасть. Тайтакра вара вĕсем аванах хуçаланнă.

Сызраньте Владимир Краснова уесри çĕр пайĕн ертÿçине суйласа лартнă пулнă. Вăл шурă чехсенчен тарса хăтăлнă. Владимир Краснов Тайтакра çуралса ÿснĕ чăваш çынни. Тайтака шурă чехсем систĕксĕр пырса кĕрсе халăхшăн хастар ĕçлекенсене, ял Советĕнче ĕçлекенсене тытса пурĕ вун пĕр çынна персе пăрахаççĕ. Персе вĕлернисен хушшинче ял Совет председателĕ Андреев Елизар Петрович, питĕ тăрăшуллă хресчен Изевлин Семен Егорович пулнă. Иванов Прохор Герасимович, питĕ тăрăшуллăскер, ял Совет секретарĕ хĕрарăм тумĕ тăхăнса шурă чехсенчен тарса ĕлкĕрет. Каярахпа вăл Гай ертсе пыракан отряда хутшăнса шурă чехсене хирĕç кĕрешет.

Афанасий Егорович Микушкелне кайса хăй авланасси çинчен ашшĕпе амăшне, тăванĕсене пĕлтерет. Çакăн хыççăн Микушкелĕнче те туя хатĕрленме тытăнаççĕ.

Акă Çимĕк те çитрĕ. Ыран Çимĕк тенĕ кун Афанасий Егорович Микушкелне кайрĕ. Унтан туйпа мăшăрсăр темиçе çынпа Мулекелне хĕр илме килмелле. Вĕсемпе туй пуçĕ те килет. Çимĕк кунĕ Афанасий Егорович ашшĕпе амăшĕ патĕнче туй халăхĕсем пуçтарăнчĕç.

Мулекеленче те хĕр туйĕ пуçтараннӑ. Унта хайне туй кĕрлет. Микушкеленче туй пуçлӑхĕ туя пуçларĕ:

*Чĕрик те марик темесессĕн*
*Кĕлте урăписем, ай, хускалмĕç.*
*Атьăрах та атьăрах темесессĕн*
*Пирĕн туй халăхсем, ай, хускалмĕç.*
*Атьăрах та каяр та, ай, вăрмана*
*Юманĕнчен хуйăрне, ай, уйăрма.*
*Атьăрах та каяр хăта патне*
*Амăшĕнчен хĕрне те, ай, уйăрма.*

Çакăн хыççăн туй юррине шăрантарма тытăнчĕç. Ĕçкелесе çикеленĕ хыççăн туй пуçĕ, Афанасий Егорович хăй, пурĕ вун пĕр çын лашасемпе Мулекелне хĕр илме кайрĕç.

Мулекеленче хĕрарăм туйĕ хапха умне тухса тăнă. Хăнасене кĕтсе тăраççĕ.

Акă каччӑ енчисем те çитрĕç. Мăн кĕрӳ, вăлах туй пуçĕ, мала тухса хăйĕн сăмахне пуçларĕ:

*— Салам-алик, тавсие!*
*Ĕçетре, çиетре, вылятра, кулатра,*
*Пире хапăл тăватра?*
*Хапăл тусан, виçĕ утăм малалла,*
*Хапăл тумасан, виçĕ утăм каялла.*
*Хапăл-и, ватти-вĕттисем?*
*Асăнни çичĕ кун, тухни виçĕ кун.*
*Асăннă кун тухаймарăмăр,*
*Тухнă кун çитеймерĕмĕр:*
*Утсем ырхан пулчĕç,*
*Çулсем хура пулчĕç,*
*Айăп тумастăр-и, ватă-вĕтĕсем?*
*— Хапăл тăватпăр, айăп тумастпăр!*
*— Эпир çак хăта патне*
*Çĕрпе пĕлĕт хушшинчен килтĕмĕр.*
*Çĕрпе пĕлĕт хушшинчен килнĕ чух*
*Утмăл çухрăм сĕм вăрман урлă каçрăмăр,*
*Утмăл çухрăм çеçенхир тăрăх тухрăмăр.*
*Утмăл çухрăм сĕм вăрман урлă каçнă чух*
*Пĕр пăлан тĕл пултăмăр,*
*Ун мăйраки вĕçĕсем ылтăн,*

*Чěрни вěçěсем кěмěл,*
*Хÿри вěçěсем кăлкан.*
*Мăйракипе шăйăрать — йěр тăвать,*
*Хÿрипеле якатса пырать.*
*Эпир çавăн çулěпе килтěмěр.*
*Йышăнатăр-и, ватти-вěттисем?*
*— Йышăнатпăр, йышăнатпăр!*
*Малалла иртěр.*

Хěр енчисем килнисене сăра ěçтерессě. Кăштах хăналаннă хыççăн каччине хěр патне илсе пыраççě.

Каччă хěре алăран тытса çавăтса тухать те лаша лавě çине иккěшě юнашар лараççě.

Çапла туй халăхě ялтан тухса Микушкелне çул тытать. Хěр енчисем те вěсен хыççăн пыраççě. Хěр çуммисем те хěрпе пěрле лав çинче пыраççě. Çапла Микушкелне кěнě чухне туй халăхě янраттарса юрлама тытăнчěç. Киле çитсенех хěре пěркенчěк айне лартрěç. Туй халăхě юрлать:

*Чипер кăна ача та Ахванеç пур,*
*Чипер кăна кинěмěр Хрести пур...*

Туй кěрлесе иртнě хыççăн çěнě хăна ěçки пулчě. Малтан çěнě çын яшки çирěç. Эрнерен Мулекелěнче çěнě хăна ěçкине иртторчěç.

Самарпа Сызрань хулисем шурă чехсен аллинче нумаях тытăнса тăраймарěç. Гай ертсе пыракан отряд Сызране, шурă чехсемпе шурă гвардеецсене хăваласа ярса, ирěке кăларчě. Часах Самара та ирěке кăларчěç. Пур çěрте те çěнěрен Совет влаçě йěркеленчě. Мулекелěнчи ял Совет председателě пулма Алексей Русскова, секретаре Федор Семенович Ятаева суйласа лартрěç.

1918 çул кěркунне Мулекелěнчи шкула та хăпартса лартса ěçе ячěç. Афанасий Егорович валли те шкул çумěнчех çěнě çурт çěкленсе ларчě. Ачасем те çěнě шкулта вěренме тытăнчěç.

Кěркунне Германипе вăрçă та пěтрě. Германие çěнтернипе Пěрремěш тěнче вăрçи вěçленчě. Апла пулсан та граждан вăрçи пырать-ха. Совет Раççейне хирěç ют çěршывсем хутшăннипе интервенци тытăнчě. Пуян капиталистсемпе улпутсем хăйсен влаçне каялла илесшěн çапăçаççě.

1919 çулхи пуш уйăхěнче çанталăк çур енне сулăннине пăхмасăр вăхăт-вăхăт çил-тăман алхасать. Анчах та вăл нумаях пымарě. Ăшăтса ячě. Çанталăк хěвеллě те ăшă тăрать. Çав кун-

сенчен пěринче Мулекелěнче ял варринче ларакан шкул умне аçам тăхăннă ялти çынсем пуçтарăннă. Вěсен хушшинче Кушникран килнисем те пур. Кушник ялě Мулекелěнчен инçе мар, юнашарах ларать. Вăл пысăках мар вырăс ялě. Пухăннисене хирěç Афанасий Егорович мăшăрě Хрести (Христина Ксенофонтовна), хитре сăн-питлě те йăрăс пÿллěскер, тухса тăчě.

— Мěн пулнă? Мěншěн çынсем шкула пуçтарăнаççě? Мěнле пуху пулмалла? — тěлěнсе ыйтрě Христина Ксенофонтовна кунта пухăннă арçынсенчен.

— Ку хěрарăм ěçě мар, Христина Ксенофонтовна, упăшкуна халех чěнсе тух! Хăвăртрах! — кăнттамăн татса ларě вăтам çулхи арçын.

Христина Ксенофонтовна хăйсен хваттерне кěрсе кайнă вăхăтра шкулти пěр класа çăпатасем сырнă сухаллă çынсем хěрěхе яхăн кěчěç. Вăл вăхăтра Афанасий Егорович ачасене вěрентетчě. Класа кěнěскерсем Афанасий Егоровича, вěрентнě çěртен чарса, ачасене тулалла кăларма хушрěç. Учитель вěсене урока кун пек чарма юрамасть тенине пăхмасăр пухăннисем ачасене тулалла хăваласа кăларчěç. Килěсене кайма хушрěç. Пěр пилěк минут иртсен класа вăтам пÿллě те кěрнеклě, çÿçне илемлě кастарнă, кěскерех усиллě, тăрăхларах питлě арçын кěрсе тăчě. Унпа пěрле Афанасий Егорович, класран тухса ачасене килěсене кайма хушрă хыççăн, класа кěчě.

— Афанасий Егорович, мěншěн эсě иконсене класран илсе тухса пăрахрăн? — сассине хăпартса хыттăн ыйтрě сарлака хулпуççиллě тěреклě арçын Гаврилов.

Афанасий Егорович çухалса каймасăр кăна майěпен çапла тавăрчě:

— Эпě Совет влаçне хирěç каймастăп. Илме хушрěç — илтěм. Иконсене эпě ывăтса яман. Вěсем кунтах выртаççě. Советсен декречě тăрăх халь чиркěве патшалăхран, шкула чиркÿрен уйăрнă.

— Антихристсем! Мěнле пулать вăл турăсăр! Çылăха пěлěр! — кăшкăрма тытăнчěç хăш-пěрисем.

Учитель мěн пулассине туйса илчě.

— Эсир ан шавлăр-ха, иконсем таçта мар. Халех илсе кěрсе хăйсен вырăнне хуратăп, — тесе Афанасий Егорович шкулти пěр пěчěкрех пÿлěмрен Тěлěнтермěш Микулай ятлă йывăç ико-

на илсе кӗрсе арҫынсене тыттарчӗ. Виҫҫӗн ӑна хӑйӗн ӗлӗкхи вырӑнне вырнаҫтарса лартрӗҫ.

— Совет влаҫӗ, большевиксем иконсене шкулти классенчен кӑларса сирпӗтме хушмаҫҫӗ. Асту, Афанасий Егорович, коммунистсен хыҫҫӑн ан кай! — асӑрхаттарчӗ ӑна чиркӳ старости Илюхов.

Сӗтел умне ял старости — ял Совет председателӗ Русков Алексей тухрӗ. Пухӑннисем ҫине пӑхса илчӗ те хӑйӗн сӑмахне калама тытӑнчӗ.

— Халь пирӗн пата вулӑсран, Усинскран ҫынсем килчӗҫ. Вӗсем пире таврари лару-тӑрупа паллаштарчӗҫ. Усольере, Усинскра, вулӑс центрӗнче Троицкра, ытти ялсенче те коммунистсене арестлеҫҫӗ. Халь кунта власть пур ҫӗрте те мужиксен аллине куҫать. Нумай ҫӗрте хресчен ҫарне туса хунӑ. Власть ҫарсӑр пулма пултараймасть. Ҫак тӗллевпе пире пуҫтарӑнма хушрӗҫ. Ҫирӗмрен тытӑнса хӗрӗхе ҫитнӗ арҫынсем пурте хресченсен ҫарӗнче пулмалла. Урӑхла каласан, халӑх ҫарӗнче пулмалла. Ҫавӑн пек хушрӗҫ пире. Тӗп штаб Новодевичье ялӗнче вырнаҫнӑ. Пирӗн хамӑрӑн штаб Усинскра вырнаҫнӑ.

Хресченсенчен пӗри хирӗҫ калаҫма тытӑнчӗ те ӑна ҫавӑнтах кӑшкӑрса тӑкрӗҫ. Урӑх никам та хирӗҫ калаҫакан пулмарӗ.

Вулӑсрисем, Усинскран килнисем, тӳрех ял Советне кӗнӗ те Русковпа Ятаева арестленӗ. Персе вӗлерессипе хӑратнӑ хыҫҫӑн председательпе секретарь иккӗшӗ те вӗсем майлӑ ӗҫлеме сӑмах панӑ хыҫҫӑн иккӗшне те ирӗке янӑ. Хӑйсен майлӑ ӗҫлеме, коммунистсене хирӗҫ кӗрешме тупа тутарттарнӑ. Ятаев ҫине тӑрсах ӗҫе тытӑннӑ, халӑха шкула пухӑнма хушнӑ.

Афанасий Егорович кунта ыррине кӗтме ҫук тесе, унран ҫар пуҫне тӑма ыйтнипе хӑй нимӗҫсемпе австро-венгрсене хирӗҫ ҫапӑҫнӑ вӑхӑтра интендант пулни ҫинчен асӑнчӗ. Кунта Гаврилов хуҫаланнине, хӑйне пуҫлӑх пек тытнине кура ҫапӑҫу пулас пулсан хӑйӗн фронтри ӗҫне, интендант ӗҫне, тытӑнасси ҫинчен шантарчӗ. Урӑхла май ҫукине чухлать вӑл. Кунта кӑшт чееленни те кирлӗ.

Ятаев хыҫҫӑн штабран килни те хресчен ҫарне йӗркелеме чӗнсе каларӗ.

Ҫапла вара пухӑннисем хресченсен ҫарне хутшӑнма сӑмах парса килӗсене саланчӗҫ. Ыран вӗсем пухӑнса хресченсен ҫарне ялта йӗркелемелле иккен. Ҫынсем салансан Афанасий Егорович хыпӑнса ӳкрӗ.

— Ку вăл вăхăтлăха кăна пулма пултарать. Эпĕ чухлатăп. Колчак пирĕн паталла тапăнса килет. Кунта патша çарĕн офицерĕсем, помещиксемпе улпутсен ачисем хресченсен çарне йĕркелеме тытăннă. Вĕсен планĕпе «хресченсен çарĕ» Сызране тытса илсе Колчака кĕтсе илмелле пулнă. Сызране илнĕ хыççăн Самар çине каймала пулнă. Ун хыççăн малалла кайса Колчак çарĕпе хутшăнмалла иккен. Коммунистсем турра ĕненекенсене пурне те персе вĕлереççĕ тесе суя сăмах сарнă, ун пирки листовкăсем çырса та халăхсем хушшинче салатнă. Эпĕ Совет влаçне хирĕç каймастăп. «Ăçта та пулин пытанмалла пулать манăн», — терĕ вăл хăйĕн юратнă мăшăрне Хрестие.

М.Н.Андреев комиссарпа ял Совет секретарĕнче ĕçлекен Ф.С.Ятаев çĕрле Афанасий Егоровичăн хваттер алăкне пырса шаккарĕç. Афанасий Егорович вĕсене хирĕç тухсан, çĕрлехи хăнасем ăна вулăсран, Троицкран, килнĕ приказпа паллаштарчĕç. Вырăнта хăвăрт кăна хресченсен отрядне йĕркелеме хушнă. Вара çав отряд Усинскра йĕркеленĕ отрядпа пĕрлешсе, хĕçпăшалланса, Сызрань çине каймалла, гарнизона тытса илмелле. Çак кунсенче Колчак Самар хулине илсе Сызрань çине килмелле. «Хресченсен çарĕ» Колчака кĕтсе илмелле.

— Афанасий Егорович, эпир сирĕн патăра тата канашлама килтĕмĕр. Эсир пире йывăр вăхăтра яланах ырă сĕнÿсемпе пулăшнă. Хальхинче те эсир пулăшасса шанатпăр хăвăрăн сĕнĕвĕрпе. Эпир темле иккĕленетпĕр. Пире темле ухмахла ĕçе явăçтарасшăн. Кун пек пăтăрмах пире кирлех-ши? Кама кирлĕ кун пек пăтăрмах! Нимĕн те чухлаймастпăр.

— Кун пек пăтăрмахла ĕç никама та кирлĕ мар, паллах. Нимĕнле хресчен çарĕ те çук. Пире пĕр никама кирлĕ мар хăрушă ĕçе явăçтарасшăн. Большевиксемпе коммунистсем пĕрех вĕсем. Вĕсем коммунистсемпе большевиксене пăтраштараççĕ. Пирĕн пуçа çаврасшăн тăрăшаççĕ. Астăвăр: Ленин, Совет влаçĕ, большевиксем, хĕрлĕармеецсем, коммунистсем — пурте пирĕншĕн туссем, коммунистсем тăшмансем тесе хăвăрăн пуçăрсене ан çаврăр. Колчак Урала çитнĕ, Самара çитме те инçех мар, кунталла çывхарса килет. Вĕсем ĕç халăхĕн тăшманĕсем. Вĕсене кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Çав кăна. Пирĕн мĕнле те пулин хресченсен çарне йĕркелес ĕçре чăрмантармалла. Хресченсен хушшинче вĕсен çарне хутшăнмалла марри çинчен халăха ăнлантармалла.

— Пирĕн мĕн тумалла? Ялтан тарса каймалла-и? Ун пек тусан вĕсем пирĕн çемьесене асаплантарма пултараççĕ.

— Ниçта та тармалла мар. Сире командирсем вырăнне лартнă. Эсир вырăнтах пулмалла. Аслă командирсем сисиччен эпĕ каланине халăха вăрттăнтарах ăнлантармалла. Пирĕн ял çыннисем вăл хăрушă ĕçе ан хутшăнччăр. Сызране те хирĕç каймалла мар. Акă курăр-ха, вăл пăтăрмах часах иртет. Тен, нумайăшĕ çакăншăн çирĕп хурав тытма тӳр килет. Каçармалла мар пысăк йăнăш туса хума пултараççĕ. Пуçтарăнса Сызрань çине каяс пулсан та Хĕрлĕ Çар начар хĕç-пăшалланнă хресченсен ушкăнне ним те мар çĕмĕрсе тăкать, — ăнлантарчĕ вĕсене Афанасий Егорович.

— Ку приказпа мĕн тумалла? — ыйтрĕ Андреев комиссар.

— Ку приказа пурнăçламалла сăмахпа кăна. Халăха хистемелле мар. Пурнăçлама каллех — мĕнле приказ. Ку приказ халăх майлă мар, халăха хирĕçле приказ. Хресченсен çарне тума та хыпаланмалла мар. Кунта чеерех пулмалла.

Çапах та тепĕр кун Гаврилов çине тăнипе Андреев комиссарпа иккĕш Мулекелĕнче вăтăр винтовкăпа, сунар пăшалĕсемпе, сенĕксемпе хĕçпăшалланнă хресченсене пĕр аллă çын пуçтарма пултарчĕç. Андреев, Афанасий Егорович каланисене те аса илчĕ пулин те, Гаврилов хушнинчен иртеймерĕ. Пухăннисене Гаврилов Кушник ялне ертсе кайрĕ. Хресченсен çарне хутшăнакансем валли кунта вăхăтлăх хваттерсем те тупса хунă. Хваттере ярас мар текенсене персе вĕлерессипе хăратнă. Мулекел хресченĕсене вуншарăн уйăрса вĕсенчен пĕрне отделени командирĕ турĕç. Çапла вара пилĕк ушкăн, кашни ушкăнăн хăйĕн командир пур. Уйăрса хунă кашни хваттере 3—4 çын тӳр килет. Кашни уйăрнă ушкăна виçшер хваттер.

Тепĕр кун çанталăк хĕвеллĕ те ăшă тăчĕ. Çуртсем çинчен усăнса тăракан пăр татăкĕсем тăрăх тумла юхать. Хĕвел çутине кура юр çинче те тĕрлĕ тĕслĕ çутă пĕрчисем сапнăн курăнать. Вăхăт-вăхăт улăм витнĕ çуртсем çинчен усăнса тăракан пăр татăкĕсем те татăла-татăла ӳкеççĕ. Çуркуннехи уçă сывлăш та çансурăма çăмăллатса янăн туйăнать. Кăнтăр енчен тин кăна вĕçсе килнĕ кайăксем йывăççем çинче хăйсен юррисене шăрантараççĕ. Топольсем çинче кураксем тăрмашса йăва çавраççĕ. Ăшша пула çерçисем те пĕр-пĕринчен ăмăртмалла чĕвĕлтетеççĕ. Çул çинче юр сĕлтĕшленме пуçланă. Ку вăл кăнтăрла тĕлнелле па-

лăрма пуçлать. Мулекел хресченĕсем хĕрринчи урамри çуртсем çумĕнче хĕвел ăшшипе хĕртĕнсе лараççĕ. Мĕнле те пулин приказ пуласса кĕтеççĕ. Юнашарах Сызраньтен Усольене каякан çул выртать. Хĕвел ăшшинче хĕртĕнсе ларакан Мулекел хресченĕсене малалла мĕн кĕтет-ши? Пĕри те чухлаймасть. Тен, хăшне-пĕрне вилĕм те кĕтет пулĕ.

Максăмпа Матви кумлăскерсем те кунтах. Вĕсем аптраса çитнипе пÿрт умĕнче хĕртĕнсе ларакансенчен уйрăлчĕç те килĕсене кайма тухрĕç. Ял вĕçне çитсен иккĕленсе тăчĕç те килĕсенех каяс терĕç.

— Мĕнле пек сана, Максăм кум, пире кунта килнĕшĕн айăплама пултарĕç вĕт?

— Эпĕ те çавăн пек шутлатăп.

— Мĕншĕн çав Гаврилов сăмахне итлесе килтĕмĕр-ши кунта?

— Хăй вăл пире йĕкĕлтесе кунта ячĕ те, хăй таçта кайса çухалчĕ. Айăплассинчен вăлах пăрăнса юлĕ-ха.

— Кунта нумаях тытăнса тăрар мар, килех каяр. Тата тем те сиксе тухма пултарать.

— Пирĕн килмелле те марччĕ кунта.

Çапла калаçкаласа тăнă хыççăн иккĕшĕ те Мулекелнелле утрĕç. Çул тăршшĕпех иккĕленсе, ÿкĕнсе пычĕç.

Кунта вара кушниксемпе мулекелсене çирĕп хушма пултаракан, хăйне командир текен çын та тупăнчĕ. Вăл Кушник вырăсĕ Прохоров. Мулекелĕнчен килнисенчен хăшĕ-пĕри кăна вырăсла кăштах чухлать. Кушниксен хушшинче вара, вырăссем пулсан та, чăвашла аванах калаçма пултаракансем пур. Хăйне командир тесе пĕлтернĕ Прохоров пухăннă çынсемпе, Усинска кайса, хресченсен çарĕпе пĕрлешсе, Сызрань çине кайма хатĕр пулмалли çинчен пĕлтерчĕ. Вăл каланине чăвашла куçарса паракансем те тупăнчĕç.

Хăйне командир тенĕскер мулекелсенчен вунă çын илсе Сызраньтен Усольене каякан çул çине заставăна тăратрĕ. Пурин аллинче те винтовка. Анчах та вĕсем Прохоров пăрăнсанах хĕрринчи çуртăн тăпрасĕ çине кайса ларчĕç те, хĕвел ăшшинче хĕртĕнсе, чĕлĕм туртма тытăнчĕç. Командир хушнă тăрăх, вĕсен çул çинчен нихăш еннелле те никама та иртттермелле мар. Ку вырăна фронт вырăнне шутлама хушнă.

Акă кăнтăрла çитеспе Сызрань енчен икĕ пăнчă асăрхаççĕ. Часах пăнчăсем пысăкланса кунталла куçнă май юланутçăсем пулни палăрма пуçларĕ. Хĕрлĕ армеецсем килеççĕ иккен. Заставăра — хумхану. Арçынсем кунта иккĕмĕш кун ĕнтĕ ĕççĕр тăраççĕ.

Акă ĕç тупăнчĕ те. Хĕрлĕармеецсем хĕрринчи çурт тăпрасĕ çинче чĕлĕм туртса ларакансем патне пĕр шиксĕр пырса тăчĕç. Вĕсем чĕлĕм туртакансене сывлăх суннă хыççăн вĕсенчен чĕлĕм туртмалли ыйтрĕç. Малалла хăйсемпе мĕн пулассине чухлама та пултарайман. Çавăнтах Кушник çынни Иван Титюк тата мулекелсем темиçе çын, Титюк хушнипе, хĕрлĕармеецсене хăйсен лашисем çинчен туртса антарчĕç те винтовкисене туртса илчĕç.

— Хĕрлĕармеецсем, хĕрлĕ коммунистсем, вăрăсем, халăха çаратакансем! Хĕнĕр вĕсене! — кăшкăрса ячĕ Иван Титюк.

— Ак сире туртмалли, хĕрлĕ коммунистсем! — кăшкăрашса мулекелсем вĕсене хĕнеме тытăнчĕç.

— Мĕншĕн хĕнетĕр пире? Эпир те сирĕн пекех çынсемехçке! Эпир хресченсем майлă тăраканскерсем. Пустуя ан хĕнĕрха пире, — йăлăнма тытăнчĕç хĕрлĕармеецсем.

— Эсир вăрă-хурахсем, коммунистсем майлăскерсем! Коммунистсем халăха хирĕç пыраççĕ. Хытăрах хĕнĕр вĕсене! — кăшкăрса хĕтĕртсе тăрать Иван Титюк, хăй айккинче пăхса, хушса кăна тăрать.

Хĕрлĕармеецсем урса кайнă арçынсене йăлăннине, тархасланине ăнланакан та çук.

— Ырă çынсем пулăр-ха! Мĕншĕн пустуя хĕнетĕр-ха? Сирĕн умăрта пирĕн нимĕнле айăпăмăр та çук! Пире нумай пулмасть кăна салтака илчĕç. Атăл леш енчен эпир, Выселкăран.

Анчах та урса кайнă хресченсем вĕсем йăлăннине итлес темерĕç.

— Штаба илсе кайăр вĕсене! — кăшкăрчĕ каллех Титюк.

Хресченсем вара вĕсене чышкаласа вырăнти штаба илсе кайрĕç. Вĕсене кунта, Кушникра, хăйне командир тенĕскер — Прохоров допрос тума тытăнчĕ. Вĕсене кунта ял хавалĕсем çинчен пĕлтерме янă. Пăлхав çĕклекенсем пур-и? Анчах та разведчиксем ăна-кăна та, сыхланма та пĕлмен. Прохоров вĕсенчен урăх нимĕн те ыйтмарĕ. Тĕрĕссипе, вăл вĕсенчен мĕн çинчен ыйтса пĕлмеллине те пĕлмерĕ. Вара вăл хăйĕн аллине ирĕке ячĕ. Вĕсене, ахаль те юнланса пĕтнĕскерсене, хĕнесе алли ывăннă хыççăн аптăрипе ăçтан килчĕ унтан чикме тытăнчĕ. Çакăн хыççăн Мулекелсенчен виççĕшне чĕнсе илчĕ те хăй патне:

— Ăса шывĕ çинче Кушник кĕперĕ пур, ун çумĕнче — вакă. Çав вакка чăмтарăр вĕсене! Ан тив унта вĕсем хăйсен çăварĕсемпе пулă тытчăр!

Чӗнсе илнисем те хӗрхеннӗ пек пулнипе, те ҫухалса кайнипе пӗр нимӗн чӗнмесӗрех пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илчӗҫ те вырӑнтан та хускалмарӗҫ.

— Мӗн эсир эпӗ каланине ӑнланмарӑр-и, чӑваш ухмахӗсем! Куҫӑрсене чарса пӑрахрӑр! Манӑн приказа пурнӑҫламасан, хӑвӑра вӗсем вырӑнне вакка чӑмтаратпӑр! Халех пурнӑҫлӑр приказа! Чӑмтарӑр вӗсене вакка. Шыва тумтирпе кӗмеҫҫӗ. Ҫийӗнчи тумтирӗсене, аттисене хывса илӗр! Валех, куҫарса пар вӗсене ман приказа!

Ҫапла вара мулекелсем виҫҫӗн хӗнесе вӑйсӑрлатнӑ, юнланса пӗтнӗ хӗрлӗармеецсене Ӑса шывӗ ҫине илсе ҫитерчӗҫ те вакӑ умне пырса тӑратрӗҫ. Вӗсем вакӑ умне пырса тӑрасшӑн пулмарӗҫ. Вара урса кайнӑ виҫӗ хресчене пулӑшма тата виҫҫӗн чупса пычӗҫ. Хӗрлӗармеецсене кунта чышкаласа илсе килнӗ пекех, вакӑ умне тӗрткелесе пырса тӑратрӗҫ.

Акӑ кӗпер. Юнашарах вакӑ. Хӗвел хӗртсе пӑхать. Инҫех те мар хӑвалӑх. Тополь шӑрши те кӑкра темле уҫӑлтарса ярать. Ҫуркунне хурт-кӑпшанкӑ та чӗрӗлет. Йывӑҫсем те хӑйсен папкисене ҫурса часах ешӗш тум тӑхӑнма тытӑнӗҫ. Кӗрнеклӗ те илемлӗ ҫурхи ҫут тӗнче! Ҫулталӑкӑн чи илемлӗ вӑхӑчӗ ҫывхарса килет. Кайӑк-кӗшӗк те ҫуркуннене ниссе савӑнать. Камӑн вилес килтӗр ҫакӑн пек вӑхӑтра!

Хӗрлӗармеецсен умӗнче пилӗк метр тарӑнӑшлӑ вакӑран шыв хуран та тискеррӗн курӑнать. Ҫурхи илеме ҫак вакӑ хирӗҫленӗ пек туйӑнать.

— Тумтирӗсене, аттисене хывса илӗр! — кӑшкӑрчӗ Иван Титюк.

Улттӑн ҫавӑнтах вӑйсӑрланнӑ хӗрлӗармеецсене салтӑнтарма тытӑнчӗҫ, аттисене те хывса илчӗҫ те вӑйпах вакӑ умне пырса тӑратрӗҫ. Вӑйлӑ алӑсене вӗсем хирӗҫ тӑраймарӗҫ. Ҫак вӑхӑтра ҫарамаслантарнӑ хӗрлӗармеецсенчен пӗри, ҫӳллӗреххи, сӑх сӑхса илчӗ те никам ӑнланмалла мар, пурпӗрех хӑтӑлаймассине сиссе, хӑй ирӗкӗпе, пӗтӗм вӑйне пухса, пӗр-ик утӑм каялла чакрӗ те хӑвӑрттӑн ярса пусса тӳрех вакка пуҫ хӗрлӗ чӑмрӗ. Сивӗ шыв ӑна ҫавӑнтах хӑй ӑшне пӗтӗрсе чикрӗ. Малалла асаплантарнине тӳсес мар терӗ пулмалла.

Тепӗр хӗрлӗармеецӗ, унран кӑшт лутрарахскер, вакка сикес темерӗ, хӑйне вакка чӑмтарас текенсем умне чӗркуҫленсе ларчӗ те йӑлӑнма тытӑнчӗ, хӑй кӑшкӑрса макрать.

— Тархасшăн ан вĕлерĕр мана! Турă пулăр-ха! Тархасласа ыйтатăп! Ярăр мана ирĕке! Командирăра иккĕшне те вакка чăмтартăмăр тесе калăр. Сире уншăн турă та каçарĕ. Çут тĕнчере эпир тин кăна пурăнма тытăннă вĕт-ха!

Ăна вакка чăмтаракансенчен пĕри хĕрхеннĕ пек пулчĕ пулас:

— Атьăр хăй ыйтнипе килĕшер, ярар ăна ирĕке. Командира иккĕшне те путартăмăр тесе калăпăр, — терĕ Милюк ятлă хресчен.

— Эсĕ мĕн, хамăра вакка чăмтарччăр тетĕн-и?! — кăшкăрса тăкрĕ ăна Куçук ятли.

Çук, хытă чĕреллĕскерсем вăл макăрса йăлăннине хăлхана та чикмерĕç, шинельне, гимнастеркине, аттисене хывса илнĕскере тата аялти кĕпи-йĕмĕсене те хывса илчĕç. Акă пуçĕ те вакка кĕчĕ. Çав вăхăтра темле майпа хăйне вакка чăмтаракансенчен вĕçерĕнчĕ те, ури çине тăрса, çара уранах пăр тăрăх чупса кайрĕ. Анчах та вăл чупса инçех те каяймарĕ — хăйĕн винтовкинчен пенĕ пуля ăна хуса çитсе ураран ӳкерчĕ. Пуля хулран лекнипе, малтан та хытă асаплантарнăскер, вăйĕ пĕтнипе, юн юхтарса, тӳрех пăр çине йăванса кайрĕ. Çын сăнне çухатнăскерсем ăна вакă патне сĕтĕрсе пычĕç те пуçхĕрлĕ вакка чăмтарас терĕç.

— Ан тивĕр ĕнтĕ, ярăр. Ан тив хăй ăçта каяс тет, кайтăр, — терĕ Милюк каллех.

— Мĕн, ху вакка сикес тетĕн-и! — кăшкăрса ячĕç ун çине.

Хĕрлĕармееца вара тытса пуçхĕрлĕ вакка чăмтарчĕç. Пăр айĕн юхакан шыв ăна та хăй ăшнелле пĕтĕрсе чикрĕ. Çапла пурнăçĕсем татăлчĕç пурнăçра нимĕнех те курса ĕлкĕреймен пĕр айăпа та кĕмен икĕ çамрăкăн.

Хĕвел катаран инçех мар пулин те çаплах хăйĕн пайăркисене пĕр тикĕссĕн сапаланă çĕртенех пĕр пĕлĕт татки ăна хупласа та илчĕ. Хĕвелĕ те çав тискер ĕç тунă çынсене урăх курас мар тенĕ пек пулчĕ. Çерçисем те чĕвĕлтетме чарăнчĕç. Çуркуннене палăртакан уçă сывлăш та кăкăра пӳлме тытăннă пек пула пуçларĕ. Каç ĕнтрĕкĕ çапнă çанталăк, хăйĕн илемне çухатман пулин те, Ăса шывĕ çинчи вакă кăна хăйĕн ăшне икĕ çамрăка çăтнă хыççăн çын вĕлерекенсенчен мĕскĕннĕн те тискеррĕн тăрса юлчĕ. Хресченсем вара хăйсен тискер ĕçне тунă хыççăн, хăйсем çине хĕрес хывса, ку вырăнтан пăрăнса кайрĕç.

— Мĕн туса хутăмăр-ха эпир? Куншăн пире çынсене вĕлернĕ хыççăн турă та каçарас çук. Питĕ пысăк çылăх ку.

Пире куншăн никам та каçарас çук. Совет влаçĕ умĕнче пысăк явап тытма тӳр килет. Тен, пире те вилĕм кĕтет, — терĕ Милюк Кушник ялне кĕнĕ май.

— Мĕн ӳкĕнсе пыратăн? Вĕсен вырăнне хамăрăн вакка чăммаллаччĕ-и? Эсĕ те çак тискер ĕçе хутшăнтăн. Халь ӳкĕнсе пыратăн. Вилнисене каялла чĕртейместĕн. Халь вăхăчĕ те çавăн пек килсе тухрĕ, — терĕ Куçук ăна хирĕç.

— Кирлĕ марччĕ ку пăтăрмахла хăрушă ĕçе хутшăнма, — хушса хучĕ пулăшма пынă виççĕмĕш хресчен Санюк. Ун хыççăн вара пурте шăпланчĕç. Яла кĕрсен те вĕсем урăх пĕр сăмах та чĕнмерĕç, чĕрисем вара хăйсен йăшкасах тăчĕç. Тен, хăйсен те пурăнмалли нумаях юлмарĕ.

Хĕрлĕармеецсене çавăн пек тискеррĕн вĕлернĕ хыпар таврари ялсене питĕ хăвăрт сарăлчĕ. Çакна илтсен Кушника кайнисене вăрçма тытăнчĕç. Çак пăтăрмаха чарса лартма ыйтса турра та кĕлтурĕç. Çак тискер ĕç тунă хыпар халăхра та ырă мар туйăм çуратрĕ. Киревсĕр ĕçе сивлеме хистет çак туйăм. «Нимĕнле хресченсен çарĕ те çук, вăл хресченсен çарĕ мар, çын вĕлерекенсен çарĕ кăна», ăнланса илнĕ пек пулчĕç хăш-пĕрисем. Çакăн хыççăн Мулекелĕнчен килнисен каялла Мулекелне кайса хăйсен килĕсене саланчĕç.

Каçхине Макçăм Матви кумĕ патне калаçса ларма кайрĕ.

— Çакăн хыççăн хресченсен çарĕ мĕнле халăх çарĕ пултăрха — енчен те хĕрарăмсене шалчи çине лартма хатĕр пулсан, арçынсене вакка пуçхĕрлĕ чăмтарсан. Кун пек тискерлĕхпе халăх çарĕ тăвас çук, — терĕ Макçăм хăйĕн кумне, Матвие.

— Эпĕ те çавăн пек шутлатăп çав, Макçăм кум. Ку пăтăрмах нумаях пырас çук. Пире каçарĕç-ши? Эпир санпа вăл тискер ĕçе хутшăнман. Кушника каймалла марччĕ çав пирĕн. Пирĕн айăпăмăрсем те çавăнта кăна.

Тепĕр кун ирхине Кушникра пулнисем каллех шкул умне пуçтарăнчĕç. Вĕсенчен хăш-пĕрисем Кушника каялла таврăнмасан «Хресчен çарĕн» командирĕсем хăйсене те çапла асаплантарасран хăраса каялла Кушника кайма пулчĕç.

— Эпир Кушника каялла таврăнмасан хамăра та çапла асаплантарса вĕлерме пултарĕç, — терĕ Куçук, пухăннисене Кушника кайма чĕнсе.

— Кам каяс тет, кайтăр, эпир каймастпăр, — терĕ Милюк. Ахаль те пысăк çылăха кĕтĕмĕр. Çĕр чăтса тăраяс çук пире уншăн.

Вара пуханнисенчен ытларахӑшӗ хӑйсен килӗсене саланчӗҫ. Улттӑн кӑна Кушника кайрӗҫ.

«Хресченсен ҫарӗ» пулнӑ-и, пулман-и — пулнӑ пулсан та, унта нимӗнле йӗрке те пулман. Вӗсене йӗркелӳҫисем ҫӳлтен, хӑйсен штабӗнчен хушнипе кӑна «хресченсен ҫарне» йӗркелеме тӑрӑшса халӑха пӑтраштарнӑ. Каҫалапа Кушника кайнӑ ултӑ ҫын та каялла Мулекелне таврӑнчӗ. Вӗсем те хӑйсен килӗсене саланчӗҫ.

Часах Мулекелне ҫавӑн пек приказ ҫитет: ялта пурӗ пилӗк винтовка хӑвармалла. Ыттисене ҫынсемпе пӗрле Усинска ӑсатмалла. Пухӑнса ыранах Усинска тухса каймалла. Ҫак приказа илнӗ хыҫҫӑн Андреев комиссарпа Ятаев секретарь каллех Афанасий Егорович патне килчӗҫ.

— Мӗн тумалла пирӗн? Эсӗ хуть канаш пар-ха, Афанасий Егорович. Каллех канашлама сан патна килтӗмӗр, — терӗ Ятаев учителе приказпа паллаштарнӑ хыҫҫӑн.

— Приказа пӑхӑнмалла мар. Сирӗн аллӑрта пурӗ вӑтӑр винтовка, вун сакӑр пӑшал. Вӗсене ниҫта та парса ан ярӑр. Кунта кӑшт та пулин чееленни кирлӗ. Тӳрех калӑр: «Пирӗн алӑра пурӗ вун пилӗк винтовка ҫеҫ. Пирӗн ҫине Троицкран тапӑнма пултараҫҫӗ. Ҫавӑнпа та пирӗн хамӑрӑн сыхӑ тӑмалла. Троицкра — халь хӗрлисем тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та винтовкӑсем хамӑра кирлӗ пулма пултараҫҫӗ. Тапӑнас пулсан вӗсене сирсе яма сахалтан та пӗр 30—40 винтовка кирлӗ пулать.

Ҫапла вара Андреевпа Ятаев Афанасий Егорович каланипе килӗшрӗҫ.

— Тӗрӗсне калать Афанасий Егорович. Усинскри штабран килнӗ ҫынсене те ҫапла калӑпӑр, — терӗ Андреев Ятаева.

Ҫавӑнпа пӗрлех Ятаев Афанасий Егоровича Усинскран килнӗ тепӗр приказпа паллаштарчӗ: Афанасий Егоровичӑн халех Усинскри штаба каймалла. Мӗншӗн чӗнтернине Федор Семенович хӑй те пӗлмест: арестлеме-и е мӗнле те пулин ӗҫ хушма-и? Афанасий Егорович патша ҫарӗнче офицер пулнӑ-ҫке, интедант службин офицерӗ.

Афанасий Егорович хӑй штаба каяс марри ҫинчен пӗлтерсен Хрести хутшӑнчӗ:

— Эсӗ, Ахванеҫ, пирӗн ҫинчен те шутла. Эсӗ тарса хӑтӑлӑн. Пире вара сана пула вӗлерме пултараҫҫӗ. Эпӗ пӗчӗк ачапа ӑҫта кайма пултарӑп. Пирӗн иксӗмӗрӗн хӗрача, Оля, икӗ эрнере

кăна-çке! Çавăнпа та санăн Усинска каймаллах пулать. Мĕнле лару-тăру унта? Арестлемелле пулсан вĕсем, кунта килсе, сана пĕр систермесĕр арестлеме пултараççĕ! Тен, мĕнле те пулин ĕç хушма чĕнеççĕ пулĕ. Кирлĕ пулсан, вĕсемпе килĕшнĕ пек пулса тарса пытанма тăрăш. Эсĕ патша çарĕн офицерĕ пулса çапăçнă-çке. Тен, нимĕн те пулмĕ.

Çапла вара Афанасий Егорович, хăйĕн мăшăрĕн сăмахĕсене итлесе, Усинска кайма килĕшет. Хреститпе пĕчĕк Ольăна та хăрушлăха кĕртсе ӳкересшĕн мар.

— Юрĕ, Усинска каятăп, унта мĕн тумалли курăнĕ, енчен те мĕн те пулин сиксе тухас пулсан, ман çемьене ан пăрахăр, — терĕ Афанасий Егорович Ятаева.

Андреевпа Ятаев тухса кайсанах Афанасий Егорович пуçтарăнчĕ, хăйĕн мăшăрĕпе пĕчĕк хĕр ачине ыталаса илсе чуп турĕ те, лаша утланса, Усинск еннелле вĕçтерчĕ.

Афанасий Егорович мĕнле сăлтавпа чĕнеççĕ-ши тесе çул тăршшĕпех иккĕленсе пычĕ. Вăл Усинскри «Хресченсен çарĕн» штабне кĕрсен, сĕтел хушшинче кĕмĕл вăчăраллă офицерпа куçа-куçăн тĕл пулчĕ. Унсăр пуçне пӳлĕмре тата икĕ офицер ларатчĕ. Афанасий Егорович вăчăраллă офицера устав хушнă пек честь пачĕ те: «Эсир чĕннипе Тимофеев офицер çитрĕ», — терĕ. Вăчăралли, хăй вырăнĕнчен тăрса, Афанасий Егорович патне пырса, сывлăх сунса алă пачĕ.

«Начарпа чĕнмен иккен», — шутласа илчĕ Афанасий. — Тură сывлăх патăр сире, господин!

— Акă эсир çитрĕр те. Питĕ лайăх. Эпир сире кĕтнĕччĕ. Пире çар ĕçне пĕлекен офицерсем кирлĕ. Хресченсем çар ĕçне чухлаймаççĕ. Офицерсем çукрах-ха пирĕн çар ĕçне пĕлекенсем. Эсир вăхăтра çитрĕр.

— Эпĕ сире мĕнпе тата хăш енчен усă кӳме пултарăп-ши? Командир пулма пултарайăп-ши? Эпĕ интендант. Обоз пуçне тăма пултаратăп. Çара апат-çимĕçпе тивĕçтерсе тăракансем те кирлĕ.

— Ан пăшăрханăр, пире обоз пуçĕнче тăракан та кирлĕ. Обоз сирĕн аллăрта пулать. Эсир салтаксене апат-çимĕçпе тивĕçтерсе тăракан службăн начальникĕ пулатăр. Йывăртарах тӳр килсен комнадир пулса уйрăм çара ертсе пыма та хутшăнăр.

— Обоз пулсан эпĕ хаваспах килĕшетĕп. Вăл ĕçе эпĕ начар мар чухлатăп. Вăл йĕркеленсе çитиччен эпĕ хăвăрт кăна киле çитсе

сирӗнпе пӗрле пулассине арӑма пӗлтерем-ха. Унсӑрӑн вӑл, мана арестлеме пултарӗҫ тесе, хӑраса тӑратчӗ-ха. Эпӗ нумай тӑмастӑп. Ҫитетӗп те килетӗп. Питех кӗттермӗп. Обоз йӗркелессине те хам ҫине илӗп. Хампа пӗрле шанчӑклӑрах тата темиҫе ҫын илсе килӗп.

— Питӗ хавас, аван. Нумай вӑхӑт хушши тытӑнса ан тӑрӑр, хӑвӑртрах килме тӑрӑшӑр. Сызрань ҫине походпа каятпӑр. Вӑл пирӗн алӑра пулмалла.

— Сӑмах патӑм пулсан, нумаях кӗттермӗп.

Ҫапла Афанасий Егорович, офицерсемпе сывпулашса, штабран тухса кайрӗ. Анчах та ӑш-чик вырӑнта мар, темӗнле ҫӳҫентерет, ӑш вӑркать. Хӑй ҫавӑнтах каялла вӗсем патне таврӑнмастӑп тесе шутласах пычӗ ҫул ҫинче...

Афанасий Егорович Усинскра пулнӑ вӑхӑтра шкул умне ҫуна кӳлнӗ лаша пырса чарӑнчӗ. Тур лаша йӗп-йӗпе тара ӳкнӗ, хытӑ хӑваланӑ пулмалла. Ҫуна ҫинчен салтак тумӗсемлӗ мар икӗ ҫын винтовкӑсемпе шкула васкаса пырса кӗчӗ. Вӗсем уйрӑм пӳлӗмре (ял Совечӗ шкул ҫумӗнче вырнаҫнӑ) старостӑна — ял Совет председательне Русскова темле пакет тыттарчӗҫ. Вӗсенчен пӗри хыттӑн:

— Эпир Новодевичьерен, Долински штабӗнчен. Хамӑр эпир Маза ялӗнчен. Сирӗн пата Афанасий Егоровича курма килтӗмӗр. Ӑҫта вӑл? Хӑйӗн ӗҫ вырӑнӗнче ҫук. Халех тупса чӗнсе килӗр!

— Вӑл кунта шкулта пурӑнать. Хӑй кунта ҫук-ха.

— Апла пулсан, арӑмне чӗнӗр!

Христина Ксенофонтовна килсе кӗрсенех ҫак арҫын хыттӑн:

— Ӑҫта Афанасий Егорович, халех вӑл кунта пултӑр!

— Мӗн тума вӑл сире кирлӗ пулчӗ?

— Ыйтса тӑрать тата. Мӗншӗн пытартӑр ӑна! Вӑл коммунист! Эпир ӑна арестлеме килтӗмӗр! — терӗ те Христина Ксенофонтовнана, вӑл ун ҫинчен пӗлтермен пирки пулас, питӗнчен ҫупса ячӗ.

Вара хӑйӗн мӑшӑрӗ ӑҫта кайнине никама та калама хушман пулин те тӗрӗссипех калама тӳр килчӗ.

Ҫав вӑхӑтра пӳлӗме темиҫе ҫын мулекелсем килсе кӗчӗҫ.

— Вӑл коммунист, халӑха хирӗҫ пыракан ҫын, пирӗн ӑна арестлемелле! Мӗншӗн суятӑн. Вӑл штаба каяс ҫук.

Вара Христина Ксенофонтовна Афанасий Егорович Усинскри штабран чӗннипе унта кайни ҫинчен тепӗр хут каларӗ. Вӑл штаба кайни ҫинчен Русскова та ҫирӗплетрӗ.

— Афанасий Егорович пирĕн учитель, вăл нимĕнле коммунист та мар.

— Мĕнле вара эсир çавна та пĕлместĕр? Эпир инçетре пулсан та пĕлетпĕр. Эсир ăна хӳтĕлесе хăварасшăн-и? Халех тупса килĕр ăна! Халех! Унсăрăн хăвăра персе пăрахатпăр! — кăшкăрса ячĕ тепри.

Кун пек кăшкăрнипе мулекелсем кăмăлсăр пулчĕç.

— Мĕн эсир пирĕнпе хуçаланатăр! Эпир пуçтарăнса хĕрлисене хирĕç çапăçма каясшăн. Кама арестлемеллине эпир хамăрах пĕлетпĕр! Афанасий Егорович пирĕн ачасене вĕрентет. Вăл лайăх учитель, нимĕнле коммунист та мар. Эпир ăна арестлеме памастпăр! — çирĕппĕн каларĕ мулекелсенчен пĕри, çĕмиллĕскер.

— Эсир мĕн пире хирĕç пăлхав çĕклесшĕн-и? Халех пурне те арестлетпĕр. Хăшне-пĕрне, çивĕч чĕлхеллисене халех персе пăрахатпăр!

— Эпир нумайăн кунта. Хăвăра арестлетпĕр лайăхпа кунтан тухса каймасан. Эпир пурте хĕçпăшалланнă.

Пурте хăйсен винтовкисене алла илсен килнисен ирĕксĕрех нимĕнсĕрех тухса кайма тӳр килчĕ. Мазăсем кайсан нумай та вăхăт иртмерĕ, патруль Троицк çулĕ çинчен пĕр вăтам çулалла çитнĕ кивĕ кĕске кĕрĕк тăхăннă арçына çавăтса кĕчĕ. Унăн аллинче атă çиппи каснă çĕрсем пур. Атăçă иккенни паллă.

Вăл вăхăтра Ятаев урамалла тухнăччĕ.

— Мĕнле çын эсĕ, ăçтан? Мĕн тума пирĕн яла килтĕн? Хĕрлисем разведка ячĕç-и? — тĕпчеме пуçларĕ Мулекелĕнчи хресченсен çарĕн хăйне командир пек туякан Мурков.

— Эпĕ атăçă. Çип пĕтрĕ те, ăна илме эпĕ яланах Мулекелне килетĕп. Атă çĕлеме мана яланах çип кирлĕ. Кунта кун пек çип кашни килĕре пур. Пурте кантăр акаççĕ. Хам эпĕ Троицкра пурнатăп, — терĕ те атăçă хăйĕн хушаматне каларĕ.

— Кам сана кунта ячĕ? Эсĕ кунта пирĕн çинчен пĕлме килнĕ. Эсĕ хĕрлисен шпионĕ! — кăшкăрма тытăнчĕ Мурков.

Троицк çынни каллех хăйне атăçă тесе ĕнентерме тытăнчĕ. Ăна çипсĕр пуçне нимĕн те кирлĕ марри, вăл шуррисен майлă та мар, хĕрлисен майлă та мар, хăй ниçта та хутшăнманни çинчен ĕнентерме тăрăшрĕ.

Мурков хушнипе ĕççĕр тăракан «салтаксем» Троицк çыннине çавăнтах çапса ӳкерчĕç, ăçтан кирлĕ, унтан çапма, тапма тытăнчĕç. Атăçă пуçне çĕкленĕ вăхăтра кĕтесри турăш çинчи Тĕлĕнтермĕш

Микулай иконне пăхса сăхсăхса илчĕ те кĕлĕ сăмахĕсем калама тытăнчĕ. Анчах та турри те ун майлă пуласшăн мар çав. Ăна каллех хĕнеме тытăнчĕç. Кам ăна кунта яни çинчен ыйтаççĕ. Леш нимĕн те каласа ăнлантарайманнине кура ăна каллех Мурковпа Алексей Русćков хĕнеме тытăнчĕç. Атăçăн пичĕ-куçĕ юнланса пĕтрĕ.

Çав вăхăтра ял Совет секретарĕ Ятаев кĕрсе тăчĕ. Вăл юнланса пĕтнĕ атăçа хĕненине курса Муркова Русскова сирсе ячĕ те, тĕлĕннипе ним тăвайман енне:

— Мĕн хăтланатăр эсир, ухмаха тухрăр-и! Мĕн иртĕхсе кайрăр! Ку пăтăрмах мĕнпе вĕçлессине чухлатăр-и эсир! Эпĕ вара пĕлесшĕн, енчен те пирĕн çине Троицкран та, Сызраньтен те тапăнса килес пулсан, пирĕн вара пурĕ те вăтăр винтовка кăна. Ку çителĕклĕ тесе шутлатăр-и? Çак кунсенче эпир мĕн лайăххине куртăмăр-ха! Хĕрлĕармеецсене вакка ярса путартăмăр! Намăс пире уншăн! Мулекел чăвашĕсем мĕн хăтланаççĕ, ухмаха тухнă-ши? — тейĕç. Куншăн пире мĕн кăтартĕç? Куна тата мĕншĕн вĕлересшĕн? Ярăр ăна! Ан тив килне кайтăр.

Çакăн хыççăн пурте шăпланчĕç. Атăçă чĕркуççи çине тăрса куççуль витĕр хăйне ирĕке яма, пĕчĕк ачисене хĕрхенме ыйтса йăлăнма тытăнчĕ. Çав вăхăтра ăна Ятаев çĕклесе тăратрĕ те шыв пама хушрĕ, унран каçару ыйтрĕ. Юнланнă питне шывпа çутарчĕ.

— Мĕншĕн хĕнерĕç мана? Хам та пĕлместĕп, тавтапуçах ĕнтĕ сана мана вилĕмрен çăлнăшăн. Эсĕ пулман пулсан мана вĕлеретчĕç, — терĕ вăл куççуль витĕр.

— Митя Григорьев, атăçа ялтан кăларса ăсатса яр. Ан тив хăйĕн килне кайтăр.

Çакăн хыççăн хăйсен тискер ĕçĕсемшĕн тарăхакансем те пулчĕç. Ятаев куншăн пире хытă лекесси çинчен асăнни арçынсене шухăша ячĕ. Куншăн чăнах та хытă айăплама пултарасса пурне те шиклентерме тытăнчĕ.

Макçăмпа Матви Кушникран никама пăхăнмасăр таврăннă хыççăн ниçта та тухмарĕç. Пĕр-пĕрин патне кайса тискер ĕçшĕн, вĕсем унта хутшăнман пулсан та, хăйсене айăплă пек туйрĕç. Кушника кайнăшăн ӳкĕнсе ларчĕç.

— Макçăм кум, итле-ха, ман шутпа, нимĕнле халăх çарĕ те çук, ку вăрă-хурах ушкăнĕ пек кăна пулса тухрĕ. Енчен те влаçа вĕсем ярса илес пулсан, мĕн пулма пултарать? Халь те вĕсем хăйсене тискер кайăк пек тыткалаççĕ пулсан.

— Тӗрӗс калатӑн, Матви кум. Пире вӗсем кашни утӑмрах хӗсӗрлеме пултараҫҫӗ. Вӗсенчен ыррине кӗтме ҫук.

— Ҫак пӑтӑрмах иртсе каймасӑр эпӗ урӑх ниҫта та тухмастӑп. Мана ку йӑлӑхтарса ҫитерчӗ. Вӗсене итлесе мӗн чухлӗ ҫылӑха кӗтӗмӗр.

— Пирӗн те явап тытма тӳр килет, эпир нимӗнле усал ӗҫ туман пулсан та. Пирӗн айӑпӑмӑр та Кушника кайнинче кӑна. Эпир хӗрлӗармеецсене вӗлернӗ ҫӗре хутшӑнман пулин те пирех айӑплӗҫ. Эпир вӑл хӑрушӑ ӗҫ пуличчен пӑрахса килтӗмӗр. Кушника каймалла пулман пирӗн, Матви кум. Акӑ курӑн, эсӗ никама та пӳрнепе те тӗкӗнмен пулин те, вӗсемех сан ҫине кӑтартма пултарӗҫ. Хӑйсем вара, айӑплӑраххисем пулсан та, айккинче тӑрса юлма тӑрӑшӗҫ. Ман шутпа, кунта чи айӑпли Гаврилов. Вӑл халӑха пухса Кушника илсе кайрӗ. Кушникра вара чи айӑпли — Титюк. Вӑл кунта халӑха пухса Кушника илсе каяс ӗҫе хастар хутшӑнчӗ.

— Эй турӑ, кам явап тытӗ ҫакӑншӑн? Эпирех айӑплӑ пулса юлӑпӑр, Максӑм кум.

Каҫалапа арҫынсем вуннӑн шкултан тухса килӗсене саланчӗҫ. Афанасий Егорович хӑй штаба тухса кайнӑ чухне шкулта вӑхӑтлӑха уроксем пулмаҫҫӗ тесе Христина Ксенофонтовнӑна ачасен ашшӗамӑшӗсене пӗлтерме хушнӑччӗ. Ачасем шкула пуҫтарӑнсан вӑл вӗсене вӑхӑтлӑха уроксем пулмалла марри ҫинчен пӗлтерчӗ.

Афанасий Егорович Усинскран ҫӗрле таврӑнчӗ. Шкула та вӑл хыҫалтан кӑна кӗчӗ. Хӑйӗн хваттерне кӗнӗ вӑхӑтра Христина Ксенофонтовна чӑлха ҫыхса ларатчӗ. Мӑшӑрӗ штаба кайнӑ хыҫҫӑн, мӗншӗн чӗнтерчӗҫ-ши тесе, ыйӑхӗ те килмерӗ, пӑшӑрханса ларчӗ. Хӑйӗн мӑшӑрӗ пӳрте кӗрсенех хыпӑнса ӳкрӗ.

— Акӑ эпӗ ҫитрӗм те, — терӗ Афанасий Егорович.

— Мӗншӗн чӗнтернӗччӗ ара?

— Хӑрушши нимех те ҫук. Мана ячӗҫ.

Христина Ксенофонтовна мӑшӑрӗ валли апат хатӗрлеме тытӑнсан ӑна Ятаева чӗнсе килме хушрӗ.

Ф.С.Ятаев килсен Афанасий Егорович ӑна Усинскри ларутӑрупа паллаштарчӗ. Хӑйне мӗншӗн чӗннине те пӗлтерчӗ.

— Пӑлхавҫӑсем ҫак кунсенче Сызрань ҫине кайма хатӗрленеҫҫӗ. Ыран-и, тепӗр кун-и Сызрань ҫине каяҫҫех пулмалла. Ҫар аванах йӗркеленнӗ вӗсен. Анчах та пит начар хӗҫпӑшаланнӑ. Винтовкӑсем те ҫитмеҫҫӗ. Хӑш-пӗрисем сенӗкпе кӑна хӗҫпӑшаланнӑ.

Паллах, вĕсем хĕрлисене хирĕç тăраймаççĕ. Пĕр пулемет «Максимка» пур. Эпĕ вĕсем хушнине тума сăмах патăм. Манăн интендант службинче пулмалла. Вĕсем хушнипе килĕшмеллех пулчĕ. Унсăр юрамасть, вĕлерме пултаратчĕç, вĕсене хирĕç кайсан. Çавăнпа та эпĕ çак пăтăрмах иртиччен пытанас тетĕп. Вĕсен патне каймастăп. Ман çинчен ыйтас пулсан Усинскри штабран килмен-ха тейĕр.

— Индендант службинче эсĕ вĕсене мĕнпе пулăшу пама пултараятăн? Мĕнле-ха вĕсем сана тытса юлмарĕç, киле ячĕç?

— Манăн обоз пулмалла. Эпĕ «хресченсен çарне» апат-çимĕçпе тивĕçтерсе тăмалла. Обозне те манăн йĕркелесе ямалла. Ку пăтăрмах нумаях пырас çук. Пăлхавçăсене çĕмĕрсе тăкаççех. Эпĕ ăна лайăх чухлатăп. Ăçтан вĕсем Сызрань гарнизонне хирĕç тăма пултараяççĕ? Пăлхавçăсене çĕмĕрсе тăксан чи айăплисене персе пăрахма та пултарĕç. Камăн-тăр çирĕп явап тытма тӳр килетех.

Çурçĕр иртсен Афанасий Егорович хăйĕн мăшăрĕпе сывпуллашрĕ те анкарти хыçĕнче ларакан çил арманĕ патне пычĕ. Унăн хуçи Семен Иванович Ухваткин патне кĕчĕ.

— Семен Иванович, тархасшăн мана темиçе кунлăха кăна пытарса усра-ха, — терĕ Афанасий Егорович хăйĕн çинчен тĕпĕйĕрĕпе каласа панă хыççăн.

Афанасий Егорович арман хуçи патĕнче пĕр талăк пытанса пурăннă хыççăн вăрттăн урăх çĕре тухса шăвăнма шутларĕ.

— Эпĕ кунта пытанса пурăннине пĕлме пултараççĕ. Хресченсем çăнăх тума сан патна килсех тăраççĕ. Пĕлсен сана та мана пытарса усранăшăн айăплама пултараççĕ. Çавăнпа та манăн урăх çĕре тармалла, — пĕлтерчĕ Афанасий Егорович Ухваткина.

Семен Иванович ăна кăштах кĕтсе тăма хушрĕ. Вăл килне кайса çавра çăкăр, пĕр кукăль илсе килсе Афанасий Егоровича тыттарчĕ. Вара учитель панине илчĕ те, тав туса, Кивяла тухса шăвăнчĕ. Семен Иванович ăна çӳренĕ çĕрте асăрханма хушрĕ. Çапла Афанасий Егорович Кивялта хăйĕн пĕлĕшĕ патне çитсе вырнаçрĕ. Хăй çинчен каласа кăтартрĕ. Кунти учитель Мулентей Кашкарович ăна хăйĕн патĕнче çак пăтăрмах иртсе кайиччен пурăнма каларĕ. Кунта шăп. Халăха пăтраштарни сисĕнмест.

Афанасий Егорович хăй килĕнчен кайсан ирхине Усинскри штабран пĕр арçын килсе çитет. Вăл вăхăтра шкулта пĕр вунă арçын ларатчĕ. Штабран килни Христина Ксенофонтовнаран Афанасий Егорович çинчен ыйтрĕ.

— Хам та хуйхăрса, хăраса тăратăп. Çул çинче мĕн те пулин пулмарĕ-ши унпа тесе.

Вара штабран килни шкулта ларакансене, класа кĕрсе, пухăннисене приказпа паллаштарчĕ. «Сире, мулекелсем, çавăн пек пирказ: ялти мĕнпур арçынна çирĕм çултан тытăнса хĕрĕх çула çитнĕ таран, лашасем çине утланса, хĕç-пăшалланса, кунта килмелле! Усинскри хресченсен çарĕпе пĕрлешсе Сызрань çине каймалла. Халăха пуçтарма пĕр сехет паратăп. Енчен те приказа пурнăçламасан сире пурсăра та персе вĕлереççĕ. Илтрĕр-и? Халех арçынсене кунта пухăр!

— Шуйттан илесшĕ! — вăрçса илчĕ Мурков.

Вара Мурковпа штабран килни çамрăкраххисене халăха чĕнме хушрĕç.

— Халех утăрсем çине утланăр та хăвăрт кăна арçынсене кунта илсе килĕр! Хăвăртрах! Халăх çарĕ Сызране илнĕ тесе пĕлтерĕр! Хирĕç тăракансене пурне те персе пăрахăр! Сирĕн шăпа мĕнле пуласси хăвăртан килет.

Пĕр вунă минутран вăтам хресчен Гриша Полевой, хăйĕн лашине утланса, пĕр енчи урам тăрăх, Иван Тамали арçынсене чĕнме тепĕр урам тăрăх вĕçтерчĕç. Иван хăй пынă вăхăтра винтовкăран пĕр тĕлсĕр перет. Урлă урам тăрăх Сымун Малюк лашине кăшкăрса юрттарать: «Арçынсем, хăвăртрах тухăр! Пăшалăрсене хăвăрпа илĕр! Шкул умне халех пуçтарăнмалла! Çавăн пек приказ! Хĕç-пăшалланса Сызрань çине каймалла, Усинскри хресченсен çарĕпе пĕрлешсе! Итлеменнисене персе е çакса вĕлереççĕ. Хресченсен çарĕ Сызране илнĕ».

Хăйсен учĕсем çине утланса хĕç-пăшалланнă хресченсем çĕре яхăн шкул умне пуçтарăнчĕç. Вара вĕсене штабран килнипе Мурков Усинска ертсе кайрĕç. Кушникран та пĕр вăтăр çын вĕсемпе хутшăнса Усинска кайрĕç.

Кунта та пине яхăн е ытларах арçынсем пухăннă. Пурте хĕç-пăшалланнă. Хăш-пĕрисем сенĕк йатнă. Çапла начар хĕç-пăшалланнă утлă çар Сызрань çине кайма тухрĕ. Çул çинче тата ик çĕр çын хутшăнчĕ. Нумаях та каяймарĕç — вĕсене хирĕç Сызрань гарнизонĕнчен утлă çар килет. Хĕрӳ çапăçу пуçланса кайрĕ. Хĕрлисем хресченсен çарне Усинска çити хăваласа килчĕç. Начар хĕç-пăшалланнăскерсем çар йĕркине те пĕлмеççĕ. Усинскра урамсенчех çапăçу тепĕр хут тытăнчĕ. Çурт-

сем çунма тытăнчĕç. Усинскри штабра ларакансем хĕрлисен отрячĕ çитичченех «Хресченсен çарне» пăрахса ялтан тухса тарчĕç. «Хресченсен çарĕ» комнадирсемсĕр тăрса юлчĕ. Хĕрлисен отрячĕ ăна çĕмĕрсе тăкрĕ. Нумайăшĕ вилчĕ, тыткăна лекнисем те чылаях пулчĕç. Аманнисем кăшкăркаласа выртаççĕ. Вĕсене пулăшакансем те çук. Утма пултаракансем тыткăна лекрĕç. Сахаллăшĕ кăна тарса хăтăлма пултарчĕ. Вилнисемпе аманнисем хушшинче мулекелсем те пур.

Степан Гаврилов Усинска каймасăр юлнисене пĕр çĕре пухрĕ. «Хресченсен çарне» Усинска ертсе каймаллаччĕ унăн вĕсене.

Христина Ксенофонтовна шкул умне пусма çине тухать те — тĕлĕнсе каять. Усинск çинче çулăм ялкăшать. Каç ĕнтрĕкĕ тавралăха карса илнипе Усинск çинчи вут-çулăм шевли пĕлĕте çапнă. «Усинск çунать!» — кăшкăрса ячĕ Хрести.

Вăл вăхăтра «Хресченсен çарне» хутшăнаймасăр кая юлнăскерсем ниçта каймасăр шкул умĕнче атраса тăнă. Вĕсем пурĕ хĕрĕхе яхăн.

Христина Ксенофонтовна: «Пушар! Пушар! Усинск çунать!» — тесе кăшкăрни аçа-çиçĕм пек кĕрлесе каять. Пухăннисем Усинска кайма хатĕр тăнă. Анчах та вĕсене ертсе кайма Гаврилов та хыпаланман. Христина Ксенофонтовна сассине илтсен Усинскра вăрçă пыни çинчен ăнланса илеççĕ. «Хресченсен çарĕ» хĕрлисене хирĕç тăрайманнине Степан Гаврилов та ăнланса илнĕ. Вăл çавăнтах лаша çине утланать те ялтан тухса тарать. Унпа пĕрле штабран Усинска каймасăр юлнисене илсе кайма килнĕскер те кунтах. Вăл та хыпаланман. Тен, хăй те вăрçа хутшăнма шикленнĕ. Çакна сиссе хăй хăтăлас тенĕ пулмалла. «Хресченсен çарĕ» хĕрлисене хирĕç тăма пултарайманнине вăл та чухланă. Вăл Усинск çунни çинчен илтсенех хăйĕн хыççăр çуни çине ларать те лашине хăвалама тытăнать. Аллисем чĕтренипе тилхепине те лайăх тытаймасть. Тилхепи урапи айне лекнипе лаши чарăнса тăрать. Пĕр Степан ятлă хресчен вара ăна тилхепине хăйĕн аллинчен тыттарать те лашине пĕрре кăна çурăм урлă туртса çапать. Лаша çавăнтах малалла тапса сикет.

Юлашкинчен пухăнса Усинска каймалли хресченсемпе пĕрле Степан Гаврилов та каймаллаччĕ. Усинск çуннине пĕлсе вăл: «Хресченсен çарне çапса çĕмĕрчĕç пулсан, пирвайхи пуля ман çамка-

ран!» — аллине йыварран сулса илчĕ те айккинелле утса кайрĕ. Вăл тепĕр кун та ялта курăнман, таçта тарса шăвăннă.

Усинска кайнă «çар çыннисем», хĕрлĕ çар отрячĕ вĕсене аркатса тăкнă хыççăн тарнисем, каялла Мулекелне çитрĕç. Вĕсенчен нумайăшĕ вилсе юлнă. Шкул умне пухăннисем те, пуçĕсене усса, килĕсене саланчĕç. «Хресченсен çарне» хутшăннисенчен хăш-пĕрисем, хăйсене айăпласран хăраса, ялтан тухса кайрĕç. Вĕсемпе пĕрле Русскаов та ялтан тухса шăвăнчĕ. «Хресченсен çарне» хутшăннисенчен 10—12 çын кăна яла юлчĕ. Ыттисем тепрер кунран та пулин ялтан таçталла тухса кайрĕç. Яла каялла таврăнмарĕç. Хăш-пĕрисем Колчак патне тарса кайнă тесе сăмах тухрĕ. Ăçталла кайнине никам та тĕрĕссине калаймарĕ.

«Хресченсен çарне» аркатса тăкнă хыпар таврана салансан Афанасий Егорович та шкула таврăнчĕ.

— Халь пăтăрмах иртрĕ ĕнтĕ, малалла мĕн пулать-ха, — терĕ Афанасий Егорович хăйĕн мăшăрне.

— Айăплисене шыраса тупас тесе килĕç-ха ВИКран.

— Айăплисене çирĕп явап тыттарaççех ĕнтĕ. Нумайăшне, уйрăмах малтанхи кун Кушника кайнисене, хĕрлĕармеецсене вĕлерекенсене персе те вĕлерĕç-ха.

Çакăн хыççăн Афанасий Егорович яланхи пекех ачасене вĕрентме тытăнчĕ.

Пĕр-ик кунран Афанасий Егорович патне Матвипе Макçăм кумсем килчĕç.

— Афанасий Егорович, пире те айăплĕç-ши? Эпир хĕрлĕармеецсене вĕлернĕ çĕре хутшăнман. Пирĕн айăп та çав кун Кушника кайнинче кăна. Эпир унта та нумай вăхăт тăмарăмăр, каялла Мулекелне килтĕмĕр, — терĕ Макçăм.

— Эпĕ нимĕн те калама пултараймастăп. Çак ĕç пирки чекаран килсе айăплисене тупса явап тыттарма пултараççĕ.

Пăлхав иртнĕ хыççăн икĕ эрнерен яла чекистсем килсе çитрĕç. Чи малтанах кам Кушника кайнă, çавсене пĕр çĕре пуçтарчĕç. Нумайăшĕ тарса пĕтнĕ. Вун çичĕ çынна ял хĕррине илсе тухрĕç те пĕр судсăр-мĕнсĕрех персе вĕлерчĕç. Вĕсенчен иккĕшĕ Кушникранччĕ. Çав вун çичĕ çын хушшинче Макçăмпа Матви кумсем те пур. Вĕсен пĕр айăпĕ те çук пулсан та, вĕсене те персе пăрахрĕç. Чи айăплисене вара тупаймарĕç.

Чи айăплисенчен пĕри Степан Гаврилов тарса хăтăлчĕ. Вăл ватăлсан тин яла таврăнчĕ. Хăй ăçта пурăннине никама та пĕлтермерĕ. Никампа та хутшăнмарĕ.

1970 çул тĕлне 1919 çулхи пăлхава хутшăннисенчен никам та юлман, пурте вилсе пĕтнĕ.

Пăлхав хыççăн Афанасий Егоровича та пайтах сĕтĕрчĕç. Анчах та айăпне тупаймарĕç.

Афанасий Егоровичпа Христина Ксенофонтовна хĕрĕ Ольга Афанасьевна шкулта пионерсен отрячĕ йĕркеленсен чи малтанхи пионерсенчен пĕри пулнă. 1941 çул вăрçă пуçлансанах фронта кайнă. Медицина пĕлĕвне илнĕскер, çар госпиталĕнче хирурга пулăшаканĕ пулнă. Çар госпиталĕнче вăл Василий Дмитриевич Дмитриев хирургпа паллашать. Иккĕшĕ пĕрле фронтра аманнисене операци туса тăнă. Çапла вĕсем пĕр-пĕрне юратса пĕрлешеççĕ.

Василий Дмитриевич Дмитриев (Мĕтри Васлейĕ) вăрçă хыççăн пĕр вăхăт хушши Чехословакире ĕçлет. Ун хыççăн Ленинграда таврăнать. Мĕтри Васлейĕ вăрçăччен пайтах кĕнеке кăларнă. Унăн хăш-пĕр сăввисем шкул программине те кĕнĕччĕ. Вăл — медицина ăслăлăхĕсен кандидачĕ. Ăслăлăх ĕçĕсем нумай çырнă. Ленинградра чăвашсен паллă писателĕ-критикĕпе Николай Дедушкинпа юлташлă пулнă. Икĕ çемье питĕ туслă пурăннă. Мĕтри Васлейĕ юлашки çулсенче арăмĕн (Ольга Афанасьевнан) тăван ялне Мулекелне (Шикун районĕ, Самар облаçĕ) таврăнать. Доктор диссертацине çырса хатĕрлет. Анчах та хӳтĕлесе ĕлкĕреймесĕр 1977 çулхи çурла уйăхĕн 29-мĕшĕнче Шикун больницинче чĕре мышци инфаркчĕпе вилет.

Мана унăн мăшăрĕпе Ольга Афанасьевнапа курса калаçма тӳр килчĕ (1990 ç.). 1991 çулта вăл та Самарта вилнĕ. Мĕтри Васлейĕн анлă биографине мана ярса пачĕ виличчен.

# Унпа кăна телейлĕ эп

*Сăвă*

Тăван чĕлхе — анне чĕлхи,
Тăван чĕлхе — атте чĕлхи.
Унтан çук пулĕ илемли,
Унтан çук пулĕ пуянни.

Мана тăван чĕлхе сиплет,
Тăван чĕлхе хăват пиллет.
Унпа кăна телейлĕ эп,
Унтан кăна çын вăй илет.

Тăван чĕлхесĕр халăх çук,
Тăван чĕлхесĕр пурнăç çук.
Сыхласчĕ унăн илемне,
Упрасчĕ хамăр чĕлхене.

# Автан та çăмарта тума тытăнчĕ

*Шўт*

Пĕрре автобус чарăнăвĕнче икĕ çын тавлашнине илтме тўр килчĕ.

— Автан та çăмарта тума пултарать, — тет пĕри.

— Пултараймасть, автан çăмарта тумасть, — тет тепри.

— Автан ăçтан çăмарта тутăр, мĕн пустуя тавлашатăр. Автан ама мар-çке, — терĕм хайхисене.

Çакăн хыççăн нумаях та вăхăт иртмерĕ, мана правление чĕнтерчĕç те: «Ĕне фермин заведующийĕ пул», — терĕç.

Ĕçлеме тытăнтăм. Рационта кăтартнă апата айккине ямастăп. Ĕнесем сĕт ытти чухнехинчен ытларах пама тытăнчĕç. Мана мухтама пуçларĕç. Çулталăк ĕçлерĕм. Лайăх ĕçленипе район хаçатне те лекрĕм. Çуркунне енне ĕнесем пăрулама тытăнчĕç. Ферма ĕçченĕсем те питĕ тăрăшса ĕçлеççĕ. Хĕллехи вăхăтра та сĕтне чакармарĕç ĕнесем. Пĕррехинче ĕçрен таврăнтăм та — манăн килти вăкăр та пăру туса панă. Тĕлĕнтĕм.

Правленире çакна илтнĕ те мана правление чĕнтерчĕç.

— Санăн аллу кукри пур, — теççĕ.

Алла тăсса кăтартатăп.

— Алă кукри çук та, ак, пăхăр: пўрне кукри пур çав, — терĕм. Икĕ аллăмра та, чăнахах, кача пўрнесем хутланса ларнăччĕ. Мана кирпĕч шутлама ярас теççĕ. Юрать-ха хута кĕрекенсем пулчĕç.

Çакăн хыççăн мана ĕне ферминчен кăларса сурăх ферми заведующине лартрĕç. Питĕ тăрăшса ĕçлетĕп. Рационта кăтартнă апата сурăхсем кăна çиеççĕ, айккинелле ямастăп. Çăм касса илесси те ўсрĕ. Сурăхсем пăранланма тытăннă вăхăтра киле килтĕм те пăхатăп: манăн килти сурăх таки те путек туса панă. Мана каллех правление чĕнтерчĕç. Вăрçаççĕ. Каллех кирпĕч шутлама ярас теççĕ. Юрать-ха, хута кĕрекенсем пулчĕç. Мĕн калас: алла алă çăвать.

Çакăн хыççăн мана чăх-чĕп фермин заведующине лартрĕç. Ĕç укçи сахалтарах та, аптрамастăп. Каллех тăрăшса ĕçлеме тытăнтăм. Чăхсем çăмарта ытти чухнехинчен ытларах тума тытăнчĕç. Плана 150 процент тултартăм. Çавăн пек вăхăтра пĕрре киле килтĕм те — ман автан та çăмарта тума тытăннă. Юлашкинчен вара кирпĕч шутлама ячĕçех.

Вара эпĕ автобус чарăнăвĕнчи икĕ арçын тавлашнине аса илтĕм. Чăнах та иккен автан кăна мар çăмарта тума пултарать, сурăх таки те путек, вăкăр та пăру тума пултарать. Анчах кашни çыннăн мар, кукăр алăллă пуçлăхсен кăна çакнашкалли пулма пултарать.

# Хутăш лекци

*Шӳт*

*Вылякансем: 1-мĕш лектор, 2-мĕш лектор.*

***1-мĕш лектор залри сцена çине лекци вулама тухать. Ăна 2-мĕш лектор чарать. Вара иккĕшĕ те пĕр вăхăтра лекци вулама тытăнаççĕ.***

*1-мĕш лектор:* Юлташсем! Эпĕ халь сире аппендицит чирĕ çинчен лекци вуласа паратăп. Тимлĕн итлеме ыйтатăп.

*2-мĕш лектор:* Тăхта-ха, юлташ! Лекци вулама сана мар, мана хушнă. Халь хăвăрах пĕлетĕр, акана тухмалла. Мана вара кукуруза усси çинчен лекци вулама хушнă.

*1-мĕш лектор:* Сана мар, мана хушнă. Çынсем çуркунне ытларах чирлеме пултараççĕ.

*2-мĕш лектор:* Çук, мана лекци вулама хушнă.

*1-мĕш лектор:* Апла пулсан, атя-ха, тавлашар мар, иксĕмĕр те пĕрлех вулăпăр.

*2-мĕш лектор:* Мĕнле пулать-ха капла?

*1-мĕш лектор:* Эпĕ хамăн лекцин кашни предложенин пĕрремĕш çуррине вулăп. Эсĕ вара хăвăн лекцин кашни предложенин иккĕмĕш пайне вулăн.

*2-мĕш лектор:* Апла пулсан килĕшме пулать. Тытăн вулама!

*1-мĕш лектор:* Аппендицит вăл — çыннăн хырăмĕн аялти пайĕн сылтăм енче...

*2-мĕш лектор:* ...гектарĕ гектарĕпе сарăлса выртать.

*1-мĕш лектор:* Малтан вăл ыратма тытăнать те...

*2-мĕш лектор:* ...ун çине кукуруза акаççĕ.

*1-мĕш лектор:* Васкавлă пулăшу чĕнеççĕ те...

*2-мĕш лектор:* ...кукуруза тикĕссĕн шăтса тухать.

*1-мĕш лектор:* Врачсем пăхаççĕ те...

*2-мĕш лектор:* ...кукуруза ӳсет.

*1-мӗш лектор:* Чирлӗ ҫынна операци сӗтелӗ ҫине хураҫҫӗ те...

*2-мӗш лектор:* ...ун ҫине комбайн кӗртсе яраҫҫӗ.

*1-мӗш лектор:* Касмалли вырӑна шӑнтаҫҫӗ те...

*2-мӗш лектор:* ...траншея алтаҫҫӗ.

*1-мӗш лектор:* Ыратнӑ вырӑна касса уҫаҫҫӗ те...

*2-мӗш лектор:* ...ӑшне силос тултараҫҫӗ.

*1-мӗш лектор:* Суккӑр пырша касса илеҫҫӗ те...

*2-мӗш лектор:* ...траншейӑна хупласҫӗ.

*1-мӗш лектор:* Касса уҫнӑ вырӑна ҫӗлесе хураҫҫӗ те...

*2-мӗш лектор:* ...лайӑх пусарттарма трактор кӗртсе таптаттараҫҫӗ.

*1-мӗш лектор:* Ӳт илсен ҫиппине илеҫҫӗ те...

*2-мӗш лектор:* ...выльӑхсем патне турттараҫҫӗ.

*1-мӗш лектор:* Вара чирлӗ ҫынна больницӑран кӑлараҫҫӗ те...

*2-мӗш лектор:* ...выльӑхсене ҫитереҫҫӗ.

*1-мӗш лектор:* Ҫапла вара аппендицит...

*2-мӗш лектор:* ...выльӑхсемшӗн сӗтеклӗ апат пулса тӑрать.

*1-мӗш лектор:* Ҫакӑнпа хамӑр лекцие вӗҫлетпӗр.

*2-мӗш лектор:* Тавах, тимлӗ итленӗшӗн.

# Аранах авлантăм

*Шÿт*

Саккăрмĕш класра вĕреннĕ вăхăтра Зинапа пĕрле шкула хамăртан тăватă çухрăмри шкула çÿреттĕмĕр. Зина пире хирĕçех пурнатчĕ. Зина яланах манпа пĕрле пулма тăрăшатчĕ. Уроксене те тепĕр чухне пĕрле хатĕрленеттĕмĕр. Акă экзаменсене те парса пĕтертĕмĕр. Эпĕ касхине урама тухман, вăййа та çÿремен. Тĕрлĕрен картинăсем ÿкерме юрататтăм. Манăн ÿкерчĕксем аванах тухатчĕç. Тата çитменнине фотоаппарат та илсе ятăм.

Пĕрре почта ещĕкĕнче темле хут выртнине асăрхарăм. Унта çапла çырнă. «Ванюк, кĕçĕр тух-ха. Пирĕн умалла пырса накануна персе сас ту. Эпĕ тÿрех сан патна тухатăп. Калаçăпăр. Эпĕ сана питĕ те юрататăп. Зина».

Эпĕ вăл вăхăтра пăхăр кĕпçерен наган пекки тунăччĕ. Шăрпăк пуçĕсем ярса переттĕм. Хамăн вара юрату туйăмĕ пĕрре те çукчĕ. Çак хута вуласан шухăша кайрăм. Мĕн тумалла? Зинапа тĕл пулмалла-и, çук-и? Вăт шухăш! Тĕттĕм пулчĕ. Мĕн пулать те мĕн килет тенĕ пек, Зинасен умнелле пытăм та «наганпа» персе ятăм. Унччен те пулмарĕ, куратăп: Зина ман паталла килет. Эпĕ пур — пăрах та тар!.. Хĕрсемпе мĕн çинчен калаçмаллине те чухлаймастăп-çке! Çакăн хыççăн Зина манпа тĕл пулас темерĕ. Ун чухне эпĕ вун пиллĕкреччĕ.

Акă эпĕ вун çиччĕ çинче пыратăп. Хамра юрату туйăмĕ çуралнине те туя пуçларăм. Ĕçре те, вăййăра та хĕрсене сăнатăп. Пĕринчен тепри хитререх пек. Пĕри ытларах кăмăла кайнĕ пек туйăнать. «Мĕнле хăюлăх çитерсе калаçам-ши унпа», — шутлатăп хам. Халиччен эпĕ хĕрсемпе юрату çинчен калаçса та курман. Клуба тухатăп хам каçсерен.

Пĕрре клубра юрă-ташă каçĕнче çавăн пек вăйă пулчĕ: «Мĕнле чĕрчун вĕçме пултарать?» ятлă. Çамрăксемункăланса тăраççĕ. Ертÿçĕпе «судья» карта варринче тăраççĕ. Ертÿçĕ чĕрчунсен ятне калать. Вĕçекенни пулсан, икĕ алла та çÿле çĕклемелле.

Çапла вара тепĕр чухне астуса та илейместĕн, вĕçмен чĕрчун ятне калать те ертӳçĕ, хăвăрт каланипе аллуна çĕклетĕн. «Йăнăшнăшăн» вара «судья» суд тăвать. Вăл мĕн хушать — итлемелле: ташламалла-и, юрламалла-и е урăх мĕн те пулин тумалла. Вăйă, паллах, кăсăклă. Эпĕ çапла пĕрре «йăнăшрăм» та «судья» мана хам кăмăлланă хĕре пырса чуптума хушать. Эпĕ вара çухалсах кайрăм. Пит пĕçерсе илчĕ. Хальччен эпĕ никама та чуптуса курман. «Судья» мана васкатать. Эпĕ вара хĕрсем патне пыма та вăтанатăп. «Пулмасть манран хĕрсене чуптăвасси», — терĕм. Пурте кулса ячĕç. Вара пĕр юрă юрласа пама тӳр килчĕ:

*Çурхи каç илемĕ тыткăна илет-мĕн,*
*Юратма хушать-çке пирĕн чĕрене...*

— Юрату çинчен юрлатăн ху, хĕрсене чуптума вăтанатăн. Кун пек пулсан эс никам хĕрĕпе те туслашса çӳрейместĕн те, авланаймастăн та.

Сисетĕп: хĕрсенчен пĕри ман çине ăшшăн пăхать. Елюк ятлă вăл. Вăйăсем хыççăн ăна килне ăсатма шутларăм. Хам вара çумне пырса тăма та вăтанатăп. Акă утатпăр. Вăл малта, эп хыçалта. Хам тата мĕн çинчен калаçмалине те чухлаймастăп.

— Ванюк, мĕн эсĕ çăварна шыв сыпнă пек пыратăн? Ху мана ăсатас тетĕн. Çумлă та пымастăн.

Тытăнтăм вара çăлтăрсем çинчен ăнлантарма.

— Кăштах ларар-ха, — терĕм вĕсен умне çитсен. Хамăн чĕре вун иккĕлле тапать тейĕн. Ларнă май пуçласа ун çумнех йăпшăнтăм. Хам мĕн çинчен сăмах пуçламаллине те пĕлместĕп. Ăна ыталас тесе алла çĕклерĕм кăна — вăл ман алла сирсе те ячĕ. Хăй кулса илчĕ.

— Ху мана ăсататăн ĕнтĕ, хĕрпе мĕн çинчен калаçмаллине те пĕлместĕн. Эсĕ халиччен кама та пулин юратса курнă-и? — терĕ.

Эпĕ нимĕн калама та аптрарăм.

— Киле кĕме вăхăт, — терĕ те Елюк, килне кĕрсе кайрĕ.

Тепĕр каçхине каллех Елюка килне ăсатрăм. Хам хăйне юратнă пек те, ним çинчен калаçма аптратăп, сăмах тупаймастăп.

— Елюк, сана чуп тума юрать-и? — персе ятăм сасартăк.

— Эс çуламан пăру, — терĕ те Елюк килне тарса кĕчĕ. Ĕнсене хыçса тăрса юлтăм.

Урăх унпа тĕл пуласси пулмарĕ.

Унтанпа çулталăк иртрĕ. Пĕр хĕрпе те туслашса калаçса пулмарĕ.

Часах эпĕ ялхуçалăх училищине вĕренме кĕтĕм. Уроксем хыççăн шăматкун вара киле каятăп. Клуба тухатăп. Хĕрсем çине пăхкалатăп. Чĕлхе «пуклаккишĕн» хама та вăрçса илетĕп.

Училищĕре вĕреннĕ вăхăтра пĕр хĕр кăмăла кайрĕ. Вăл Неля ятлăччĕ. Уроксене те пĕрле хатĕрленме тытăнтăмăр. Пĕрле пулсан та юрату çинчен калаçма хăюлăх çитеймерĕ.

— Ванюк, эсĕ кама та пулин юратса курнă-и? — ыйтрĕ вăл пĕрре манран. Эпĕ вара çухалса кайнипе нимĕн те чĕнеймерĕм. Эпĕ хам питĕ лайăх вĕреннĕрен ман çума çыпăçать пулĕ теттĕм.

— Эсĕ лайăх вĕренетĕн, анчах та темшĕн хĕрсмпе туслашма сан хăюлăху çитмест, — терĕ.

— Вăтанатăп эпĕ, — персе ятăм сасартăк.

— Каччăна хĕр мар, каччи хăй хĕре калаçтармалла, илĕртмелле.

— Хăюлăх çитмест пулсан мĕн тумалла-ха...

Çапла 21 çул тултартăм. Хăюлăх çитеймен пирки пĕр хĕрпе те туслашса çӳресе курман-ха. Хам юратса, сăнаса тăракан хĕрпе те туслăн çӳрейместĕп. Юлташсем те манран кулма пуçларĕç: «Пулмас чун эсĕ, Ванюк», — теççĕ.

Неля ман çума çыпçăнать, çума ларать. Эпĕ вара айккинерех шуçса ларатăп. Юлашкинчен вара вăл та манран сивĕнчĕ. «Эсĕ хĕрсене юратма пĕлместĕн», — тесе хăварчĕ юлашкинчен.

Училищĕрен те вĕренсе тухрăм. Колхозра агрономра ĕçлетĕп. Юлташсемпе калаçатăп, кулатăп. Хĕрсемпе калаçма вара сăмах тупаймастăп çухалса кайнипе.

Анне авланма хушать. Эпир килте иккĕн кăна пурнатпăр. Атте чирлесе вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Аннене те пулăшакан кирлĕ.

Пĕрре кӳршĕ колхоза пĕр-пĕрин ĕçĕсемпе паллашма кайсан унти хĕр-агрономпа паллашрăм. Вера ятлă вăл. Хĕрĕ çав тери хитре. Сан çине вăл пăхсан, ирĕксĕрех юратмалла. Пĕр-пĕринпе тĕл пулса ĕç çинчен калаçатпăр. Унпа калаçнă вăхăтра хамăн чĕре кăлт-кăлт сикет. Туятăп: юрату туйăмĕ те çивĕчленсе пынă пек.

— Ванюк, мĕншĕн эсĕ авланмастăн, аннӳ сана авлантарас тенине те илтрĕм эпĕ.

— Хĕрсем мана тиркеççĕ, пĕри те качча пырасшăн мар. Акă эсĕ те мана тиркетĕн, — терĕм шӳтлесе.

— Эпĕ сана тиркемен-çке, тиркеместĕп те.

— Апла пулсан пĕрлешер, — терĕм хальхинче хăюланса.

Килĕшрĕмĕр. Хăнасем те пуçтарăнчĕç. Пире çумлă лартрĕç. Ĕçкĕ тытăнчĕ. Черкке тытакансем пурте: «Йӳçĕ, йӳçĕ!» — тесе кăшкăраççĕ. Ман Вера ура çине тăчĕ те, мана та тăма паллă пачĕ. Вăл тутине ман тута еннелле тăсать, эпĕ пур, пуçа пăратăп. Питĕм вут пек пĕçерет хамăн. Çапла ĕçкĕ те иртсе кайрĕ! Пире çывăрма уйрăм пӳлĕм те пур. Вера вырăн сарчĕ, салтăнса выртрĕ. Эпĕ хыпаланмастăп та. Çумне кĕрсе выртма кăмăл пур-ха — хăюлăх çитерейместĕп. Вера мана хăй çумне выртма та чĕнчĕ. Эпĕ вара урайне сартăм та пĕчченех выртрăм. Çавăнтах харлаттарма пуçланă.

Ирхине вăрантăм та пăхатăп: ман Вера çук. Пăрахса кайнă. Юлташсем ман пата авланнă ятпа саламлама та килчĕç. Эпĕ вра тĕрĕсне каларăм та: «Кĕçĕр тумалли ĕçе ыран каçа хăвармаççĕ ăна», — терĕç те тухса кайрĕç. Вера кайса чĕнсен те килмерĕ: «Эсĕ хĕрсене юратма пĕлместĕн», — терĕ çех. Мĕн тумалла, чавса çывăх та çыртма çук.

Унтанпа нумай вăхăт иртрĕ-и, сахал-и, тепĕр хĕрпе паллашрăм. Хальхинче манăн хăюлăх та çите пуçларĕ. Пĕччен пурăннипе кăштах сыпкалама та тытăнтăм. Анне эпĕ авланнине кĕтсе илеймесĕрех çĕре кĕчĕ. Эпĕ паллашнă хĕр Натюк ятлă. Пĕрлешме калаçса килĕшрĕмĕр. Ĕçкинче эпĕ ытларах сыпса лартнă та, Натюка кĕтсе илмесĕрех çывăрса кайнă. Ирхине вăрантăм та ман Натюк пăрахса кайнă. «Кĕçĕрхи каç тумалли ĕçе ыран каçа хăвармалла мар», — тени тин аса килчĕ. Ним тума та çук. Иртнĕ вăхăта каялла тавраймăн.

Çапла вăтăр пиллĕке çитрĕм. Халь те авланман-ха. Хамăн йăнăша туйса илсе ĕçме те чарăнтăм. Часах тепĕр хĕрпе паллашрăм. Клава ятлă вăл. Халь ĕнтĕ эпĕ хĕрсемпе хăюллă калаçатăп. Клавăпа пĕр уйăх туслăн çӳренĕ хыççăн пĕрлешме калаçса килĕшрĕмĕр. Ĕçки те аванах иртрĕ. Унтанпа пайтах вăхăт иртрĕ. Пĕр-пĕринпе çав тери лайăх, юратса пурнатпăр. Халь, турра шĕкĕр, ачасем те пур ĕнтĕ.

# Тўван чӗлхе

*Прозӑллӑ сӑвӑ*

Тӑван чӗлхе! Мӗнле илемлӗ вӑл! Илер-ха К.В.Ивановӑн «Нарспи» поэмине. Пирӗн чӗлхе, чӑваш чӗлхи — питӗ илемлине лайӑх кӑтартса панӑ.

Илер-ха тата Николай Ишентейӗн «Ҫуралман ача сасси» поэмине. Мӗнле пуян чӗлхепе ҫырнӑ ӑна! Автор виҫӗ тӗп тема хускатать хӑйӗн поэминче: кризиса пула пурнӑҫри йывӑрлӑхсем, вилекенсен шучӗ ҫуралакансенчен ытларах пулни, тӑван чӗлхе шӑпи.

Юлашки вӑхӑтра чӑвашла калаҫакан чӑвашсен те йышӗ ҫултан ҫул чакса пырать. Вӑл та пире пӑшӑрхантарать. Пиртен нумайӑшӗ камсене ҫитӗнтерет: несӗлсене пӗлмен тӑхӑмсене мар-и?

Енчен те тӑван чӗлхене, ырӑ йӑласене ӗмӗрсем хушши, ӑруран ӑрӑва аталантарса, илемлетсе пынӑ мӑн асаттесене чӗртсе тӑратма май пулсан, вӗсем пирӗн чӗлхе, ырӑ йӑласем пирӗн ачасенче пӗтсе юлнине курсан, пире мӗн каланӑ пулӗччӗҫ-ши?

Ҫук, пире уншӑн ниепле те каҫарман пулӗччӗҫ.

# Тус-юлташ саламӗ

*Хӑш-пӗр авторсем Виктор Симаков ҫинчен*

**«Аптраман Симаков» статьяран**

*1938 ҫулта В.З.Иванов-Паймена арестлесе ссылкӑна ӑсатсан Самарти чӑваш пичечӗн кун-ҫулӗ татӑлать. Чӑвашла хаҫат тепӗр хут тухма тытӑниччен вӑхӑт нумай иртет. Пархатарлӑ ӗҫе В.Е.Симаков чӗртсе ярать.*

*Виктор Егорович ҫамрӑклӑх ҫулӗсене аса илсе ҫапла ҫырать: «Салтака кайиччен ҫӑкӑр ҫисе курман тесен те юрать». Пурнӑҫра йывӑрлӑхсем витӗр тухса Виктор Егорович педагогика техникумӗнчен, Хусанта педагогика институчӗн историпе филологи факультетӗнчен (вырӑс чӗлхипе литература уйрӑмӗнчен) вӗренсе тухать. Тӗрлӗ ҫӗрте учительте ӗҫлет. Аксура, Йӗпреҫре чӑваш хаҫачӗсенче, Самар облаҫӗнчи тутарла хаҫатра вӑй хурать. 1982 ҫулта Сызраньте ҫурт-йӗр ҫавӑрса тӗпленет,ултӑ ҫул вӑтам шкул директорӗнче ӗҫлет. Статьясем нумай пичетлет, тӗпчев ӗҫӗсем тӑвать, сӑвӑ-калав ҫырать.*

*«Хыпар» хаҫатра тухнӑ статйисене эпӗ тахҫантанпа кӑсӑкланса вулатӑп. Ҫавсем пирки пӗр-пӗрин патне ҫыру ҫӳретме тытӑнтӑмӑр. Халӗ курнӑҫса та калаҫатпӑр.*

*Симаков «Самар ен» хаҫат редакторӗнче вунӑ ҫул ӗҫлерӗ, ҫав вӑхӑтрах Самар тӑрӑхӗнчи чӑвашсене тӗпчесе ӑслӑлӑх ӗҫӗсем хатӗрлерӗ: Самар облаҫӗнчи чӑваш интеллигенцийӗ епле пуҫланни, Сызрань уесӗнчи чӑвашсене хут вӗрентес ӗҫ аталанӑвӗ, Чӗмпӗрти И.Я.Яковлев шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ учительсен Самар облаҫӗнчи ӗҫӗсем ҫинчен. В.Симаковӑн «Чувашские населенные пункты Самарской области» (Чебоксары, 2005, 268 с.) ӗҫӗ энциклопеди шайне туртӑнать темелле. Автор Самар тӑрӑхӗнчи мӗнпур районти 156 чӑваш ялне кӗртнӗ, чылайӑшӗн историне ҫырса кӑтартнӑ.*

*Тӗрлӗ хаҫат редакцийӗсенче вӑрах ӗҫленӗ май В.Симаковӑн илемлӗ литература произведенийӗсене тишкерес пултарулӑхӗ те курӑмлӑ. Чӑваш литератураведенине вӑл хывнӑ тӳпе пур. «Хальхи пурнӑҫ ыйтнипе» (Шупашкар, 2007, 116 с.) кӗнекине мана автограф ҫырса парнелерӗ. Унти статьясене вулатӑп та В.Симаков чӑваш литературин историйӗнче йӗр хӑварма пултарнинчен тӗлӗнетӗп. «Йӗлтӗрпе» сӑвва иртнӗ ӗмӗрӗн вӑтӑрмӗш ҫулӗсенче чӑваш литературине вӗрентмелли шкул программине кӗртнӗ. Ун авторӗ Мӗтри Ваҫлейӗ пирки вӑл «Пӗр сӑвӑ авторӗ» ӑнлав ҫирӗплетнӗччӗ. Хутран-ситрен куҫ тӗлне лекнӗ статьясенчен вӑл врач пулнине, Ленинградри миме институтӗнче ӗҫленӗ тесе*

*çырнине пĕлеттĕмĕр. Маншăн Мĕтри Ваçлейĕ— Петĕр Хусанкай 1938 çулта тĕрмере нушаланнă хыççăн сĕм суккăр пуласран çăлакан ĕçтеш. Тĕрмере хĕненĕ пирки кур шăрçи тĕпĕнчи сетчатка хăйпăна пуçланă. Çавăн пирки Мĕтри Ваçлейĕ Хусанкая миме институчĕн клиникине сипленме вырнаçтарнă. Шел, чăваш писателĕсем çинчен çырнă нихăш справочникра та Мĕтри Ваçлейĕ валли вырăн тупăнман.*

*В.Е.Симаков «Тухтăр, çыравçă, ученăй» статьяра (19—23 стр.) Василий Дмитриевич Дмитриев (Мĕтри Ваçлейĕ) пурнăçĕпе ĕçĕ çинчен пĕрремĕш хут туллин çырса кăтартнă. Унăн малтанхи сăвви «Канаш» хаçатра 1928 çулта кун çути курать. Ун хыççăн чылай сăвă, статья пичетленет. «Халăха вĕрентес ĕç» хаçат редакторĕнче тăрăшать. Пĕрремĕш сăвă кĕнеки «Пирĕн сас» 1931 çулта тухать.*

*1935 çулта Мĕтри Ваçлейĕ Ленинградри коммунизмла воспитани академийĕнчен вĕренсе тухать. Кайран унта В.И.Бехтерев ячĕллĕ миме институтĕнче аспирантурăра вĕренет, кандидат диссертацийĕ çырать. Преподавательте ĕçлет. Фронтра çар госпиталĕнче ĕçлет.*

*Вăрçă хыççăн наука ĕçĕ тунă хушăрах илемлĕ литература произведенийĕсем çырать. Кĕнеке хыççăн кĕнеке кăларать.*

*«Чăваш писателĕсем» справочнике çĕнĕрен кăларас пулсан, В.Симаков тĕпчевĕпе усă курса, унта Мĕтри Ваçлейне кăртмеллех.*

*В.Симаков «Самар ен» хаçат тавра пултаруллă çыравçăсене пĕрлештерсе талантсене ÿсме пулăшать. Чăваш литератури историйĕн çĕнĕ страницине тăвать. Ку йыш самай пысăк. Ку статьяра вĕсен ячĕсене çырăпăр: Н.П.Митрофанов (1917—1998), Т.И.Немцев (1919—2006), И.С.Кумиров (1928), Е.П.Прохорова (1954—2000), М.И.Захаров (1925—1984), В.Л.Левуков (1950), Н.С.Карлин, А.Б.Фролов.*

*В.Симаков «Хальхи пурнăç ыйтнипе» кĕнекере вĕсене кашнине пĕрер статья халалланă.*

***Руф Ишутов**.*
*(«Хыпар», № 85, 29.04.2008)*

## *Халăх академикĕ*

Меречентри Виктор Егорович Симаков,
академик 75 çул тултарнă тĕле

*«Ял пурнăçне» вĕсем кун панă*
*Акташ юлташĕпе пĕрле*
*Аксу чăвашĕсем пуç тайнă*
*Хавасланса, кĕрле-кĕрле.*
*Унтар редакторта хастарлăн*
*Вăй хунă Симаков хĕрсе.*
*Пурнать хаçатăмăр сăваплăн*
*Хăвачĕпе тĕлĕнтерсе.*
*«Самар ен» хаçатне те уçнă*
*Самар чăвашĕсем валли.*

*Шав малалла вăл ҫирĕп утнă,*
*Ун ывăнма пĕлмен алли.*
*Тăватă кĕнеке кăларчĕ*
*Хăй тĕллĕн шутсăр тăрăшса.*
*Кĕрлет чĕвашлăхра ун ячĕ,*
*Ĕҫлет-ха вăй-халне пухса.*
*Учительте ĕҫлерĕ меллĕн*
*Чылай ҫул ҫамрăкрах чухне.*
*Халь пенсире ҫӳрет хисеплĕн,*
*Наукăшăн парать чунне.*
*Сар кайăк евĕр мăшăрĕ те,*
*Пĕрле ӳстернĕ улт ача.*
*Чечек пекех мăнукĕсем те,*
*Телей тени — тулли арча.*
*Вăл малашне те умлăн-хыҫлăн*
*Кăлартăр ҫĕнĕ кĕнеке.*
*Хайлавĕсем те пулччăр ылтăн,*
*Нихҫан ан юлччăр тĕлĕке.*

**Петр Гаврилов-Меречен.**
*(«Ял пурнăҫĕ», 15.08.2008)*

## *«Чăвашлăха тĕпе хурса вĕсем ĕҫлеҫҫĕ юрласа» хайлав сыпăкĕ*

«Ял пурнăҫĕ» хаҫат чĕлхипе
каласам-ха хастар туссемпе

*...Тепĕр шур сухаллă сăвăҫ*
*Пачĕ пĕчĕк Меречен.*
*Симаков пĕлмест-ха канăҫ,*
*Уйрăлмасть хут ĕҫĕнчен.*
*Вăл учитель, вăл — пĕлӳҫĕ,*
*Журналист, поэт, тăлмач.*
*Вĕҫĕ те ҫук пуль ун ĕҫĕн,*
*Тунă ĕҫĕ те кулач.*
*Кам пулсассăн та вăл маншăн,*
*Паллă пĕр ĕҫпе кăна:*
*Вăл «Ял пурнăҫĕ» хаҫатшăн*
*Хĕрхенмерĕ ăс-тăна.*
*Ҫак хаҫатăн вăл хĕреснашшĕ,*
*Пил чĕлхи сунаканни.*
*Эп пулсассăн унăн ашшĕ,*
*Вăл — мăн ҫул уҫаканни.*
*Шкул ĕҫне хисеплесен те,*
*Хучĕ хаҫата мала.*
*«Кил!» тесе пĕрре чĕнсен те,*
*Сивĕтмерĕ кăмăла.*

*Хаҫата уҫма пит хӗнччӗ:*
*Пӗлекен ҫук чăвашла.*
*Эп — хаҫат хуҫи — пӗчченччӗ,*
*Пурпӗр лăш яман алла.*
*Ҫук наборщик та, тăлмач та,*
*Ҫук машинистка ҫырма.*
*Вăхăтра хаҫат тухмасть те*
*Тӳр килет ответ тытма.*
*Вихтăр тусăм ман Егорыч*
*Ӳркенмерӗ ӗҫ тесен.*
*Ҫапларах чăвашăн хорӗ*
*Юр юрларӗ терт иртсен.*
*Эп кайсан вăл хуҫаланчӗ,*
*Юп курса «Ял пурнăҫне».*
*Канлӗ пурнăҫне те манчӗ,*
*Пуҫăн парăнчӗ ӗҫне.*
*Пурнăҫ ҫулӗ хăй хушсассăн*
*Ҫитрӗ тусăм Самара.*
*Чăвашла хаҫат уҫасшăн*
*Тапăртатрӗ туртара.*
*Хамăр хаҫата манмарӗ*
*Туслă ҫыхăну татман.*
*Ҫак хаҫат ҫинче ун тарӗ*
*Йӗр хăварнă пуль паян.*

***Григорий Акташ.***
*(«Ял пурнăҫӗ», № 16, 3.03.2010)*

## «Тӗрӗс хак ылтăнпа тан» статья сыпăкӗ

*Вăл «Самар ен» хаҫатăн (Самар облаҫӗ) яваплă секретарӗнче ӗҫлетчӗ, халь канăва тухнă та тăван ялне Меречене таврăннă иккен. Эпир унпа нумайранпа пӗр-пӗрне пӗлетпӗр. 1965 ҫулта мана районта чăвашла хаҫат никӗслеме хушсан эпӗ ăна хам пата ӗҫе чӗнсе илнӗччӗ, вăл ун чухне учительте ӗҫлетчӗ. Хаҫат кăларас ӗҫ майлашса кайсан мана вырăс хаҫатне куҫарчӗҫ. «Ял пурнăҫӗ» хаҫат редакторӗ пулма В.Е.Симакова ҫирӗплетрӗҫ.*

*Пурнăҫ тӗрлӗ килет. Симакова та тӗрлӗрен кăлтăксем тупса, «националист» ят парса ӗҫрен пистерчӗҫ, вăл районтан та тухса кайрӗ. Вăй-хал, ăс-тăн пухса пурнăҫ кукрашкисене ҫӗне-ҫӗне «Самар ен» хаҫата никӗслерӗ. Манăн сăвăсене те тăтăшах хăй уҫнă хаҫатра пичетле пуҫларӗ.*

***Григорий Акташ.***
*(«Ял пурнăҫӗ», № 103, 25.12.2009)*

### *Тӳлетӗп кивҫене*

*Аван-и, Виктор тус, Егорыч?*
*Чӑнлах-тӑк — Симаков юлташ!*
*Ман сан умра пур-ха кӑшт пурӑш,*
*Ҫавна тӳлесшӗн эп — Акташ.*
*Пӗр шутласан, кам-ха эс, тусӑм?*
*Хӑш ҫӗр, шыв ҫывӑхрах сана?*
*Шутлатӑп, шутлатӑп та, ман пуҫӑм*
*Хурав памасть паян ҫавна.*
*Каракалпак-и эс, е кӑркӑс,*
*Узбек, туркмен-и е казах?*
*Е нимӗҫ-и? Ҫавна эп тӑтӑш*
*Ӑнланаймастӑп чӑнласах.*
*Ҫак чӗлхесем санпа пит туслӑ.*
*Учитель эс — урок паран.*
*Тутар чӗлхи хаҫат та уҫнӑ*
*Сана валли, тус пулнӑран.*
*Чӑваш хаҫачӗшӗн пӗрлеччӗ*
*Юп курнӑран чӑвашсене.*
*Эп, акӑ, сӑхсӑхап, пӗлменччӗ*
*Эс ют чӗлхе те пӗлнине.*
*Эп ун чухне сана пӗлеттӗм*
*Чӑваш хаҫачӗ тунӑран.*
*«Самар ене» хам та илеттӗм*
*Ун ҫыравҫи эс пулнӑран.*
*Ҫапах халь те умра куратӑп:*
*Редакцире ҫӳренӗ пек.*
*«Ял пурнӑҫӗ» анине вулатӑп,*
*Унтах халь те ӗҫленӗ пек.*
*Хаҫат лавне пӗрле те туртнӑ,*
*Ҫапах та уйӑрчӗ кун-ҫул.*
*Ху ҫулупа эс тӳрӗ утнӑ.*
*Ман та пӑркаланмарӗ ҫул.*
*Тинех сана ӑнлантӑм, тусӑм,*
*Чӗлхӳ — пуян! Тата мӗн тес?*
*Чӑваш акса ӳстернӗ уҫӑм,*
*Пилленӗ пурлӑх пултӑн эс!*
*Ак ҫитрӗ сан ҫуралнӑ кунӑ.*
*Эс ҫитмӗл саккӑрта пыран.*
*Ан ватӑл-ха, яш пултӑр чунӑ.*
*Паянлӑха йӑлт пултаран.*

**Григорий Акташ.**
*(«Ял пурнӑҫӗ», 09.2010)*

*Тупмалли*


*Автор ҫинчен* .......................................... 3

Пăлхав. *Повесть* ........................................ 5

Унпа кăна телейлĕ эп. *Сăвă* ................. 56

Автан та ҫăмарта тума тытăнчĕ. *Шӳт* .... 57

Хутăш лекци. *Шӳт* ................................ 59

Аранах авлантăм. *Шӳт* ......................... 61

Тăван чĕлхе. *Прозăллă сăвă* .................. 65

Тус-юлташ саламĕ. *Хăш-пĕр авторсем*
*Виктор Симаков ҫинчен* ......................... 66

**Симаков Виктор Егорович**

# КРЕСТЬЯНСКИЙ БУНТ

Повесть, стихи, юмористические рассказы

*На чувашском языке*

Корректор *П.А.Аспиринов*
Компьютерный набор *И.М.Николаевой*
Компьютерная верстка *Т.В.Алексеевой*
Дизайн обложки *Н.Л.Лукиной*

Подписано в печать 10.01.2011. Формат 60x84/16.
Бумага офсетная. Гарнитура Times ET Chuvash. Печать оперативная.
Тираж 100 экз. Физ. печ. л. 4,5. Заказ № К-355.

Отпечатано в типографии ИП Сорокина А.В. «Новое Время».
428034, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98, 46-43-46. E-mail: newtime1@mail.ru.

35,–